

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК КАК КУЛЬТУРНЫЙ ФЕНОМЕН
# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ КУЛЬТУРА ТӖЛӖНТЕРМӖШӖ

Чебоксары 2017

НАУЧНО-ИССЛЕДОВАТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ ПЕДАГОГИКИ И ПСИХОЛОГИИ
ПЕДАГОГИКĂПА ПСИХОЛОГИ ĂСЛĂХПА ТĔПЧЕВ ИНСТИТУЧĔ

Всероссийская научно-практическая конференция
Пĕтĕм Раççейри ăслăхпа практика конференцийĕ

# Чувашский язык как культурный феномен. Чăваш чĕлхи культура тĕлĕнтермĕшĕ

14 марта 2017 г.
г. Чебоксары

УДК 811.512.101
ББК 81.635.1
Ч-82

Научный редактор
**О.И. Печников,** кандидат педагогических наук, доцент

**Чувашский язык как культурный феномен:** материалы всероссийской научно-практической конференции. 14 марта 2017 г. / науч. ред. О.И. Печников – Чебоксары: НИИ педагогики и психологии, 2017. – 78 с.

В сборник включены материалы по итогам Всероссийской Олимпиады Школьников «Радиус» и Всероссийской научно-практической конференции «Чувашский язык как культурный феномен», состоявшейся 14 марта 2017 г. Статьи посвящены проблемам обучения родному языку на основе требований ФГОС. Большое внимание уделено анализу детских письменных работ и причинам допущения грамматических и речевых ошибок и стилистических недочетов.

Издание адресовано специалистам-чувашеведам.

**Чăваш чĕлхи культура тĕлĕнтермĕшĕ:** Пĕтĕм Раççейри ăслăхпа практика конференцийĕн материалĕсем. 2017-мĕш çулхи мартăн 14-мĕшĕ. / ăслăлăх редакторĕ О.И. Печников – Шупашкар: Педагогикăпа психологи Ăслăх тĕпчев институчĕ, 2017. – 78 с.

Пухха Пĕтĕм Раççейри Шкул ачисен «Радиус»Аслă Олимпиадин пĕтĕмлетĕвĕсем тата 1017 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче иртнĕ «Чăваш чĕлхи культура тĕлĕнтермĕшĕ» ăслăхпа практика конференцийĕ тăрăх хатĕрленĕ материалсене кĕртнĕ. Статьясенче тăван чĕлхене вĕрентес ыйтусене ФГОС требованийĕсене шута илсе татса парас шухăшсем тĕп вырăнта. Ачасен çыру ĕçĕсенчи грамматикăпа пуплев йăнăшĕсемпе стиль çитменлĕхĕсене тĕплĕн тишкерсе вĕсен сăлтавĕсене палăртнă.

Чăваш чĕлхипе ĕçлекенсем валли.

© Научно-исследовательский институт
педагогики и психологии, 2017

# СОДЕРЖАНИЕ
# ТУПМАЛЛИ

## ИТОГИ БОЛЬШОЙ ВСЕРОССИЙСКОЙ ОЛИМПИАДЫ ШКОЛЬНИКОВ «РАДИУС. 2017»
## ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ ШКУЛ АЧИСЕН АСЛĂ ОЛИМПИАДИ «РАДИУС. 2017» ПĔТĔМЛЕТĔВĔСЕМ


**Печников О.И.** 3-11 классенче вĕренекенсен чăваш чĕлхипе усă курас ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсем……… 4
**Артемьева Т.В.** Пуçламăш шкулта вĕренекенсен чăвашла пуплев аталанăвĕн шайĕпе çыхăннă хăш-пĕр ыйтусем……… 9
**Печников О.И.** Функциональная грамотность на чувашском языке у обучающихся в 3-11 классах……… 13
**Артемьева Т.В.** К вопросу об уровне языкового развития у обучающихся в младших классах……… 19
Приложение. Хушăм
Наиболее оригинальные рассказы участников олимпиады. Ăсталăхĕпе ыттисенчен уйрăларах тăракан ĕçсем...……… 24


Материалы всероссийской научно-практической конференции
## «ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК КАК КУЛЬТУРНЫЙ ФЕНОМЕН»
Пĕтĕм Раççейри ăслăхпа практика конференцийĕн материалĕсем
## «ЧĂВАШ ЧĔЛХИ КУЛЬТУРА ТĔЛĔНТЕРМĔШĔ»


**Алексеева В.К.** Вырăс шулĕнче тĕрев слайчĕсемпе усă курасси……… 27
**Артемьева Т.В., Кириллова А.Ю.** Чăваш шкулĕсен вăталăх класĕсенчи тăван чĕлхе урокĕсенче тĕрĕслевĕн çĕнĕ формисемпе усă курасси……… 28
**Артемьева Т.В., Николаева Р.Ю.** Чăваш шкулĕсенчи тăван чĕлхе урокĕсенче япала ятне вĕрентесси……… 31
**Архипова М.И., Михайлова К.Н** Петĕр Хусанкай сăввисенчи çунатлă сăмахсем……… 33
**Архипова М.И., Яковлева О.Н.** Константин Иванов этерлĕхĕ – хула шкулĕнче……… 35
**Брусова Г.Ф., Власова Т.А.** Чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче синтаксиса вĕрентнĕ май терминсемпе ĕçлесси……… 37
**Брусова Г.Ф., Гришина М.А.** Чăваш шулĕсенче тăван чĕлхене вĕрентнĕ май ачасен пĕлĕвне пĕтĕмлетес ыйтăва çĕнĕ стандартпа килĕшўллĕн йĕркелесе пымалли технологисем........ 40
**Брусова Г.Ф., Кудряшова Ю.Е.** Чăваш шкулĕсенчи тăван чĕлхе урокĕсенче кўртĕм сăмахсене вĕрентесси……… 43
**Брусова Г.Ф., Энтина Н.Г.** Чăваш шулĕсенчи тăван чĕлхе урокĕсенче текстпа ĕçлесси…… 46
**Васильева Л.А., Хораськина Г.В.** Воспитательный процесс в поликультурной среде студенчества……… 49
**Герасимова Н.Н., Петрова Л.А**. Семейные ценности чувашей (на примере пословиц о семье)… 51
**Ермолаева Е.Н.** Чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçри çĕнĕ туртăмсем……… 53
**Игнатьева А.П.** Чувашский язык как хранитель этнопедагогической культуры народа……. 55
**Ильина В.П.**, **Исаева Л.П.** Чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасен ативлăхне ўстересси……… 58
**Козукова А.Я.** Чăваш шкулĕн вăталăх класĕсенче ачасен сăмах йышне аталантарас ĕçре хăнăхтарусемпе усă курасси……… 60
**Мышкина В.Ю.** Чăваш шкулĕнчи тăван чĕлхе урокĕсенче ачасен ăслав пултарулăхне аталантарасси……… 62
**Никифорова Т.Н., Степанова В.И.** Лингвистический анализ улиц города Чебоксары, названных в честь земляков……… 65
**Николаева Э.В.** Пейзажная поэтика в творчестве К.В. Иванова и А.С. Пушкина……… 67
**Печников О.И.** Умения и навыки составления текста……… 70


## СЦЕНАРИИ И ПОУРОЧНЫЕ РАЗРАБОТКИ
## СЦЕНАРИСЕМ ТАТА УРОК ПЛАНĔСЕМ


**Васильева Т.Н., Федорова Г.Д.** Технологи картти……… 72
**Смирнова А.Л., Щербакова Н.Ю.** Внеклассное мероприятие в школе, посвященное открытию года литературы в Чувашии……… 75

# ИТОГИ БОЛЬШОЙ ВСЕРОССИЙСКОЙ ОЛИМПИАДЫ ШКОЛЬНИКОВ «РАДИУС. 2017» ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ ШКУЛ АЧИСЕН АСЛĂ ОЛИМПИАДИ «РАДИУС. 2017» ПĔТĔМЛЕТĔВĔСЕМ

## 3-11 КЛАССЕНЧЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕН ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ УСĂ КУРАС ĂСЛАЙĔСЕМПЕ ХĂНĂХĂВĔСЕМ

**ПЕЧНИКОВ Олег Иванович**
педагогика наукисен кандидачĕ, доцент
Педагогикăпа психологи Ăслăх тĕпчев институчĕн
ăслăх сотрудникĕ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Асăннă Олимпиада Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн пуçарăвĕпе 2007 çултанпа çулсерен иртет. Статьяра кăçалхи олимпиадăна хутшăннă ачасен ĕçĕсене тишкернĕ.*

**Тĕп сăмахсем:** олимпиада, тест ыйтăвĕсем, творчество заданийĕсем, грамматика йăнăшĕсем, пуплев йăнăшĕсем, графика, орфографи, пунтуаци, стиль çитменлĕхĕсем, ăслайсемпе хăнăхусем, ачасем çырнă уйрăмах паха текстсем.

Кăçал «Чăваш чĕлхи» секцийĕ февралĕн 1-7-мĕшĕсенче дистанци мелĕпе иртрĕ. Тест ыйтăвĕсемпе творчество заданийĕсене шкул ачисем чăваш чĕлхипе усă курма хăш шайра пултарнине çак параметрсем тăрăх палăртас тĕллевпе йĕркеленĕ: тĕнчекурăм анлăшĕ, чăваш чĕлхипе çырулăх ыйтăвĕсене ăнланни, шкул ачисем чăваш чĕлхипе çыхăннă историпе культура сведенийĕсене чухлани. Икĕ тата нумай чĕлхелĕх условийĕсенче чĕлхепе калаçаканшăн çакнашкал ыйтусем те пысăк пĕлтерĕшлĕ: сăмах енчĕкĕн пуянлăхĕ, стилистика тата лексикăпа грамматика уçлăхĕнче харкама шанчăклă туйни, грамматика нормисене пĕлни тата орфографипе пунктуаци правилисемпе пуплевре тĕрĕс усă курас ăслайсемпе хăнăхусем. Мониторинг çăлкуçĕ вырăнне тупмалли юмахсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе, каларăшсемпе, çунатлă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, предложенисемпе тата ытти программа материалĕпе усă курнă.

3 тупмалли юмах («Ирпе тăватă уран, кăнтăрла икĕ уран, каçпа виçĕ уран». – 3-мĕш класс; «Урлă ура утаман». – 6-мĕш класс; «Икĕ вĕçлĕ, икĕ ункă, варринче – пăта». – 7-мĕш класс. Тупсăмĕсем: этем; упа; хачă) ачасемшĕн ансат пулчĕ, пурте тĕрĕс хуравланă. «Хĕрлĕ хĕр пĕлĕт тăрăх çӳрет» тупмалли юмах тупсăмне чухласа илменнисем 3-ĕн пулчĕç (вĕсем «хĕвел» вырăнне «уйăх» çырнă). Ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшсемпе ĕçлемелли инструкци вырăнне сиктерсе хăварнă сăмаха кĕртсе лартма хушнăччĕ. Çак тĕслĕхсене пурте пурнăçланă: «Улми (йывăççинчен) аякка ӳкмест». – 2-мĕш класс; «Паян тумалли ĕçе (ырана) ан хăвар». – 4-мĕш класс; «Маччана сурса (вырт)». – 5-мĕш класс; «Уй пек асли, (вăрман) пек пуянни çук». -7-мĕш класс; «(Çынни) мĕнле, ĕçĕ çапла». – 10-мĕш класс).

Предложенисенчи сиктерсе хăварнă вырăна хальхи вăхăтри глаголсен пурлă тата çуклă формисенчи аффиксĕсене кĕртсе лартма тата ку предложенисене чăвашларан вырăсла куçарма хушнине 8-мĕш классем пурте пурнăçланă.

6-мĕш класра «Усал (хыпар) утпа çӳрет» каларăшра сиктерсе хăварнă сăмах вырăнне 2 ача «хĕр арăм» лартнă.

8-мĕш класра 3 каларăш предложенире сиктерсе хăварни вырăнне пĕртен-пĕр сăмах – «йытă» – лартмалла пулнă. 2 ача ку задание сиктерсе хăварнă.

«Çын (япалине) ан хапсăн» – 1 заданири тĕрĕс предложени (9-мĕш класс).

10-11-мĕш классенче 1 заданири тĕрĕс хурав: «Ăсти мĕнле, ĕçĕ çапла». Темиçен çапла хуравланă: «Хуçи мĕнле, ĕçĕ çапла», «Çынни мĕнле, ĕçĕ çапла».

Фразеологизмсемпе çыхăннă çак заданисенче пĕлтерĕшĕсене ăнланнипе çыхăннă йăнăшсем çук: «Хăйне мăнна хурать» тесе кам çинчен калаççĕ?» – 4-мĕш класс; «Тӳр пилĕк» тесе мĕнле çынна калаççĕ?» – 7-мĕш класс; «Ылтăн алăллă» тесе мĕнле çынна калаççĕ?» – 9-мĕш класс; «Хурапа шурра курнă çын» мĕнлескер вăл?» – 10-11-мĕш классем.

Фразеологизм пĕлтерĕшне уҫса парассипе 5-мĕш («Кам пирки «тăм пăшал» теҫҫĕ?») тата 6-мĕш («Пĕр чĕлхе тупрĕҫ» тесе камсем ҫинчен калаҫҫĕ?») классенче йăнăшнă. 5-мĕш класра 2 ача «Пеме пĕлменскер пирки» хурав панă, темиҫе ача ку задание сиктернĕ. 6-мĕш класри заданире темиҫе ача ҫакăн пек йăнăш хурав панă: «Чăвашла та, вырăсла та калаҫма пĕлекенсем ҫинчен».

Чăваш чĕлхин графика никĕсĕсене пĕлни ҫинчен. 3-мĕш класра сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаҫтарас задание пурте пурнăҫланă. Шел пулин те, кунашкал задани 5-мĕш класра вĕренекенсенчен нумайăшĕшĕн шăл ҫемми пулман. Ку заданире пĕр сасăпа (л сасă) пуҫланакан сăмахсем сĕннĕччĕ. Вĕсене алфавит йĕркипе вырнаҫтарас тесен, 7 сăмаха асра тытмалла та ҫак сăмахсенчи сасăсемпе сас паллисене хушас-кăларас операцие пурнăҫламалла. Ачасем алфавит йĕркине ăса ҫирĕп вырнаҫтарман курăнать. Ҫавăн пекех хăш-пĕр ачасен самантлăх ас шайĕ палăрмаллах пĕчĕк пулмалла.

4-мĕш классемшĕн 5 задани (хытă, ҫемҫе тата хутăш сăмахсенчен юлашкисене суйласа илесси) йывăртарах пулчĕ. Виççĕшĕ «тăван» (ку хытă сăмах, мĕншĕн тесен пур уҫă сасă та хытă е кайри ретри сасă) сăмаха суйласа илнĕ, иккĕшĕ «асанне» сăмаха тĕрĕсех суйласа илнĕ те ун ҫумне тата тĕрĕс маррине («тăван») хушса хунă).

9-мĕш классенчен виççĕшĕ сингармонизм саккунне пăхăнман сăмаха («асанне») палăртман.

Граммматика тата орфографи. Предложенири пăтраштарнă сăмахсене йĕркелесе лартмалли задание 3-мĕш (1 задани) тата 4-мĕш (6 задани) классем пурте пурнăҫланă. 3-мĕш классем пурте ҫемҫетӳ палли ытлашши сăмаха (4 задани) тата хупă сасă вăрăмланнине йăнăш палăртнă сăмаха (7 задани) тупассине ҫăмăллăнах пурнăҫланă. 5-мĕш классемшĕн вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене камăнлăх падежĕнче тĕрĕс вĕҫленĕ варианта палăртасси йывăр пулман (4 задани). Вĕсем ҫăмăллăнах хушу наклоненийĕнчи глагола 3 сăпати нумайлă хисеп форминче мĕнле ҫырмаллине палăртнă: -чч сасă хыççăнхи хупă сасса ҫемҫетет, ҫырура вара аффикс хытă е ҫемҫе вариантлă пуласси тымар хытă-ҫемҫе пулнипе ҫыхăннă; хытă сăмахсенче ҫы, чы (ҫи, чи илтĕнсен те) ҫыраççĕ (3 задани).

7-мĕш класра вĕренекенсем пурте 9 задание тĕрĕс пурнăҫланă (япаласем нумай пулнине палăртнă чухне сăмах майлашăвĕн тĕп пайĕнчи япала ятне пĕрреллĕ хисепре лартмалла). 8-мĕш классемшĕн 4 задани йывăрах пулман: сăвăра сиктерсе хăварнисем вырăнне хальхи вăхăтри глагол аффиксĕсене кĕртсе лартасси (-аҫҫĕ (-еҫҫĕ). 10-мĕш класра вĕренекенсемшĕн япала ячĕсене камăнлăх форминче вĕҫлесси йывăрах мар (9 задани).

4-мĕш класра вĕренекенсем 4 задание пурнăҫлама йывăрланарах тăнă: «Хăш сăмахра ҫемҫетӳ палли кирлĕ?» (Чăваш сăмахĕсенчи лч тата нч сасă майлашăвĕсенче тата ҫемҫе уҫă сасăсемпе юнашар ҫемҫетӳ палли лартмаççĕ. Ку правилăна вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем пăхăнмаççĕ: «шинельлĕ». Хăш-пĕрисем йăнăшпа «пăнчă» сăмаха суйласа илнĕ.

5-мĕш класра вĕренекенсенчен пĕр пайĕ 9 задание пурнăҫламан: «Хăш сăмахсене тĕрĕс мар ҫырнă?» (Виççĕмĕш ушкăнри сăмахсене тĕрĕс мар ҫырнă: хĕвель (сăмахсенче ҫемҫе уҫă сасăсемпе юнашар ҫемҫетӳ палли лартмаççĕ); кальча (лч сасă майлашăвĕнче ҫемҫетӳ палли ытлашши); вутчул (ку хутлă сăмахра 3 сăпатăн камăнлăх аффиксĕ кĕскелсе ҫемҫетӳ паллине куҫнă: вут чулĕ – вутчуль). Пиллĕкĕшĕ ку задание сиктернĕ, тăваттăшĕ тĕрĕс хурав ҫумне тата пĕремĕш ушкăнри сăмахсене хушса хунă: шалча, калча, панча. Виççĕшĕ кашни ушкăнранах пĕрер е икшер сăмах суйласа илнĕ. Хăшĕсем пĕрремĕш ушкăнри сăмахсене суйланă.

6-мĕш класра вĕренекенсенчен хăшĕ-пĕрисем вăйлă степеньри паллă ятне палăртма (4 задани) йывăрланса тăнă. (Тĕслĕхсенче сап-сарă сăмаха панă. Ку сăмах дефиспа ҫырăнать. Ҫак ретрех дефиспа ҫырăнакан тепĕр сăмах – мăшăр япала ячĕ – пур: им-ҫам. Япала ячĕпе паллă ятне дефиспа ҫырни ку сăмахсен пуплев пайне тĕрĕс палăртма иккĕлентернĕ курăнать). Иккĕн им-ҫам сăмаха суйланă. Пĕр вĕренекен вырăс чĕлхинчен йышăннă япала ятне камăнлăх падежĕнче вĕҫленин тĕрĕс мар вариантне суйласа илнĕ (8 задани).

8-мĕш класра вĕренекенсенчен темиҫен 2 задание («Хăш ушкăнра йăнăш ҫырнă сăмах пур?») тĕрĕс мар пурнăҫланă. Тĕрĕс хурав (А вариант) вырăнне вĕсем е Ă, е Б вариантсем суйланă. (Йăнăш ҫырнă сăмах А вариантра – хутлă сăмахсене пĕрле ҫыраççĕ: литпĕрлешӳ). 8-мĕш класс валли 9 задани: «Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?» Паллă тунă сăмахсем – пулмалли причастисем – сăвă ҫаврăмĕсенче. Хăшĕ-пĕрисемшĕн ку сăмахсем – деепричастисем, хăшĕ-пĕрисемшĕн – инфинитивсем, виççĕн пулас причасти тесе шутлаççĕ. Ҫакнашкал заданиех (5 задани) 9 класс валли те панă: «Палăртнă сăмах хăш пуплев пайĕ пулать?» Тĕрĕс хурав: татăк. Вĕренекенсен пĕр пайĕ А хурав (союз), тепĕр пайĕ Б хурав (наречи) суйласа илнĕ.

9-мĕш класра вĕренекенсенчен тăваттăшĕ 6 ыйтăва («Предложенири запятоя мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?») тĕрĕс мар хуравланă. Правили ансат: Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрса ҫыраççĕ (Тĕрĕс хурав: В).

Камăнлăх формипе тĕрĕс усă курнă варианта палăртасси (5 задани) 10-11-мĕш классенче вĕренекенсенчен улттăшĕшĕн ытла кăткăс пулнă, вĕсем ăна тĕрĕс мар хуравланă. (Тĕрĕс хурав: Б («Манăн аннемпе калаçать»).

Лексикăпа стилистика. 3-мĕш класс валли 6 («Ытлашши сăмахĕ хăшĕ?») тата 8 («Путмар» мĕн япала?»), 4-мĕш класс валли 1(«Хăш сăмахĕ ытлашши?») тата 2 («Хăш сăмахĕ глагол мар?»), 5-мĕш класс валли 8 («Хĕр ачасемпе арçын ачасен ячĕсене ушкăнласа çыр») заданисем палăрмаллах ансат пулчĕс.

7-мĕш класран пĕр вĕренекен тăршшĕне пĕлтерекен («хăлаç») сăмаха пĕлмест, тепĕр вĕренекен «кĕрепенкке»(фунт) сăмаха тăршшĕне палăртаканнисен йышне кĕртет. «Омоним» сăмах пĕлтерĕшне пĕри пĕлмест.

9-мĕш класра вĕренекенсенчен улттăшĕ диалект сăмахĕсене литература чĕлхинчисемпе пăтраштарать (9 задани).

10-11 классем валли 8 задани: «Çак сыпăк умне тивĕçлисене кĕртсе лартса 5 çĕнĕ сăмах ту: -ĕм». 9 вĕренекен ку сыпăкпа сăмах тăвакан аффикс вырăнне мар, сăмаха тата формăна улăштараканнисем вырăнне усă курнă: вĕренекенĕм, чĕлĕм, чĕппĕм т. ыт. те.

*Куçармалли заданисем.* Куçару – чĕлхепе усă курассин репродукципе продукци шайне палăртмалли питех те паха мел. Куçару вăл пысăк творчество ĕçĕ. 5-мĕш класра вĕренекенсем йывăрах мар «Пĕчĕк хуçа» текста япăх мар куçарнă. Вĕсем текст содержанине аван ăнланнипе пĕрлех çыру хăнăхăвĕсем япăхрах пулнине кăтартрĕç. Тирпейлĕ, хитре почеркпа çырнă пĕр йăнăшсăр ĕçсем сахал. Офографи, пунктуаци, грамматика йăнăшĕсем кашни ĕçре тенĕ пекех тĕл пулаççĕ.

8-мĕш класра вĕренекенсем, пуплевре сахал усă курнăран пулас, сĕннĕ ретре вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмаха тупма (3 задани) йывăрланнă. Хăшĕ-пĕрисем ку сăмаха «сысна» тесе палăртаççĕ. Тăххăрмĕшсем чăваш пуплевне вырăсла шухăшласа çыраççĕ. Акă «играю на гармошке» çаврăнăша олимпиадăна хутшăнакансен пĕр пайĕ «купăс çинче вылятăп» тесе куçарать. Йăнăш куçарусем хушшинче çаксем те пур: купăспа калатăп, купăспа вылятăп.

10-11 классенче вĕренекенсенчен чылайăшĕ Иван Яковлевич Яковлев «Чăваш халăхне панă Халала» ним улăштармасăр çырса илнĕ. Хăшĕ-пĕрисем орфографине те иртнĕ ĕмĕрти 20-мĕш çултисенчинех хăварнă. Пысăк йăнăшсем шутне сăмах пĕлтерĕшĕсене тĕрĕс мар куçарнине, сăмахсене сиктерсе хăварнине, чăваш предложенийĕнчи сăмахсен йĕркине шута илменнине кĕртмелле. Акă оригиналти предложени: «Чтите и любите великий, добрый и умный русский народ». Ача куçарăвĕ: «Упрăр тата юратăр ырă та ăслă вырăс халăхне». Оригинал: «Трудна была жизнь этого народа, много горестей и несчастий встретил он на своем долгом и скорбном пути, но не утратил понимания своего высокого призвания». Куçару: «Йывăр пулнă пурнăç ку халăхăн, нумай хуйхă курнă вăл хăйĕн вăрăм кун-çулĕнче». Малалла: «Любите его и сближайтесь с ним» («Юратăр ăна, унпа пĕрле пулма тăрăшăр». Автор предложенири сăмахсен йĕркине вырăс чĕлхинчинех хăварса, кашни сăмаха йĕркешерен куçарма тăрăшни куçкĕрет. Çав вăхăтрах хăш-пĕр сăмахсене тĕрĕс мар куçарнă (чтите – сума сăвăр, хисеплĕр!) е пачах сиктерсе хăварнă (великий – аслă!). «Много горестей и несчастий» тенине автор пĕр сăмахпа куçарать: «хуйхă», «призвание» тенине «чыс» сăмахпа куçарнă (тайăн, чун туртни). «Сближайтесь» – «çывăхланăр» сăмахпа куçарни тĕрĕсрех.

Çакна палăртмалла: куçару тума пысăк шайри творчество кирлĕ. Пĕр текстах кашни автор тĕрлĕрен куçарма пултарать. Чи кирли – текст содержанине май пур таран оригинала çывăх уçса пани. Капи тĕлĕшĕнчен йăнăшсемпе çитменлĕхсем сахал мар пулин те, тишкернĕ ĕç оригинал ăшлăхне пĕтĕмĕшле тĕрĕс уçса парать.

Текстпа ĕçлени. Çыхăнуллă пуплев. Виççĕмĕшсене 10 заданире «Пуçтах Тоня» текст тăрăх лартнă ыйтусене хуравлама хушнă. Пĕрремĕш ыйтăва уйлав туса куçарма тивет. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш ыйтусем – грамматика ыйтăвĕсем. 11 задани – текст содержанин изложенине çырни. Ку заданисене пĕтĕмĕшле илсен япăх мар пурнăçланă. Оригиналти предложенисенчи сăмахсен йĕркинчен уйрăлайманни куçа тăрănать. Харкам ăс-хакăл витĕр шăранса тухнă сăмахсем сахалтарах. Хăшĕ-пĕрисем текст содержанине кĕскен палăртаççĕ е пĕр предложенипех çырлааççĕ. Сăмахран: «Ыттисене кӳентерекене, усал ĕç тăвакана пуçтах теççĕ». Пурте тенĕ пекех текстăн тĕп шухăшĕпе дидактика пĕлтерĕшне ăнланса илнине палăртмалла. Сăмахран: «Текстра эпир пуçтах Тоня çинчен вулатпăр. Вăл пурне те кӳрентерет. Юлашкинчен ăна çапăçакан хĕр ача теме пуçланă. Ку ĕнтĕ япăх ен. Ун пек нихăçан та пулмалла мар». Пĕр вĕренекен идея сĕмне пăснă: «Тоньăна ку килĕшмен, вăл ăна тĕксе янă. Арçын ача уншăн та макăрма пуçланă».

4-мĕш класра вĕренекенсем «Катаччи чупни» текстпа ĕçленĕ (10 задани: Текст тăрăх лартнă ыйтусене хуравлани; 11 задани: Текст содержанийĕн изложенине çырни). 1, 2 тата 4 ыйтусене пĕрер

предложенипех хуравлама пулать. 3 ыйтăва уйлав туса хуравламалла: «Эсам çунана мĕн пирки туртайман?» («Çуна йытăшăн ытла та йывăр пулнă, çавăнпа та вăл ăна туртайман»). Нумайăшĕ ку ыйтăва кĕскен, пĕр предложенипе хуравланă: «Мĕншĕн тесен çуна йывăр пулнă». Хăшĕ-пĕрисем факт йăнăшĕсем тăваççĕ: «Ванюкпа Эскам çуна кӳлсе катаччи чупаççĕ»; «Пĕррехинче Ванюк юлташĕсене катаччи чуптарчĕ»; «Ванюк Эскампа япăх вылять». Пуплев тата логика çитменлĕхĕсем тĕл пулаççĕ: «Ванюк Эскампа катаччи вылять»; «Пĕррехинче Ванюк хăйĕн тусĕсене катаччи чуптарма шутлать. Çуна йывăр пулнă. Эскам юлашкинчен тарать».

Пиллĕкмĕшсем «Чĕкеç курăкĕ» текст тăрăх лартнă ыйтусене хуравланă. Ыйтăвĕсем уйлавлă: «мĕншĕн?», «мĕн пирки?». Шел пулин те, ачасем текст оригиналĕнчен хăпайманни кунта та куçа тăрăнать. Нумайăшĕ ыйтусене тивĕçекен предложенисене ним улăштармасăр çырса илнĕ. 4 вĕренекен 10, 11, 12 заданисене пачах пурнăçламан. 11 ыйту: «Калавра ытлашши предложенисем хăшĕсем?». Темăпа содержани çыпăçуллă пулмаллине, çырура шухăш çыхăнулăхĕпе пĕрпĕтĕмлĕхне палăртмаллине 13 вĕренекен ĕçĕ çирĕплетмест. Ку класрах пуçламăшĕ тăрăх калава вĕçлемелле пулнă (12 задани). Нумайăшĕ текст оригиналне шыраса тупнă та ним улăштармасăр çырса илнĕ. Çырса илнĕ чухне йăнăшсем туса тултарнă: сас паллисене, сас палли тăрринчи паллăсене, орфограммăсемпе пунктограммăсене сиктерсе хăварни т. ыт.те. Çав вăхăтрах пурте тенĕ пекех хайлавăн сипет тĕшшине ваттисен сăмахĕпе палăртса хăварать: «Ахальтен каламан çав суяпа инçе каяймăн тесе» е «Пĕрре суятăн, тепре суятăн, виççĕмĕшĕнче ларса макăратăн».

Улттăмĕшсем тивĕçлĕ çĕре чарăну паллисем лартса текста юсанă (10 задани). Пур вĕренекен те ку задание аван пурнăçланă. 11 задани те улттăмĕшсемшĕн ансат пулнă («Пушă вырăнсене предложенисене çыăнтармалли сăмахсемпе тултар»).

Çиччĕмĕшсемшĕн 10 («Пăтраштарнă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркеле») тата 11 («Паллă тунă сăмахсене урăххисемпе улăштарса теста илемлет») заданисем палăрмаллах ансат пулнă. Вĕсем пурте ку заданисене аван пурнăçланă.

10 задани («Сăмахсенчен предложенисем йĕркеле те вĕсене «Йăмра» çыхăнуллă текста пĕрлештер») саккăрмĕшсемшĕн те çăмăл пулни курăнчĕ.

Тăххăрмĕшсене 11 заданире «Филин» текст содержанине чăвашла çырса кăтартма ыйтнăччĕ. Вырăсла текстăн чăвашла изложенийĕ шухăшсене грамматикăпа логика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырса кăтартма пултарнине кăтартса парать. Шел пулин те, ку класра ачасен çыăнуллă пуплев ăслайхăнăхăвĕсен шайĕ кĕтнинчен пĕчĕкрех пулни палăрчĕ. Акă еплерех пуплев йăнăшĕсемпе стиль шайрăкĕсем тĕл пулаççĕ ачасен ĕçĕсенче: «Питĕ хăрушă саспа ӳхлет тата»; «Вăрманçă ӳхĕне курайласăр персе пăрахма шутлать»; «Унта пĕр пӳрт кирпĕч йăваланать»; «Тепĕр кĕтесре ӳхĕ çуначĕсемпе вĕçсе хăпарас пек хускалса тăрать»; «Кăмака мăрйи пӳрт виттипе маччана çĕмĕрсе урайне ӳкрĕ»; «Вăрманçă тĕллерĕ те пăшалăн икĕ кĕпçипе пĕр харăс печĕ»; «Ӳхĕ куç хĕсмесĕр пăхать»; «Кăмака мăрйи пӳрт маччине ӳксе çĕмĕрнĕ»; «Тепĕр кĕтессинче ӳхĕ чĕррипех утса çӳренĕ»; «Арăмĕ кĕтесе пытанса ларнă, тепĕр кĕтесре ӳхĕ çӳлте»; «Ку пулăм хыççăн ӳхĕ вăрманçă патĕнче пурăнма тытăнать»; «Çĕрле икĕ кĕпçеллĕ пăшалтан персе кăмака труби маччана çĕмĕрсе урайне анса ӳкрĕ»; «Ӳхĕ тепĕр кĕтесре тăрать»; «Пăшалпа икĕ хут персе ячĕ»; «Ӳхĕ хăйĕн юррине пуçлать»; «Тек хăйне лартăр» т. ыт. те.

Вуннăмĕш-вунпĕрмĕшсемшĕн 11 задани питĕ ансат пулчĕ: «Сиктерсе хăварнисем вырăнне предложенисене çыхăнтаракан сăмахсем ларт».

Харкам текста ăслани. Виççĕмĕш класра вĕренекенсем «Манăн тус» калав çырчĕç. 25 ачаран 14-шĕ темăна туллинех уçнă. Уйрăмах анлă сарăлнă йăнăшсемпе çитменлĕхсен шутне çаксене кĕртмелле. Чăваш пуплевне калăпланă чухне авторсем вырăсла шухăшлаççĕ: «Ăна 9 çул»; «…куçĕсем кăвак, çӳçĕсем сарă тĕслĕ»; «Питĕ хытă юрататăп» т. ыт. те. «Вăл виççĕмĕш класра, çирĕммĕш шкулта вĕренет» (малтанах япалине, унтан унăн пайне асăнмалла); «Женя Шупашкарта виççĕмĕш класра вĕренет» (япалапа унăн пайĕсем хушшинчи çыхăну йĕркине шута илмен. Шкул ятне сиктерсе хăварнă). «Настя шанчăклă тус», – тесе вĕçлет хăй калавне пĕр вĕренекен, анчах та калавĕнче çакна çирĕплетекен пĕр факт та çук. Тепĕр вĕренекен анлă текст вырăнне резюме çырса панă: «Манăн тус пур. Вăл Яна ятлă. Яна тирпейлĕ, ĕçчен, ырă, хаваслă хĕр ача. Вăл мутанчăк мар».

Содержани çыхăнулăхĕпе пĕрпĕтĕмлĕхĕ тата çыру тирпейлĕхĕпе тĕрĕслĕхĕ тĕлĕшĕнчен çак авторсен ĕçĕсем ыттисемпе танлаштарсан пахарах: Сыбатова Валерия, Леонтьева Ольга, Ефимов Егор, Романова Тамара (Шупашкарти 49-мĕш вăтам шкул); Капитонова Татьяна, Яковлев Олег (Шупашкарти 20-мĕш вăтам шкул); Семенова Камилла (Шупашкарти 29-мĕш вăтам шкул); Андреев Дмитрий (Пушкăртстанри Пишпӳлекри 1-мĕш вăтам шкул); Иливанова Ксения (Шупашкарти 27-мĕш вăтам шкул).

4 класра вĕренекенсем «Эпĕ кушакпа (йытăпа) çапла вылятăп» (12 задани) калав çырчĕç. 32 вĕренекентен 13-шĕ темăна туллинрех те тĕплĕнрех уçса панă. Куçа тăрăнакан йăнăшсем тĕпрен илсен ачасем черновиксăрах ĕçленипе çыхăннă. Çакна пула шухăш çыпăçулăхĕпе пĕрпĕтĕмлĕхĕ нумай чухне такăнать. «Упреждающий синтез» механизмне аталантарас тĕлĕшпе ятарласа ĕçлеме кирли куçкĕрет. Тÿрĕ пуплеве çырура палăртнă чухне кавычкăсене типографи шрифчĕсемпе усă курни тĕлĕнтерчĕ. Çавăн пекех хăш-пĕр çĕрте йăнăш çырнă вырăнсене скобкăна хупасси йăлана кĕнĕ.

Акă мĕнле содержани йăнăшĕсем тĕл пулаççĕ ачасен ĕçĕсенче: «Унăн çăмĕ çăмламас тата çемçе» (кирлĕ: тирĕ); «Кантăкран эпĕ килессе кĕтет» (кантăкран пăхаççĕ!); «Пирĕн Муся ытларах çывăрма юрататъ. Çавăнпа шкултан килсен эпĕ кушак çурисемпе вылятăп» (ăнлансах пĕтермелле мар: кушак çывăрма юратнăшăн автор унăн çурисемпе вылять-и?); «Кушак мунча кĕме юрататъ» (ку автор темскер пăтраштарать пулмалла). Пĕр автор калав вырăнне 7 пунктран тăракан отчет çырса панă.

Паха текст требованийĕсене (шухăшлав харпăрлăхĕ, текст ячĕпе содержани çыхăнулăхĕ, план тăрăх çырни, абзацсем пурри, шухăшсен çыхăнулăхĕ т. ыт. те) çак авторсен ĕçĕсем пăхăнарах параççĕ: Егорова Руслана (Вăрнарти 1-мĕш вăтам шкул); Петров Илья (Пушкăртстанри Пишпÿлекри 1-мĕш вăтам шкул); Фролова Софья (Хĕрлĕ Чутайри Хусанкасси пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкул); Петрова Софья (Шупашкарти 49-мĕш вăтам шкул); Васильев Кирилл (Шупашкарти 1-мĕш гимнази); Васильева Ксения (Шупашкарти 2-мĕш пуçламăш шкул).

Пиллĕкмĕш класра вĕренекенсен 86 ĕçĕнчен пуçланă калава вĕçлеме никам пулăшмасăрах тăрăшни ăнăçуллă пулнă тесе çаксене асăнмалла: Александрова Ксения, Сынков Максим (Шупашкарти 44-мĕш лицей); Михайлова Елизавета (Пушкăртстанри Пишпÿлекри 1-мĕш вăтам шкул); Головукина Мария (Шупашкарти 46-мĕш гимнази); Любимова Анна (Çĕнĕ Шупашкарти 18-мĕш вăтам шкул); Кудряшова Александра (Шăмăршăри вăтам шкул); Кудрявцев Андрей (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул).

6-мĕш класра вĕренекенсем килĕшекен чĕрчун çинчен калав çырнă та ăна ят панă. Характерлă йăнăшсемпе шăйрăксенчен каллиграфипе графика правилисене шута илсех пĕтерменнине асăнмалла. Абзацсене уйăрмаççĕ. Ачасем кушак, йытă, пакша, чĕрĕп, çÿлевĕç, попугай çинчен çыраççĕ. Хăшĕ-пĕрисем ют текстсене çырса илнĕ. Кунта та сас паллисене, чăрăну паллисене сиктерсе хăваракансем пур. Анлă сарăлнă çитменлĕхсем тесе юнашар предложенисенчех пĕрешкел сăмахсемпе усă курнине каламалла. Синонимсемпе усă курманни, курмасăр иртнĕ вăхăт форминчи глаголсене вырăнсăр кĕртсе лартни çине-çинех тĕл пулать. Вĕсен сăлтавĕ – черновиксăрах çырни. Акă хăш-пĕр йăнăшсем: «Куçĕсем пысăк, çăмламас хÿреллĕ» (предложение шухăшласа çитермесĕрех çырса хунă); «Пирĕн пурăнакан çуртра кушак пур» (кирлĕ: Эпир пурăнакан çуртра…); «Эпĕ питĕ Темăна юрататăп» (кирлĕ: Эпĕ Темăна питĕ юрататăп); «Кушак çури хурапа шурă тĕслĕ» (кирлĕ: Кушак çури хура шурă тĕслĕ); «Тепĕр такран» (кирлĕ: тепĕртакран) т. ыт. те. Ыттисенчен пахарах тесе çак авторсен калавĕсене асăнмалла: Игнатьева Анжелика, Чернов Павел (Пушкăртстанри Пишпÿлекри 1-мĕш вăтам шкул).

7-мĕш класра вĕренекенсем вĕçĕ тăрăх калав пуçламăшĕпе тĕп пайне хайларĕç (12 задани): «Çапла иртсе кайрĕ канмалли кун». Типлă йăнăшсемпе çитменлĕхсем çаксем. Нумайăшĕ плансăрах çыраççĕ. Çавна пула тепĕр хут каланисем, çине-çинех пĕр сăмахпа усă курни тĕл пулать. Вырăсла шухăшласа чăвашла çырса хунине нимпе те пытараймăн: «Йĕлтĕрсем сыртăмăр» («Йĕлтĕр сыртăмăр» темелле); «А эпир аннепе тĕрлĕ фигуристски пируэтсем тăватпăр»(?); «Уроксене çăмăллăн шутларăм» («Задачăсене…» темелле); «Ăшă чей ĕçрĕмĕр» («Вĕри чей…» темелле); «Ирех эпир асаттепе асанне пулăшма тытăнтăм» («упреждающий синтез» механизмĕ ĕçлемен); «Кăнтăрла иртни вунтăватă сехетре» («Кăнтăрла иртни икĕ сехетре» темелле) т. ыт. те.

44 вĕренекенрен 17-шĕ темăна ыттисенчен тарăнрах та туллинрех уçса панă. Харкамлăхпа шухăшлав чĕрĕлĕхĕ ыттисенчен çÿллĕрех шайра пулнипе çак авторсен хайлавĕсем уйăрăларах тăраççĕ: Тиманова Светлана (Тутарстанри Емелькино вăтам шкулĕ); Морозова Софья, Макарова Софья (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул); Какшанова Настя (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул).

Умĕнхи класри пекех, саккărмĕшĕсемшĕн те çак задани палăрмаллах çăмăл пулчĕ: «Вĕçĕ тăрăх калав пуçламăшĕпе варрине ăсла. Калава ят пар». Калав вĕçĕ тĕп пайĕнчи шухăшсене пĕр тĕвве çыхать («пиллĕк» паллă илнин историне çырса кăтартмалла). Акă мĕнлерех çÿп-çап куçа тăрăнать ачасен ĕçĕсенче: «Иртнĕ урокра эпир çĕнĕ тема иртрĕмĕр» (вырăсла шухăшласа çырнă); «Тĕрĕс хуравласа, учительница мана «пиллĕк» паллă лартса пачĕ»; «Асаплансан-асаплансан çапах та икĕвиçĕ йĕр [рет!] çыхрăм» (сăмах нуски çыхни çинчен). Акă тепĕр ĕç: «Ÿкерчĕк доска çинче çакăнса тăрать. Эпĕ доска патĕнче [умĕнче!]. Вĕсем [камсем?] предложенисем калаççĕ». (Автор мĕн çинчен, мĕн çырнине, малалла мĕн çырмаллине чухламасть. Шухăшсене малтан черновик çинче

сарса хуманни куçкĕрет. 7+асамлă формула ĕçлемест). Грамматикăпа орфографи йăнăшĕсенчен çаксем тăтăшах тĕл пулаççĕ: хупă сасăсем вăрăмланнине тĕрĕс палăртманни (паллаштарчĕ, «пиллĕк» паллă т. ыт. те), çемçе сыпăксенче кирлĕ мар çĕртенех çемçетӳ палли лартни (тĕлĕнеть, вĕренеть, йĕреть т. ыт. те). Саккăрмĕшсенчен 4-шĕ темăна туллинрех те тарăнрах уçса панă. Харкамлăх тата пурнăçа чĕрĕрех курассин шайĕ ыттисенчен пысăрах пулнипе Назарова Екатерина (Йĕпреç районĕнчи Хурамал вăтам шкулĕ) ĕçĕ уйрăлса тăрать.

9-мĕш класра пĕр-пĕр чĕрчун çинчен калав çырса ăна ят памалла пулнă. 18 ĕçрен 5-шĕнче темăна туллинрех уçса панă. Харкамлăх шайĕ ыттисенчен çӳллĕрех пулнипе çак авторсем çырнă калавсем уйрăлса тăраççĕ: Григорьева Мария (Çĕнĕ Шупашкарти 8-мĕш вăтам шкул); Филиппова Снежана (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул). Вĕçне çитиччен шухăшласа çитермесĕр çырса хунă предложенисем: «Вăл питĕ ăслă кушак пулса»; «Апат çисен тасалма тытăнать, пĕр сехете яхăн илем кĕрет»; «Хăйĕн хуçине нихçан та пăшăрхантармаç»; «Вăл апрель вĕçнелле вĕçсе килет те пире уйăх ытла хăйсен юррипе савăнтараççĕ»; «Мулкачăн питĕ лайăх илтни»; «Хĕлле вăл шурă, çемçе, ăшă тата çăра пулать» т. ыт. те.

10-11-мĕш классенче вĕренекенсем ватă тăванĕсем çинчен калав ăсларĕç. Акă куçа тăрăнакан йăнăшсемпе çитменлĕсем: «Эпир асаттепе асаннепе пĕр ялта пурăнатпăр»; «… пирĕн патне килет»; «Ултă мăнук астума пулăшаççĕ»; «Вăл тата чи тутлă куклисем пĕçерет»; «Вăл еплерех тараватлă, çут çанталăка юрататчĕ, çырла вырăнĕсене пĕлетчĕ»; «Эпир ял пуçламăшĕнче, вăл ял вĕçĕнче пурăнатпăр»; «Вĕсем Челнара пурăнаççĕ»; «Кукамай патне килсен вăл пире хăмла çырлипе [пĕçернĕ!] кукăльсемпе хăналаса ярать»; «Эпир ăна питĕ вăйлă юрататпăр»; «Выçлăха, сивĕлĕхе чăтса хĕллене каçнă» т. ыт. те.

Ку классенче хайланă калавсенчен Герасимова Екатерина (Йĕпреç районĕнчи Хурамал вăтам шкулĕ) хайлавĕ ыттисенчен палăрмаллах уйрăлса тăрать.

Пĕтĕмлетӳсемпе сĕнӳсем. Олимпиада ĕçĕсен тишкерĕвĕ шкул ачисем программа материалне пĕтĕмĕшле илсен аван ăса хывнине кăтартса пачĕ. Çырура тĕл пулакан йăнăшсемпе çитменлĕхсен сăлтавĕсем заданисене пурнăçланă чухне тимлĕхе вĕçне çити тытса пырайманнипе çыхăннă. Сас палли тăррисенчи паллăсене сиктерни çулсеренех тĕл пулать. Творчество заданийĕсене пурнăçланă чухне ачасем малтан мĕн çырнине, малалла мĕн çырмаллине шута илмеççĕ. Çавна пула шухăшсем таткаланчăк, çыхăнусăр пулса тухаççĕ. Творчество çыру ĕçĕсене черновиксăрах çырма хăнăхни çӳлерех асăннă çитменлĕхе пĕтерме мар, малалла аталантарма пулăшать. Çакна тепĕр хут палăртса хăварни вырăнлă пулма кирлĕ. Çырупа шухăшлав пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура. Вĕсем пĕр-пĕрне витĕм кӳрсе аталанаççĕ, пĕр-пĕриншĕн сăлтавпа тĕллев пулса тăраççĕ. Çырура шухăш кӳлепине сарса хурса ăна курăмлă тума, шухăш çипписене кирлĕ пек çыхăнтарса пыма пулать. Çакă вăл текст требованийĕсене туллин шута илме хушать.

# ПУÇЛАМĂШ ШКУЛТА ВĔРЕНЕКЕНСЕН ЧĂВАШЛА ПУПЛЕВ АТАЛАНĂВĔН ШАЙĔПЕ ÇЫХĂННĂ ХĂШ-ПĔР ЫЙТУСЕМ

**АРТЕМЬЕВА Тамара Васильевна**
педагогика наукисен кандидачĕ, доцент
Педагогикăпа психологи Ăслăх тĕпчев институчĕн
ăслăх сотрудникĕ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра пуçламăш классенче туянакан пĕлӳсемпе ăслайсем мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине тĕрлĕрен тĕслĕхпе çутатса пама тăрăшнă. Олимпиадăна тăратнă ĕçсене тишкерсе, автор ачасен аталанăвĕн шайĕ тĕпрен илсен шкул программине тивĕçтернине палăртать.*

**Тĕп сăмахсем:** ĕç содержанийĕ, чĕлхе функцийĕсем, лингводидактика, пуплев ĕç-хĕлĕ, харкам, чĕлхе тытăмĕ, сасă тишерĕвĕ, текст компетенцийĕ, чĕлхе компетенцийĕ, çыхăнуллă пуплев.

Чĕлхе тĕлĕшĕнчен пуçламăш шкулта илнĕ пĕлӳ-ăслай вĕренекенсемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ пулни кĕрет. Çыхăнуллă калаçма-çырма, итлеме пултараймасăр ытти предметсене вĕренме те кансĕр. Кунпа пĕрлех пуçламăш шкулти вĕренӳ малашнехи пĕлӳ-ăслай никĕсĕ пулнине те асра тытмалла.

Малтанхи тапхăрта ачана ăнăçлă вĕренсе пыма вара, мĕн каласан та, тăван чĕлхе пулăшать. Çакна çирĕплетсе паллă меслетçĕ Ф.И. Буслаев çапла каланă: «Родной язык так сросся с личностью ребенка, что учить оному – значит вместе с тем развивать духовные способности учащегося» [2]. Вăл калани паянхи куншăн та вăйра. Ачан ăс-тăн ÿсĕмĕ тăван пуплев аталанăвĕпе пĕрле кăна мар, ытларах тăван пуплев пулăшнипе пулса пырать.

Çакă пуçламăш классенче ачасене тăван чĕлхене вĕрентессин пĕлтерĕшĕпе яваплăхне питех те ÿстерет. Ĕç ăнăçлăхĕ вара ачасен мехелĕнчен çеç мар, вĕренĕве мĕнле йĕркеленинчен те нумай килет. Вăл шутра ачасен пĕлÿ-ăслайĕ, хăнăхăвĕсем еплерех йĕркеленсе пынине сăнаса-тĕрĕслесе, хакласа тăнинчен те. Çакăн çине вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсенче уйрăмах пусăмланă. Стандарт ыйтнипе килĕшÿллĕн, ачасен пĕлÿ илес туртăмне аталантарни, йăнăшсене тишкерме, вĕсенчен хăтăлса пыма вĕрентни, пĕлÿ илни мĕн тума кирлине, мĕншĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине уçса пани, ачасен пĕлÿ шайне куллен сăнаса-хакласа палăртни тĕпре пулмалла. Çавăн пекех ачасене харкам ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн хаклама, пĕр-пĕрин ĕçне хак пама та вĕрентмелле.

Ачасен ĕçĕсене çĕнĕ стандартпа килĕшÿллĕн хаклани тĕрлĕ майпа пулса пыма пултарать. Вăл шутра ăмăртусем (олимпиадăсем, викторинăсем, конкурссем) урлă та. Тĕрлĕ шайри олимпиадăсем irттерни шăпах ачасене хăйсем вĕренÿ программинче палăртнă задачăсене мĕнлерех пурнăçласа пынине çеç мар, харкам мехелне (мĕн тума пултарнине) палăртма та пулăшать. Кун йышши ăмăртусенче сĕнекен ĕçсем яланах программăра кăтартнисенчен содержани тĕлĕшĕнчен те, форми тĕлĕшĕнчен те кăткăслăхĕпе, кăсăклăхĕпе чылай уйрăлса тăраççĕ. Çавăнпа çакăн пек ĕçсен пĕлтерĕшĕпе функцийĕсем самай анлă. Вĕсем малтан асăннисемсĕр пуçне тата ачасене тăван чĕлхепе кăсăклантараса ярас, вĕсен тăван чĕлхене тарăнрах пĕлес туйăмне амалантарса ярса аталантарса пырас задачăсене ăнăçлăрах пурнăçласа пыма та пулăшаççĕ.

Малалла Педагогикăпа психологин тĕпчев институчĕ нарăс уйăхĕн 1-7-мĕшĕсенче йĕркелесе ирттернĕ «Радиус» Аслă олимпиадăн чăваш чĕлхи секцийĕнчи результатсене пăхса тухăпăр. Калаçу пуçламăш класс ачисем пурнăçланă ĕçсем тавра пулĕ. Чи малтанах кĕскен олимпиада ыйтăвĕсемпе ĕçĕсене мĕне кура калăплани çинче чарăнăпăр. Вĕсене паянхи куна пуçламăш шкулта вĕренекенсене чĕлхе тĕлĕшĕнчен мĕне вĕрентмеллине, епле аталантарса пымаллине шута илсе йĕркеленĕ.

Хальхи тапхăрта чĕлхене вĕрентес ĕç содержанийĕ самай кăткăс. Çакă чĕлхен обществăри функцийĕсен анлăшĕпе çыхăннă. Чĕлхе ачашăн хутшăну хатĕрĕ çеç мар: вăл уншăн ăс-тăнне, пуплевне аталантармалли, кăмăл-сипетне, туйăмне йĕркелемелли, таврари чăнлăха тĕпчемелли хатĕр те пулать. Вĕренÿ ĕç-хĕлне çакăн пек анлă пăхни ачана чĕлхе тĕлĕшĕнчен аталаннă харкам пек çитĕнтерме май парать. Лингводидактикăра халĕ чĕлхене алла илессине (языковое развитие) тĕпе хураççĕ. Ачасене чĕлхе тытăмне çеç мар, пуплев ĕç-хĕлне (калу, çыру, вулав, итлев), хутшăну калăпĕсене, пуплев культурине вĕрентмелле, халăх историйĕпе, культурипе паллаштармалла. Ку вара ачана чĕлхе тĕлĕшĕнчен аталаннă харкам (языковая личность) пулса ÿсме пулăшассипе çыхăннă [1].

Çапла вара, паллă меслетçĕсем (Т.Г. Рамзаева) пуçламăш шкулта чĕлхене вĕрентес ĕçре çак компонетсем пулмаллине палăртаççĕ: чĕлхе тытăмне вĕрентесси (тĕп ăнлавсемпе пулăмсем, правилăсем; вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен чĕлхе пĕлĕвĕсемпе ăслайĕсем), пуплев ĕç-хĕлне алла илесси (вулав, çыру, калу, итлев; пуплев пĕлĕвĕсемпе вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен тĕрлĕ шайри пуплев ăслай-хăнăхăвĕ), хутшăну пуплев культурине вĕрентесси, халăх культурипе паллаштарса пырасси [4].

Çакна шута илсе олимпиадăра вĕренекенсене пурĕ 12 ĕç сĕннĕ. Малтанах палăртса хăвармалла, ыйтусемпе ĕçсем пурте чăваш шкулĕн 1-4 класĕсен «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисемпе» килĕшсе тăраççĕ (3). Вĕсенчен пĕр ушкăнĕ ачасем тăван чĕлхен тĕп ăнлавĕсемпе тата пулăмĕсемпе, правилисемпе, вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен чĕлхе пĕлĕвĕсемпе тата ăслайĕсемпе çыхăннă. Виççĕмĕш класра вĕренекенсене сĕннĕ ыйтусене илес пулсан, кусем 4-7-мĕш ĕçсем (4. Çемçетÿ палли (ь) ытлашши сăмаха палăрт. Укажи слово, где мягкий знак (ь) лишний. 5. Сăмахсене алфавит йĕркипе лартса тух. Переставь слова в алфавитном порядке. 6. Ытлашши сăмахĕ хăшĕ? Которое слово лишнее? 7. Хăш йĕркере йăнăш çырнă сăмах пур? В какой строке имеется слово с ошибкой?). Тăваттăмĕш класрисене сĕннисенчен – 1-мĕш тата 2-мĕш, 4-мĕш тата 5-мĕш ĕçсем (1. Хăш сăмахĕ ытлашши? Которое слово лишнее? 2. Хăш сăмахĕ глагол мар? Какое слово не является глаголом? 4. Хăш сăмахра çемçетÿ палли (ь) кирлĕ? В каком слове нужен мягкий знак (ь)? 5. Хăшĕ хутăш сăмах? Какое слово смешанное?).

Ачасенчен ытларахăшĕ çак ĕçсене тĕрĕс пурнăçланă. Йăнăшсем те сахал янă. Вĕренекенсенчен пĕри -лч, -нч пĕрлешĕвĕсемлĕ сăмахсенче çемçетÿ палли (ь) тĕрĕс мар лартнă (пăньчă). Çакă вĕренекенсем

çыру ĕçĕсенче пур чухне те уроксенче паллашнă правилăсемпе усă курма пĕлейменнипе çыхăннă пулĕ тетпĕр, сĕнни евĕрлĕ ĕçсене пурнăçланă чухне вĕсем ытларах хăйсен сасă сисĕмне шанаççĕ пулмалла. Иккĕшĕ – хутăш сăмаха тĕрĕс палăртайман (тăван). Ку ачасен сасă тишкерĕвĕн хăнăхăвĕсем çирĕпленсе çитейменнине кăтартать пулĕ. Виççĕшĕ сас палли ятне пĕлеймен. Ку вара алфавитпа паллашнă чухне çак ыйтăва çителĕклĕ таран тимлеменнипе çыхăннă ĕнтĕ.

Çапла вара олимпиадăна хутшăннисем чăваш чĕлхи тытăмне тĕслĕхлĕ программăра кăтартнă шайра аван пĕлнине палăртмалла. Ĕç пахалăхĕ, паллах, ачасем олимпиадăра сĕннĕ ĕçсене кĕрет пурнăçламаннипе вĕсен тĕрлĕ пулăшу хатĕрĕсемпе (справочниксемпе, вĕренӳ пособийĕсемпе, словарьсемпе) усă курма май пулнинчен те килнĕ пулĕ тетпĕр. Анчах çакă, пирĕн шутпа, пĕрре те сивлемелли пулăм мар. Халĕ хатĕр пĕлӳ йышăнса ăса хывасси тĕпре мар: ачасене мĕн пĕчĕкрен вĕренме вĕрентмелле. Ку вара тӳрремĕнех вĕсене пулăшу хатĕрĕсемпе усă курма хăнăхтарма хистет.

Олимпиадăра сĕннĕ ĕçсенчен ытларахăшĕ вĕренекенсем пуплев ĕç-хĕлне алла илессипе, ачасен пуплев пĕлĕвĕсемпе вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен тĕрлĕ шайри пуплев ăслай-хăнăхăвĕпе çыхăннă. Çакăн йышши ĕçсене епле пурнăçланине тишкернĕ майăн ачасем сăмах майлашăвĕпе предложени шайĕнче ĕçлеме аван вĕренсе пыни курăнать.1-мĕш (3-мĕш класс) тата 6-мĕшпе 7-мĕш (4-мĕш класс) ĕçсенче ачасен пăтраштарнă сăмахсенчен предложени, предложенисене йĕркипе вырнаçтарса текст калăпламалла пулнă. (1. Пăтраштарнă сăмахсенчен предложени йĕркелесе çыр. Восстанови деформированное предложение. – 3-мĕш класс; 6. Пăтраштарнă сăмахсенчен предложени йĕркеле. Восстанови деформированное предложение. 7. Предложенисене йĕркипе вырнаçтарса тух. Текста ят пар. Обозначь цифрами порядок предложений. Текст озаглавь. – 4-мĕш класс)

Çакăн евĕрлĕ ĕçсем ачасен çыхăнуллă çыру хăнăхăвĕсене аталантарас тĕлĕшпе малтанхи тапхăрта питех те паха шутланаççĕ. Вĕсене пурнăçланă май ачасем уйрăм предложенисемпе текстсем еплерех йĕркеленнине ăнланса пыраççĕ. Вĕренекенсемшĕн пăтраштарнă сăмахсенчен предложенисем йĕркелесси те (1-мĕш тата 6-мĕш ĕçсем), предложенисене йĕркипе вырнаçтарса тухса текст калăпласси, ăна ят парасси те (7-мĕш ĕç) чăрмавлă пулманнине ырласа палăртмалла.

Вĕренекенсем текста вуласа йышăнма, ăнланма пултарни те палăрчĕ. Вĕсем панă текст тăрăх ыйтусене, тĕпрен илсен, тĕрĕс хуравлама пултарнă. Çапах та ачасен ĕçĕсене тишкернĕ май вĕсенчен ытларахăшĕ ыйтусене ытларах текст çине тĕревленсе е хăш чухне тата текстри предложенисене тӳрремĕн çырса илсе хуравлани курăнать. Харкам тĕллĕн калăпланă хуравсем сахалтарах. Хăйтĕллĕнлĕх çителĕксĕр.

4-мĕш класс ачисене текст тăрăх сĕннĕ ыйтусем хушшинче уйлама хистекенни те пур (Эскам çунана мĕн пирки туртайман?). Ачасенчен ытларахăшĕ туллин уйлама йывăрланса тăнă пулмалла, ыйтăва кĕскен кăна хуравланă. Апла пулсан, малашне ачасен уйлав хăнăхăвĕсене аталантарас тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕçлемелле пулĕ.

Олимпиадăна хутшăннисен (виççĕмĕш классен те, тăваттăмĕш классен те) ĕçĕсенче палăрнă йăнăшсемпе çитменлĕхсенчен ытларахăшĕ 11-12-мĕш хушусене пурнăçлассипе çыхăннă. Ку ĕçсем – ачасен текст компетенцийĕсем еплерех йĕркеленсе пынине, вăл шутра текстăн тĕрлĕ тĕсне (калав, сăнлав, уйлав) калăплас (репродуктивлă тата продуктивлă шайра) пултарулăхĕ мĕнлерех аталаннине кăтартаканнисем.

11-мĕш ĕçсенче текст ăшлăхне çырса кăтартма ыйтнă (Текст ăшлăхне хăв сăмахусемпе çырса пар. Изложи содержание текста своими словами). Ку ĕçе пĕр ача пачах та пурнăçламан. Вĕренекенсенчен виççĕшĕ текст ăшлăхне туллин асăмласа çырса кăтартайман. Пĕр ĕçĕнче çак хушăва тĕрĕс ăнланманнипе çыхăннă пулмалла. Ача текст содержанине çырса паман, унта мĕн çинчен каланине кĕскен палăртнă кăна. (Ку текстра эпир Ванюк Эскам йытта çунана кӳлсе катаччи чупнине куратпăр.) Ытларахăшĕ, пĕтĕмĕшле илсен, текст содержанине асăмласа çырма пултарнă. Çапах та ку хутĕнче те вĕсем панă текст çине тĕревленме ăнтăлни курăнать. Тен, вĕсен умĕнче хатĕр текст выртнипе çапла пулса тухнă?

Ытти çитменлĕхсем ыйтусене хуравланă май тата текст ăшлăхне хăйсем çырса кăтартнă чухне предложенисене тĕрĕс йĕркелейменнипе çыхăннă. Малтан асăннă предложенире те (Ку текстра эпир Ванюк Эскам йытта çунана кӳлсе катаччи чупнине куратпăр) çак çитменлĕхех куратпăр. Ытти тĕслĕхсене те палăртма пулать:

− Пĕррехинче Ванюк юлташĕсене йытăпа катаччи чуптарчĕ.
− Ванюкпа Эскам çунана кӳлсе катаччи чупаççĕ.
− Эскам туртайман. Ванюк кăшкăрнă, ăна çапнă.

Хушăран, сайра пулин те, факт йăнăшĕсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен:

− Пĕррехинче Ванюк катаччи чупма шутлать.

− Пĕррехинче Ванюк тусĕсемпе ярăнма шутлать.

Кун йышши йăнăшсем тăвасси, паллах, ачасем текст ăшлăхне тимлĕн вулама, содержанине пĕтĕмĕшле уçăмланисĕр пуçне унта сăнланнă уйрăм самантсене, вак детальсене тимлеме хăнăхса çитейменнинчен килет.

12-мĕш ĕçсенче ачасене хăйсене панă темăпа килĕшӳллĕ текст йĕркелеме сĕннĕ. Виççĕмĕш класс ачисен сăнлавлă текст («Манăн тус» ятлă калав ăсла. Калавунта тусун паха енĕсене çырса кăтарт. Напиши рассказ «Мой друг». В рассказе опиши его хорошие качества), тăваттăмĕшĕсен калуллă текст («Эпĕ кушакпа (йытăпа…) çапла вылятăп» калав ăсла. Напиши рассказ «Как я играю с кошкой (собакой…)») калăпламалла пулнă. Ку вăл самай кăткăс, ăславлă ĕç. Сĕннĕ ĕçе çителĕклĕ шайра пурнăçлас пулсан вĕренекенсен чылай ăслай-хăнăху йĕркеленсе çитмелле пулнă. Ачасен хайлавĕсене çак критерисене шута илсе хакланă.

1. Хайлавра сĕннĕ темăна çителĕклĕ таран уçса пани (ячĕпе ăшлăхĕ шайлашса тăни).

2. Хайлава тĕрĕс тытăмлани, сюжет аталанăвне тĕрĕс йĕрлесе пыни (ĕçе е сăнлава çыхăнуллă, йĕркине пăсмасăр, пĕр пулăм çинчен теприн çине куçса каймасăр, темиçе хут каламасăр, сиктерсе хăвармасăр çырса кăтартнă).

3. Текстăн жанр тата тĕс уйрăмлăхĕсене шута илсе çырма пултарни.

4. Текст калăпăшĕ.

5. Текста лексика тата синтаксис тĕлĕшĕнчен тĕрĕс калăплани (лексика пуянлăхĕ, сăмахсемпе тĕрĕс те вырăнлă усă курни, синонимсемпе тата антонимсемпе, сăнарлăх хатĕрĕсемпе усă курни; предложенисен тĕрлĕ тĕсĕпе усă курни, вĕсене тĕрĕс йĕркелени).

6. Текста орфографи тата пунктуаци тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырни (5). Ку ĕçе ачасенчен виççĕшĕ пачах та пурнăçламан. Ыттисем, тĕпрен илсен, тăватă ачасăр пуçне, пурте çыхăнуллă калав ăслама пултарнă.

Асăннă критерисене туллин тивĕçтерекен ĕçсем те пулчĕç. Ку ачасем содержанине темăпа килĕшӳллĕ туллин уçса пама пултарнă. Вĕсен хайлавĕсен ăшлăхĕ ячĕпе килĕшӳллĕ. Ачасем текста кирлĕ пек тытăмлама пултарнă, кашни пайне тивĕçлĕ шайра йĕркеленĕ. Текстсем сюжет аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен самай интереслĕ. Калавсен чĕлхи яка, лексика тата синтаксис тĕлĕшĕнчен пуян, сăнарлă. Çакăн пек ĕçсен шутĕнче, тĕслĕхшĕн Семенова Камилла (3 класс) тата Петрова Софья (4 класс) ĕçĕсене палăртма пулать.

Пĕтĕмĕшле илсен, олимпиадăна хутшăннисенчен ытларахăшĕн калав ăшлăхĕ ячĕпе килĕшӳллĕ. Анчах ячĕпе содержанийĕ шайлашса тăман ĕçсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, ача хăйĕн калавне «Эпĕ кушакпа выляни» ят парать. Калав пуçламăшĕнче хăйсен кушак, унăн çурисем пуррине асăнать те малалла кушак çурисем мĕнле вылянине çырса кăтартать. Е тата ача хăй кушакпа выляни çинчен каласа парас вырăнне малтан Тигр ятлă кушакне сăнласа парать те унтан тепĕр Моська ятлă кушакпа епле выляни çинчен çырать.

Хăш-пĕр ĕçсенче панă хушуран пăрăнни те пур. Акă ача хушурипе килĕшуллĕ хăй кушакпа е йытăпа мĕнле вылянине çырса кăтартас вырăнне калавне «Леопольдпа Барбос» ят парать те çак чĕр чунсене сăнланине тĕпре туса хурать.

Ачасенчен ытларахăшĕ, тĕпрен илсен, хăйĕн калавне тĕрĕс тытăмланă: пуçламăшне, тĕп пайне, вĕçне тивĕçлĕ калăпланă. Çапах ку тĕлĕшрен те çитменлĕхсем палăрчĕç. Тĕслĕхрен, пĕр ĕçре калавăн пуçламăшĕ те, вĕçĕ те çук: ача тӳрех кушакĕпе вылякан вăйăсене каласа кайнă. Уйрăм ĕçсенче калавăн тытăм пайĕсем пур, анчах тĕп пайне çителеклĕ йĕркелесе çитерейменни курăнать. Сюжет аталанăвĕ те, çыхăнулăх та çук. Тĕслĕхрен, пĕр ĕçре тĕп пайĕнче вăйă тĕсĕсене шутласа кайни çеç: Эпĕ çăмха перетĕп, вăл унпа чупать. Эпĕ кăранташ ыватăтăп, Мăркка шăлĕсемпе çаклатса килет…

Çапах та çитменлĕхсенчен ытларахăшĕ текста чĕлхи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс, вырнаçуллă калăпласа çитерейменнипе çыхăннă. Хăш-пĕр ача предложенисене, абзацсене тивĕçлĕ йĕркелеймен. Чылай чухне çакă вырăсларан чăвашла куçарса çырнипе пулни курăнать:

− Эпĕ пианинăпа вылятăп.

− Эпĕ тата Шарик шыврa ишетпĕр.

− Пирĕн килте спорт пӳлĕмĕ пур. Эпĕ унта чупатăп, сикетĕп, çакăнатăп.

Хăш-хăш предложенисенче вырăсларан куçарнă çаврăмсем тĕл пулаççĕ: Мурка çăм çыххипе выляма юратать. Çавăнпа эпĕ час-часах унпа вылятăп. Кушак çăм çыххи хыççăн хытă чупать, унпа савăнать, мана питĕ кулăшла.

Ачасен ĕçĕсенче сăмах шайĕнчи çитменлĕхсем те пулчĕç. Сăмахсемпе вырăнсăр усă курни, предложенисенче сăмахсен йĕркине пăсни тĕл пулать.

− Кантăкран эпĕ килессе кĕтет.

− Эпĕ кушакпа питĕ лайăх выляма юрататăп.

Хушăран тимсĕрлĕхпе янă йăнăшсем те курăнкалаççĕ: Эпĕ вĕсене лавккаран илнĕ теттесем ярса паратăп. Тен, кунта тӳремĕн куçарни (ярса паратăп – завожу)? Çапла вара вĕренекенсен текст компетенцине, çыхăнуллă пуплевне аталантарас тĕлĕшпе чылай ыйту тухса тăрать.

Кунсăр пуçне ачасен ĕçĕсенче орфографипе грамматика йăнăшĕсем чылаййине те палăртса хăвармалла. Вĕсем сăмахра сас паллисене сиктерсе хăвараççĕ, ылмаштарса çыраççĕ, сăмахсен грамматика вăл е ку формине тĕрĕс калăпламаççĕ, вырăнлă усă курмаççĕ. Ку вара ачасен орфографи тата пунктуаци, грамматика ăслайĕсене йĕркелесе аталантарассипе çыхăннă.

Олимпиада ĕçĕсемпе ыйтăвĕсене калăпланă чухне ачасен культурологи компетенцийĕсен аталанăвне, тĕрĕсрех каласан, вĕсем хала́х сăмахлăхĕн туприне хăйсен ӳсĕмĕпе тивĕçлĕ шайра пĕлни-пĕлменнине палăртса хаклассине те тимленĕ. Ачасен ваттисен сăмахĕсене, ытарлă каланисене аса илсе пĕлтерĕшĕсене уçăмлатмалла пулнă (Ваттисен сăмахне çырса пĕтер. Заверши пословицу. 3. «Хăйне мăнна хурать» тесе кам çинчен калаççĕ? Кого называют человеком, ставящим себя высоко?) Ку ĕçсем ачасемшĕн йывăрах пулман курăнать. Йăнăшсем пулмарĕç. Апла пулсан вĕрентекенсем ачасене тăван халăхăн сăмахлăхĕн пуянлăхĕпе паллаштарас, вĕсен пуплев сăнарлăхне аталантарас задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе куллен тăрăшаççĕ теме пулать пулĕ.

Çапла вара, олимпиада ĕçĕсене тишкерсе пахалани çакна кăтартать: вĕренекенсем тăван чĕлхене пĕлни, харпăрлани, пĕтĕмĕшле илсен, вĕренӳ программинче палăртнине тивĕçет. Вĕрентекенсене урокра ытларах вĕсен текст компетенцийĕсене калăплас, çыхăнуллă пуплевне пур енлĕн аталантарассине ятарласа тимлеме сĕнесшĕн.

Тата çакна та палăртса хăварасшăн. Пуçламăш класра чĕлхене вĕрентессин ăнăçулăхĕ ĕçе мĕнле йĕркеленинчен те нумай килет. Юлашки вăхăтра паллă меслетçĕсем чĕлхене вĕрентес ĕç-хĕл лингвистика тата пуплев компоненчĕсене пĕрлĕхлĕ харпăрлассипе çыхăнмалла, чĕлхене вĕрентнĕ май унăн пур сийĕсем те пуплевре епле çыхăнса тăнине шута илмелле.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Артемьева Т.В.* Чăваш чĕлхине упраса хăварас: лингводидактикине аталантарас ыйтусем тавра // Халăх шкулĕ. – № 2. – 2016. – С. 20-24.
2. *Буслаев Ф.И.* О преподавании отечественного языка. – М.: Просвещение, 1992. – 511 с.
3. *Волков М.К., Сергеев Л.П., Артемьева Т.В., Печников О.И., Кульева А.Р.* Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн I-IV класĕсем валли (учебно-методическое пособие). Рекомендовано МО и МП ЧР. – Чебоксары: Издательский центр ЧРИО, 2013. – 80 с.
4. *Рамзаева Т.Г.* Избранные труды по проблемам современного начального языкового образования. – С-Пб: Изд-во РГПУ им. А.И. Герцена, 2006. – 216 с.
5. Сочинения. 1-4 классы / сост. Е.А. Виноградова. – Волгоград: Учитель, 2016. – 461 с.

# ФУНКЦИОНАЛЬНАЯ ГРАМОТНОСТЬ НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ У ОБУЧАЮЩИХСЯ В 3-11 КЛАССАХ

**ПЕЧНИКОВ Олег Иванович**
кандидат педагогических наук, доцент
заведующий лабораторией дидактики родных языков и литератур
НИИ педагогики и психологии
г. Чебоксары, Чувашская Республика

*Названная олимпиада проводится с 2007 г. по инициативе НИИ педагогики и психологии ежегодно. В статье проанализированы работы участников этой олимпиады.*

**Ключевые слова:** олимпиада, тестовые вопросы, творческие задания, грамматические ошибки, речевые ошибки, графика, орфография, пунктуация, стилистические недочеты, умения и навыки, оригинальные тексты учащихся.

В этом году секция «Чувашский язык» работала 1-7 февраля. Тестовые вопросы и творческие задания распределены с таким расчетом, чтобы более обьективно и наиболее полно оценить функциональную грамотность учащихся по ряду параметров. К этим параметрам относятся: широта мировоззрения, понимание вопросов чувашского языка и письменности, осведомленность учащихся в историко-культурных сведениях, связанных с чувашским языком. Немаловажное значение имеют для носителя языка в дву- и полиязычных условиях и такие вопросы, как: богатство словарного запаса, чувство комфортности в стилистическом и лексико-грамматическом пространстве, знание грамматических норм и навыки употребления в речи орфографических и пунктуационных правил.

В качестве мониторингового материала были предложены загадки. Первые три («Ирпе тăватă уран, кăнтăрла икĕ уран, каçпа виçĕ уран». – 3 класс; «Урлă ура утаман». – 6 класс; «Икĕ вĕçлĕ, икĕ ункă, варринче – пăта». – 7 класс. Отгадки: человек; медведь; ножницы) трудностей для учащихся не представляли, с ними справились все. «Хĕрлĕ хĕр пĕлĕт тăрăх çӳрет» («Красна девица по небу ходит») не отгадали 3 (вместо отгадки хĕвел («солнце») они все написали уйăх («луна).

В качестве инструкции для работы с пословицами и поговорками было предложено задание вставить пропущенное слово. С этими образцами справились все: «Улми (йывăççинчен) аякка ӳкмест» («Яблоко (от яблони) не далеко падает»). – 3 класс; «Паян тумалли ĕçе (ырана) ан хăвар» («Не оставляй (на завтра) то, что можно сделать сегодня»). – 4 класс; «Маччана сурса (вырт)» («Лежать поплевывая на потолок»). – 5 класс; «Уй пек асли, (вăрман) пек пуянни çук» («Нет величественнее поля, богаче (леса)». – 7 класс; «(Çынни) мĕнле, ĕçĕ çапла» («Каков (человек), такова работа». – 10 класс.

С заданием заполнить пропуски в предложениях аффиксами положительного и отрицательного форм настоящего времени и перевести эти предложения с чувашского на русский язык (8 класс) справились все участники.
Эпĕ Мухтара питĕ юрататăп. Ăна эпĕ апат çитеретĕп, çăмне тураса тасататăп, кунне икĕ хутчен урама уçăлма илсе тухатăп. Мухтар вăл ăслă, кăмăллă чĕрчун. Эпир унпа уйрăлми туссем, яланах пĕрле пулма тăрăшатпăр.

*(Филиппова Снежана, 9 класс)*

**Кукамайăм**

Манăн аттепе анне чăвашсем. Вĕсем Йĕпреç районĕнчи Чăрăшкасси ялĕнче çуралса ўснĕ. Шел пулин те, аттен ашшĕпе амăшĕ – манăн асаттепе асанне – пурнăçран тахçанах уйрăлса кайнă. Аннен те ашшĕ эпĕ çураличчен ĕçлеме кайсан хыпарсăр çухалнă

Кукамайăм вара манăн хамăр ялтах пурăнать. Эпĕ ун патне кашни кун тенĕ пек çўретĕп. Вăл мана ĕлĕкхи йывăр пурнăç çинчен каласа парать. Унăн аса илĕвĕсем мана тарăн шухăша яраççĕ. Этем хăйĕн пурнăçĕнче мĕн кăна тўсмест-ши! Мĕн чухлĕ йывăрлăх тўсме пултарать-ши вăл…

Эпир, паянхи çамрăксем ытла та ачаш ўсместпĕр-ши? Мĕн те пулин йывăртараххи сиксе тухсанах аптранă кăвакал кутăн чăмнă пек тытмастпăр-ши хамăра? Кукамайăм каласа панисем мана çирĕпрех кăмăллă пулма вĕрентеççĕ тесе шухăшлатăп.

Эпĕ кăна çўреместĕп кукамай патне.Кашни çулах хуларан ытти ачисемпе мăнукĕсем килеççĕ. Вара пире кукамай хурăн çырли татма илсе каять. Унпа чухне эпир яланах вăрмантан тулли савăтсемпе таврăнатпăр.

Питĕ юрататăп эпĕ кукамайăма. Нумай-нумай çул пурăнтăрччĕ вăл.

*(Герасимова Екатерина, 11 класс)*

Материалы всероссийской научно-практической конференции
**«ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК КАК КУЛЬТУРНЫЙ ФЕНОМЕН»**
Пĕтĕм раççейри ăслăхпа практика конференцийĕн материалĕсем
**«ЧĂВАШ ЧĔЛХИ КУЛЬТУРА ТĔЛĔНТЕРМĔШĔ»**

## ВЫРĂС ШКУЛĔНЧЕ ТĔРЕВ СЛАЙЧĔСЕМПЕ УСĂ КУРАССИ

**АЛЕКСЕЕВА Вера Клавдиевна**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
Пелепейри «Чăваш гимназийĕ» МБВУ
Пушкăрт Республики, Пелепей хули

*Вырăс шкулĕнче тĕрев слайчĕсемпе уроксенче мĕнле усă курмалли çинчен каласа панă. Шкулта ĕçленĕ чух усă курма пулать.*

**Тĕп сăмахсем***:* тĕрев слайчĕ, компьютер, информаци, çĕнĕ технологи.

Эпир информаци ĕмĕрĕнче пурăнатпăр. Паллах, çакă шкул ĕçĕнче те палăрать. Халĕ кашни класрах компьютер пур. Кашни учителĕн паянхи саманара техникăпа урокра тĕрĕс, туллин, ăнăçлă усă курма пĕлмелле.

Паянхи вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕсенчен пери – кĕске вăхăтрах ачана информацин пысăк калăпăшне ăса хывса унпа кулленхи ĕç-хĕлте усă курма вĕрентесси. Ку анлă задачăна пурнăçлас тесен, педагогăн йăлана кĕнĕ вĕрентĕвĕн методикине хальхи информаци технологийĕсемпе тачă çыхăнтарса усă курма пĕлес пулать. Вĕрентӳ ĕçĕнче компьютерпа усă курни уроксене чĕĕлĕх кĕртет. Компьютер кăтарту пособийĕсен шутне ӳстермелли хатĕр. Аудиоçыру, графика, тĕс, анимацисемпе усă курса çĕнĕ электронлă дидактика материалĕсем хатĕрлеме май пур. Вĕсем урокăн пахалăхне ӳстереççĕ, унăн содержанине пуянлатаççĕ, вĕренӳ ĕçне тухăçлăрах тăваççĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн гимназире иттерекен уроксенче çĕнĕ технологисемпе усă курма майсем çителĕклĕ. Çавăнпа та эпĕ информаци технологийĕсемпе хамăн кулленхи ĕçре усă курма тăрашатăп.

Чăваш чĕлхи урокĕсен тĕп тĕллевĕсем – литература чĕлхине ăнланма, сасăсене тĕрĕс калама вĕрентесси, ачана пуплев уйрăмлахĕсене туйма хăнăхтарасси, вуланине каласа парас, харкам тĕллĕн калавсем тăвас хăнăхусене аталантарасси. Паян вара эпĕ хамăн ĕçре тĕрев слайчĕсемпе мĕнле ĕçленине кăтартса парасшăн. К.В. Иванов пирки эпир кашни çул уроксенче калаçатпăр. Ачасем ун çинчен пĕлеççĕ. Пĕрремĕш урокра эпĕ хам каласа паратăп пулсан, иккĕмĕшĕнче вара – вĕсем. Тĕрев слайчĕсемпе эпĕ вĕсене паллаштаратăп. Предложенисене çыртаратăп. Вĕсем вара эпĕ калани çумне хăйсенне хушса каласа параççĕ.Ку ĕçре ачасен тĕрĕс калаçма пĕлни те, пусăма тĕрĕс лартни те, каласа пама мĕлни те курăнать. Вĕренекенсем К.В. Иванов çинчен ас туса та юлаççĕ, ӳкерчĕксене те курма вĕренеççĕ, хăш-пĕр чух хăйсем те тĕрев слайчĕсем туса килеççĕ.

Тĕрев слайчĕ ачана хăйĕн кăмăлне каякан ĕçе суйласа илме май паракан хатĕр. Ăна хатĕрленĕ май кашни ачан активлăхĕпе пуçарулăхĕ, ушкăнпа ĕçлеме пултарни, тавра курăмĕ аталанать. Çак мелпе чăваш чĕлхи урокĕнче тĕрлĕ ӳсĕмри ачасемпе ĕçлеме пуçлать. Унăн паха енĕсене асăнса хăварас килет:

– вĕренекенсем проект вĕçĕнче хăйсем туса хатĕрленĕ япалана е ĕçе кураççĕ;

– кашни ачан пултарулăхне уçса пама, класри лидера тупса палăртма, ĕçлĕх туйăмне аталантарма пулăшать;

– тема суйласа илнĕ вăхăтра ачан аталанăвне шута илмелле, вăйлăр аххисене – йывăртараххи, вăйсăртараххисене – ансатраххи;

– тĕрев слайдне хатĕрленĕ тапхăрта анлăлатнă пĕлӳпе вĕренекен ытти предметсене алла илнĕ чухне те, кулленхи пурнăçра та усă курма пултарать;

– вĕренӳре ку мелпе усă курни ачана хăй тĕллĕн аталанма, пĕлӳ шайне ӳстерме пулăшать.

Ĕçĕн пайтине кура тĕпчев, пултарулăх, вăйă, информаци, тишкерӳ тĕрев слайчĕсем пулăшаççĕ.

Чăваш чĕлхи урокĕнче тĕрев слайчĕсемпе ĕçленин чи пахи – ăна чăвашла хӳтĕлени. Тĕрев слайчĕсене хӳтĕленĕ чухне ачасене илемлĕ сăмахсемпе усă курма хăнăхтармалла.

Çак мел чăваш чĕлхи урокĕнче усă курма тухăçлă пулнине тĕрлĕ классенче хатĕрлесе хӳтĕленĕ слайдсем çирĕплетсе параççĕ.

Традициллĕ вĕрентӳре класри пур ача та учитель хушнă ĕçе пурнăçлать пулсан, тĕрев слайчĕсемпе ĕçленĕ чухне кашни ача хăй суйласа илнĕ ĕçе пурнăçлать, вĕренӳ тĕллевне татса пама тăрăшать, кăсăкланса хавхаланать, çĕнĕ пĕлĕве ăса хыватъ.

Çак ĕçе пурнăçламалли мелсенчен пĕри вăл – шырав мелĕ. Унăн çул-йĕрĕ тĕрлĕрен: пĕр-пĕр темăна уçса паракан литературăна шырани, ИКТ мелĕпе усă курни т. ыт. те.

Ку пултарулăх мелĕ ачасене харпăр хăйĕн ӳнер хевтине палăртма хăнахтарать, илем сисĕмтуйăмне ӳстерет, таврари тĕнчене сăнама хĕтĕртет. Ку мелпе усă курса вĕренекенсем курăмлăсăнарлă тата логикăллă шухăшлавĕсене малалла аталантараççĕ, сăмах йышне пуянлатаççĕ, литература нормисене пăхăнса калаçма хăнăхаççĕ.

Çĕнĕ технологисемпе усă курса ирттернĕ уроксем ытти предметсемпе тачă çыхăннă. Вулав, ӳкерӳ тата музыка урокĕсем хушшинчи çыхăну ачасене пур енлĕн аталанма май парать. Çак уроксем чăннипех те вĕрентĕве интереслĕ, тулли, тухăçлă тăваççĕ, ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарма, тавра курăмне ӳстерме, пĕтĕмлетӳсем тума май параççĕ. Ачасем предмета интересленсех вĕренме пуçлаççĕ.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Александрова И.В.* Инновационные технологии. – М.: 2009. – 186 с.
2. *Антипина М.В.* Компьютер на уроке. – М,: 2008. – 155. с.
3. Чăваш чĕлхи методики: Пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. – Шупашкар: Чăваш изд-ви, 2002. – 255 с.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕН ВĂТАЛĂХ КЛАСĔСЕНЧИ ТĂВАН ЧĔЛХЕ УРОКĔСЕНЧЕ ТĔРĔСЛЕВĔН ÇĔНĔ ФОРМИСЕМПЕ УСĂ КУРАССИ

**АРТЕМЬЕВА Тамара Васильевна**
педагогика наукисен кандидачĕ, доцент
**КИРИЛЛОВА Анастасия Юрьевна**
историпе филологи факультетĕнчи 3 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра вăталăх классенче вĕренекенсен пĕлĕвĕсене хакламалли çĕнĕ формăсене çырса кăтартнă. Ку формăсемпе чăваш чĕлхиллĕ шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентнĕ чухне усă курмалли майсене тишкернĕ.*

**Тĕп сăмахсем:** тăван чĕлхене вĕрентесси, тăван чĕлхепе вĕрентмелли шкул, пĕлӳсене хакламалли çĕнĕ формăсем.

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕр пирĕн пурнăça чылай çĕнĕлĕх илсе кĕчĕ. Çак улшăнусем шкула та пырса тивеççĕ. Паян шкулта ачана пĕлӳ пани çеç çителĕксĕр. Ăна хăй тĕллĕн пĕлӳ пухма вĕрентсе пымалла, шухăшлавне йĕркелесе аталантармалла, унпа пурнăçра тĕрĕс усă курма хăнăхтармалла. Ачан кирлĕ информацие шырама, суйлама, унпа пĕлсе усă курма хăнăхса пымалла. Апла пулсан, пĕлӳ тĕнчине илсе кĕнĕ хыççăн унăн малалла хăй тĕллĕн те аталанакан пултаруллă вĕренекен пулмалла. Ачана вĕренме вĕрентмелле, тарăн та çирĕп пĕлӳ пама тăрăшмалла.

Чăваш чĕлхи наци шкулĕсен вăталăх класĕсенче вĕрентӳ, ăс-тăн пару никĕсĕ, унăн тĕп хатĕрĕ шутланать. Пуплевĕн тĕп ĕçĕ-хĕлĕсене аталантарасси те ытларах чăваш чĕлхине вĕрентни çинче никĕсленсе пырать. Çавна кура вăталăх классенче тăван чĕлхене вĕрентес ĕç тĕллевĕсем чылай кăткăс, анлă.

Вĕренӳ тĕллевĕсем ачасем чăваш чĕлхи предмечĕпе мĕн-мĕн пĕлмеллипе (вĕренӳре йĕркеленмелли компетенцисемпе) тачă çыхăннă. Тăван чĕлхене вăтам классенче вĕреннĕ май ачасен хутшăну, чĕлхе тата лингвистика, культуроведени компетенцийĕсене йĕркелесси тĕпре пулмалла. Çак компетенцисем сахал мар ăслай-хăнăху алла илессипе çыхăннă (7).

Çапла вара, хальхи вăхăтра чăваш чĕлхине вăтам классенче вĕрентнин тĕп тĕллевне вĕренӳ программинче ачасен пуплевне якатса пуянлатассипе, вĕсене хăйсен шухăшне çыхăнуллă çырса е сăмах вĕççĕн палăртма хăнăхтарассипе, чĕлхепе усă курса информаци пухма вĕрентессипе, тăван халăхăн пуян историйĕпе, культурипе паллаштарассипе, ăна ăша хывтарассипе çыхăнтарнă. Çак тĕллеве ăнăçлă пурнăçлама тĕрĕслев ĕçне кирлĕ пек йĕркелени те питех те пĕлтерĕшлĕ. Вĕрентекенĕн ачасене пĕлӳ-ăслай пухма çеç пулăшни çителĕксĕр, ăна вăхăтра тĕрĕслесе тăма та пĕлмелле (7).

Тĕрĕслев хăйне евĕр анлă та кăткăс ĕç. Меслетçĕсем тĕрĕслев (контроль, оценивание) термина тĕрлĕрен ăнлантарса панине асăрхама пулать. Акă, тĕслĕхрен, С.И. Ожеговăн словарĕнче «контроль» сăмаха çапла ăнлантарнă: «контроль – это проверка, а также постоянное наблюдение в целях проверки» [5, с. 417]. М.Р. Львовăн терминсен справочникĕнче тĕрĕслев ĕçĕсем çинчен çапла ăнлантарнă: «контрольные работы – средство выявления знаний, умений и навыков учащихся. Проводятся в конце изучения темы, раздела преимущественно в письменной форме, позволяющей одновременно проверить знания всех учащихся класса» [3, с. 163]. Е.В. Телеева меслетçĕ тĕрĕслев ĕçĕн задачине çапла палăртать: «…задача контроля – это педагогически целесообразная организация и направление умственных действий обучаемых в процессе осуществления контрольной процедуры» [6, с. 46].

Ачасен пĕлӳ-хăнăху шайне тĕрĕслемелли мелсем, пĕтĕмĕшле илсен, пур чĕлхе меслетлĕхĕнче те пĕр евĕрлĕ. Çапла вара, çӳлерех илсе кăтартнă шухăшсем пурте чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçре тĕрĕслев ĕçĕсем йĕркеленĕ чух та шута илмелли шухăшсем шутланаççĕ.

Вăталăх классенчи ачасем 11-13 çулсенче пулаççĕ. Психологсем çак ӳсĕмри ачасен кăмăлтуйăмĕ те, пĕвĕ те улшăннине палăртаççĕ. Ачасем хăйсене пысăкрах, аслăрах туйма пуçлаççĕ; вĕсен хăй тĕллĕнлĕхĕ, никама пăхăнманни уççăнрах палăрма пуçлать. Ыттисенчен çирĕпрех ыйтма, вĕсен ĕçĕсенчи кăлтăксене асăрхасси ӳсет (3). Çавăнпа та ку ӳсĕмри ачасене чĕлхене вĕрентнĕ чухне учителĕн ачасен активлăхне ӳстерес, вĕсен калаçăвĕпе çырăвне аталантарас, хăй тĕллĕн ĕçлеме вĕрентес тĕллевпе уроксенче тухăçлă меслетсем суйласа илме тата вĕсемпе пĕлсе усă курма пултармалла. Вăл шутра тĕрĕслев формисем те ачасен ӳсĕм уйрăмлăхĕсене тивĕçтермелле.

Пĕлĕве тĕрĕслени вĕренĕвĕн тĕрлĕ саманчĕсенче (çĕнĕ темăна вĕреннĕ хушăра, тĕрлĕ хăнăхтарусемпе ĕçленĕ чухне, ятарласа тĕрĕслев валли уйăрнă вăхăтра т. ыт. те) пулса пыма пултарать. Учителĕн çак ĕçе тĕрлĕ мелпе усă курса пурнăçлама май пур. Вĕсене икĕ ушкăна уйăрма пулать: йăлана кĕнисем тата пĕлĕве çĕнĕлле тĕрĕслеме май параканнисем.

Йăлана кĕнĕ çыру тĕрĕслев ĕçĕсем шутĕнче ытларах çаксене асăнаççĕ: изложени; диктант; сочинени. Вĕренӳ программинче кусемсĕр пуçне тата çак формăсемпе меслетсене палăртнă: тест; синквейн; кластер; диктант; грамматика вăййи. Юлашки вăхăтра вĕренӳ ĕçне кĕрсе пыракан тĕрĕслевĕн çĕнĕ формисем шутĕнче вара çаксене палертма пулать: программăланă тĕрĕслев; ачасем вĕреннине мĕнле ăса хывнине рейтинг мелĕпе хакласси; тест форми; портфолио мелĕ; рефлекси мелĕ.

Хамăрăн тишкерӳре эпир вăталăх классенче тăван чĕлхене вĕрентнĕ чухне усă курма май пур çĕнĕ тĕрĕслев формисене пăхса тухас терĕмĕр.

Хальхи вăхăтри ачасен пĕлĕвне тĕрĕслемелли системăра программăланă тĕрĕслевпе анлă усă кураççĕ. Ку ĕç форми çакăн евĕр пулса иртет: вĕренекене ыйтусем параççĕ, кашни ыйту патне виçĕ-тăватă хурав сĕнеççĕ, вĕсенчен пĕри тĕрĕсси. Çак ĕç сахал вăхăт хушшинче пулса иртнипе паха шутланать. Ĕçе е хут листи çинче, е компьютерпа усă курсаirttерме пулать. Анчах та çак мелĕн çитменлĕхĕ те пур: унпа усă курса материала пĕлнине пĕр енлĕ çеç тĕрĕслеме пулать, ачан пĕлĕвне пĕтĕмĕшле хаклаймастăн.

Тест – паянхи куна ачан пĕлĕвне хакламалли тăтăшах усă куракан форма. Уйрăмах ĕçе компьютерпа усă курса йĕркелесси анлă сарăлса пырать. Тестсемпе ытларах пĕр-пĕр уйрăм темăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн усă кураççĕ. Форма тăрăх вĕсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: хупписем тата уççисем.

Тест ĕçĕсене хатĕрленĕ чухне ачасен пĕлӳ шайне, вĕсен интересĕсемпе пултарулăхне, уйрăмлăхне шута илмелле. Ачасем теста мĕнле шутласси чылай чухне вĕсен опытĕнчен килет. Пĕр енчен пăхсан тестсемпе усă курни ачасен пĕлĕвне хăвăрт тĕрĕслеме май парать. Тепĕр енчен, тестсенчен ытларахăшĕ содержанипе ытла ансăр. Вĕсем ачасен пĕлӳ-ăслай шайне пĕтĕмĕшле хак пама май памаççĕ. Ачасем тест ыйтăвĕсене чуххăмăн хуравлани те пулкалать. Çаксем йăлтах тест результачĕсен объективлăхне самай чакараççĕ. Çавăнпа та тест формипе ялан усă курни тĕрĕсех мар.

Тĕрĕслев ĕçĕсене çĕнĕлле пурнăçламалли тепĕр форма вăл – ачасем мĕн вĕреннине епле ăса хывнине рейтинг мелĕпе хакласси. Кун пек тĕрĕслевре вĕренекен кашни ĕçе пурнăçланăшăн балл пуçтарать. Хаклакан ĕçĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Калăпăр, урока çӳрени, тетраде йĕркелесе

пыни, урокра ĕçлени, пĕлтерӳ хатĕрлени, класпа пĕрле пурнăçланă тĕпчев ĕçĕ, харкам тĕллĕн пурнăçланă тĕпчев ĕçĕ, тĕрлĕ йышши тĕрĕслев ĕçĕсем, килти ĕçе пурнăçлани, олимпиадăсемпе ăмăртусене хутшăнни. Çавăн пекех ĕçлесе илнĕ балсен шутне чакарма та пултараççĕ. Пĕтĕмĕшле балсен сумми чĕрĕк вĕçĕнче оценкăна куçать. Рейтинг формипе усă курни учительшĕн те усăллă: ачасен пĕлӳ шайĕ ӳссе пырасси, дисциплина лайăхланать, уроксене сиктересси чакать. Çакă вара учителĕн ĕçне çăмăллатать, вĕрентӳ пахалăхне ӳстерет.

Урокра ачасен активлăхне ӳстерме, мĕн вĕреннине çăмăлраххăн ăса вырнаçтарма пулăшакан тепĕр тĕрĕслев форми рефлекси мелĕ шутланать. Рефлекси – «каялла таврăнни» тенине пĕлтерет. Ăна туса ирттернĕ ĕçе пĕтĕмлетни тесе ăнланмалла. Çĕнĕ вĕренӳ стандарчĕ те ачана хăй мĕн пĕлнипе пĕлменнине уйăрма, хушнине тума мĕн чăрмантарнине ăнкарма, çĕнĕ пĕлĕве хăйне туптарма, ĕç çул-йĕрне палăртма хăнăхтарма ыйтать. Урокра рефлексие виçĕ тĕрлĕ йĕркелеме пулать.

Кăмăл-туйăм рефлексийĕ. Уроксенче ку меле тĕрлĕрен йĕркелеме сĕнеççĕ. Калăпăр, урок пуçланиччен учитель доска çине ачасем пĕлекен юрă ячĕсене çырса хурать. Вĕсенчен пĕри хаваслă, тепри – тунсăхлă, виççĕмĕшĕ – шавлă. Ачасем хăйсен кăмăлĕпе килĕшсе тăракан юрă ячĕ патне пĕр-пĕр паллă лартаççĕ. Хăш юрă тĕлĕнче ытларах паллă, учитель çав юрра итлеттерет. Урок вĕçĕнче те çак ĕçех туса ирттереççĕ. Тата ачасене хăйсен кăмăлне сăмахпа çавăн пекех «Хăвна мĕнле туятăн?» евĕр ыйтусене хуравлаттарса та палăрттарма пулать. Кăмăл-туйăм рефлексине ачасен вĕренес кăмăлне урок пуçламăшĕнче, вĕçĕнче е кирек хăш тапхăрĕнче те урокпа кăсăклантарса ярас тĕллевпе ирттермелле.

Вĕренӳ материалĕн рефлекси мелĕсем урокра вĕреннĕ материала мĕнле шайра ăса хывнине тишкерме май параççĕ. Вĕсене урокăн пĕтĕмлетӳ тапхăрĕнче ирттерсен вырăнлă. Вĕсенчен чылайăшне çырса пурнăçламалла. Рефлекси ирттернине ятарласа çырса тумалли тетрадь – «Уроксен çул-йĕр картти» – пулма пултарать.

Ĕç-хĕл рефлексине харкам ĕç-хĕлне пĕтĕмлетес тĕллевпе урокăн тĕрлĕ тапхăрĕнче е урок вĕçĕнче ирттерни вырăнлă. Çакă ачана харпăр хăй мĕнле ĕçленине, урокри харкам çитĕнĕвне, вĕренӳ материалне, ĕç ăслайĕсене тишкерсе пĕтĕмлетме май парать. Урокра вырăнлă та пĕлсе ирттернĕ тишкерӳ-пĕтĕмлетӳ (рефлекси) учителе ачасем сĕннĕ ĕçе епле ăнланса пурнăçланине, вĕсене мĕн чăрмантарнине, çĕннине мĕн чухлĕ илнине, урокра илнĕ информаципе пурнăçра усă курма пултарнине, вĕсем çак тапхăрта мĕн чухлĕ те пулин улшăннине ăнланма пулăшать.

Çапла вара, йăлана кĕнĕ тĕрĕслев мелĕсем пур чухне те учителе ачан пĕлĕвне туллин хаклама май параймаççĕ. Вĕренекен вĕрентӳ процесĕн хăш тапхăрне япăхрах пĕлнине кăтартаймаççĕ. Пĕлĕве тĕрĕсленĕ чух çĕнĕ формăсемпе усă курни чылай чухне пысăк пулăшу парать, чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçе самаях çăмăллатать, çĕнĕлĕх кĕртет.

## УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

1. *Артемьева Т.В.* Чăваш чĕлхине упраса хăварас, лингводидактикине аталантарас ыйтусем тавра (Уçă çыру) // Халăх шкулĕ. – 2016. – № 2. – С. 20–23.

2. *Волкова А.В.* Урокра рефлекси ирттермелли мелсем // Халăх шкулĕ. – 2014. – № 1. – С. 67-69.

3. *Львов М.Р.* Словарь-справочник по методике русского языка: Учеб. пособие для студентов пед. ин-тов по спец. № 2101 «Рус. яз. и лит.». – М.: Просвещение, 1988. – 240 с.

4. *Люблинская А.А.* Детская психология. – М.: Просвещение, 1971. – С. 105-132.

5. *Ожегов С.И., Шведова Н.Ю.* Толковый словарь русского языка. – М.: Азъ, 1994. – 907 с.

6. *Телеева Е.В.* Современные средства оценивания результатов обучения: Учебное пособие. – Шадринск: Изд-во Шадрин. пед. инст-та, 2009. – 116 с.

7. Чăваш чĕлхи программи: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем вали / И.А. Андреев, Г.Н. Семенова, Ю.М. Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство пайĕ, 2013. – 63 с.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕНЧИ ТĂВАН ЧĔЛХЕ УРОКĔСЕНЧЕ ЯПАЛА ЯТНЕ ВĔРЕНТЕССИ

**АРТЕМЬЕВА Тамара Васильевна**
педагогика наукисен кандидачĕ, доцент
**НИКОЛАЕВА Росита Юрьевна**
историпе филологи факультетĕнчи 3 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра чăваш шкулĕсенче япала ячĕсене вĕрентессин шайĕпе çыхăннă хăш-пĕр ыйтусене пăхса тухнă.*

**Тĕп сăмахсем:** чĕлхене вĕрентесси, тăван (вырăс мар) чĕлхеллĕ шкул, япала ячĕ, ăса хывнин шайĕ, вĕрентӳ щайĕ.

Япала ячĕсене чĕлхе наукин морфологи пайĕнче вĕрентеççĕ. Япалана (е япалалăха) пĕлтерекен пуплев пайне япала ячĕ теççĕ.

Морфологи тĕлĕшĕнчен япала ячĕсем ытти сăмахсенче падеж, хисеп, вăхăт, камăнлăх категорийĕсенче пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Ку категорисенчен чи палли – падеж категорийĕ. Синтаксис тĕлĕшĕнчен пăхсан япала ячĕ анлă тата тăтăшах усă куракан пуплев пайĕсенчен пĕри шутланать. Пуплевре вăл предложенин пур членĕ те, ытларах подлежащипе дополнени, пулать. Чăваш чĕлхинче хăш-пĕр япала ячĕсем предложенире пулăшу пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ, урăх япала ячĕ хыççăн тăрса вĕсем вăхăта е вырăна тĕрĕсрех кăтартса параççĕ (1).

Япала ячĕ – пуплевре анлă тата тăтăш усă куракан пуплев пайĕсенчен пĕри шутланать. Япала ячĕсĕр пуплев йĕркеленеймест. Çавна май ачасем япала ячĕсем çинчен тата вĕсен формисемпе пуплевре вырăнлă та тĕрĕс усă курма вĕрентесси питех те пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа хамăрăн тишкерĕве эпир чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче япала ятне вĕрентес ыйтупа çыхăнтартăмăр.

Чăваш шкулĕшĕн чăваш чĕлхи тăван чĕлхе шутланать. Кунта вăл вĕрентӳ предмечĕ кăна мар, вĕрентӳ чĕлхи те. Çавăнпа вĕренӳ программи те самай анлă. Çакă чĕлхен кашни пайне вĕрентес тĕлĕшпе те çапла. Акă Тĕслĕх программăра 6-мĕш класс ачисем япала ячĕпе çыхăннă анлă материал пĕлменнине палăртнă.

Ку вăл япала ячĕн пĕлтерĕшне, морфологи паллисене пĕлессипе; ытти сăмахсемпе е вĕсен ушкăнĕсемпе мĕнле мелсемпе çыхăннине ăнланассипе, çыхăну мелĕсен синонимлăхĕпе усă курма пултарассипе; тухăçлă аффикссем хушса иккĕмĕшле япала ячĕсем тума пĕлессипе; хисеп формисемпе тĕрĕс (пĕлтерĕшне тата мĕнле сăмахсем пăхăнса тăнине кура) усă курма пултарассипе; тулли мар пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсене палласа илме, сăмах хăш текстра тулли пĕлтерĕшлĕ иккенне (кун иртет те, çул иртет), хăшĕнче тулли пĕлтерĕшлĕ маррине (пĕр кун иртрĕ, виç çул иртрĕ) курма, пуплевре тĕрĕс усă курма пултарассипе çыхăннă. Вĕренекенсен чăваш чĕлхинчи япала ячĕ вырăс чĕлхинчипе мĕн енчен пĕрешкел е уйрăм пулнине те ăнланмалла.

Çапла вара халĕ чăваш шкулĕсенче тăван чĕлхене алла илнĕ май япала ятне вĕрентессин ăшлăхĕпе вĕренӳ задачисем самай анлă. Çакă вĕрентекенсен яваплăхне те ӳстерет. Ачасен пĕлӳ, ăслай-хăнăху шайне тарăнлатма, вĕсен пуплевне аталантарма, пуплевне тĕрĕс те сăнарлă тума вĕренӳ ĕçĕнче вырăнлă суйласа илнĕ меслетсемпе мелсене пăхăнса ĕçлени пулăшать. Ачасен пĕлӳ, ăслай-хăнăху шайне пĕлсе тăни вара тухăçлă меслетсем суйласа илме май парать.

Эпир чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасем япала ятне пĕлнин шайне тĕрĕслес тĕллевпе тĕпчев ирттертĕмĕр. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл вăтам шкулĕнче иртрĕ, унта 6-мĕш класра вĕренекен 9 ача хутшăнчĕ. Тĕпчевре çак меслетсемпе усă куртăмăр: сăнав, ачасен ĕçне тишкерни, ятарлă тĕрĕслев ĕçĕ ирттерни. Малтанхи тапхăрта вĕренекенсем пĕр-пĕринпе мĕнлерех хутшăннине, вĕсен пуплевне, ачасем пуплевре япала ячĕн формисемпе тĕрĕс те вырăнлă усă курма пултарнине сăнарăмăр. Япала ячĕсене илес пулсан, вĕренекенсенчен ытларахăшĕ япала ячĕсен формисене тĕрĕс калăпласа вĕсемпе вырăнлă усă кураççĕ. Анчах сăнав ачасем кулленхи хутшăнура хăйсен пуплевне пит сăнаманнине, уяманнине те кăтартрĕ. Вĕсем чăвашла калаçăва кирлĕ мар çĕртех вырăс сăмахĕсемпе çаврăнăшсем кĕртсе яма пултараççĕ, пуплевре лексика тата грамматика диалектизмĕсем тĕл пулаççĕ.

Малалла ачасене «Туслăхпа юлташлăх» изложени çыртарас терĕмĕр. Изложени ачасен пуплев харпăр хăй тĕллĕнлĕхне курма, çыхăнуллă пуплев аталанăвĕн шайне (çыхăнулăхне, пуянлăхне, тĕрĕслĕхне) , вĕсем вăл е ку пуплев пайĕсемпе еплерех усă курнине сăнама та май парать. Ку класра вĕренекенсем çыракан изложени калăпăшĕ вăтамран 130-180 сăмахран пулмалла.

Изложени тексчĕ

Туслăхпа юлташлăх

Мĕн тери хаклă та паха япала иккен çакă аслă çĕр çинче туслăхпа юлташлăх. Аван юлташа ансат шыраса тупаймăн: ăна çул çинче ăнсăртран тĕл пулма, йўнĕ хакпа сутăн илме те çук.

Юлташ вăл – чĕре, чун ăшши, куç шăрçи хĕлхемĕ, икĕ алăн хăвачĕ, шăм-шакăн тĕрекĕ.

Юлташ вăл – татти-сыпписĕр хаваслăхпа хĕпĕртў, ĕçре иксĕлми вăй-хал, ĕçкĕ-çикĕре вĕçĕмсĕр савăнăç паракан çывăх çын.

Юлташ вăл – хăй телейсĕр чухне сана ăраскал параканĕ, чирлĕ чухне сыватса сиплекенĕ, хăрушлăх лекнĕ чухне саншăн хăйĕн пуçне хураканĕ.

Юлташ вăл–нимле тăшман çапса аркатайми чул хўме, никам çĕнтерейми хурçă крепость.

Юлташ вăл – тăшманшăн вилĕм, туссемшĕн пурнăç, тăван халăхшăн мухтав.

Юлташпа калаçса кăмăла уçатăн, чĕрўне лăплантаратăн, ăс-хакăла пуянлататăн.

Епле этем пурăнма пултартăр çывăх юлташ пулмасан çакă тĕнчере?

Кам пултăр çĕр çинче юлташпа тусран хакли, çывăххи?

Çук, пĕр çын та пурăнма пултараймасть çут тĕнчере юлташсемпе тусемсĕр.

Хаклăран та хаклă япала туслăхпа юлташлăх кулленхи пурнăçра, хаклă вăл çул-çўревре, анчах унтанта хаклăрах çапăçу хирĕнче, тăшман вучĕ айĕнче.

Нимрен те çирĕпрех пĕр нушапа-шăпапа, пĕр шухăшпа-ĕмĕтпе тĕвĕленсе çирĕпленнĕ юлташлăх тертлĕ йывăр кунсенче, кашни татăк çăкăра çурмашарăн пайласа çисе пурăннă вăхăтсенче. Ăна пĕр çын та хăй ĕмĕрĕнче нихçан та манма пултараймасть.

(186 сăмах, И. Тукташ çырнинчен)

Изложение икĕ паллăпа хакларăмăр: пĕрремĕш паллă – содержанипе пуплев пахалăхĕшĕн; иккĕмĕшĕ – тĕрĕс çырнăшăн. Икĕ палли те чăваш чĕлхине пĕлнин шайне кăтартать.

Содержани тĕлĕшĕнчен хакланă чухне меслетçĕсем сĕнекен çак критерисене шута илтĕмĕр:

1) çырни темăпа, тĕп шухăшпа килĕшсе тăни;
2) ĕçсене туллин çырса пани, фактсене тĕрĕс çырса кăтартни;
3) стиле яка тытса пынине пыманни;
4) шухăша çыхăнуллăн йĕркелесе çырни.

Пуплев пуянлăхĕпе илемлĕхĕ тĕлĕшĕнчен хакланă чухне çак самантсене шута илĕмĕр:

1) сăмах йышĕ;
2) предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркелени;
3) стиль пĕрлĕхĕпе сăнарлăхĕ;
4) пуплев çитменлĕхĕсем (2).

Хаклавра орфографи, пунктуаци, грамматика йăнăшĕсене шута илтĕмĕр. Хамăр тĕпчевпе килĕшўллĕн, тĕп вырăнта ачасем япала ячĕсемпе епле усă курнине сăнасси пулчĕ.

Ачасен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетў тума пулать. Пĕтĕмĕшле илсен, вĕренекенсем çырса пани темăпа килĕшўллĕ. Ачасенчен ытларахăшĕ тĕп шухăша ăнланса, туллин, пăтраштармасăр çырса кăтартнă, хăшĕ-пĕрин çеç шухăш татăлни тĕл пулать. Сăмах йышĕ нумайăшĕн çителĕклĕ, вĕсем предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркеленĕ, стиль енчен килĕшўллĕ çырнă.

Япала ячĕсемпе мĕнлерех усă курнине илес пулсан, çакна палăртса хăвармалла: пĕтĕмĕшле илсен, вĕренекенсем япала ячĕн формисемпе пĕлсе усă кураççĕ, темиçе ача ĕçĕнче кăна япала ячĕсемпе çыхăннă йăнăшсем (йапала, йулташлăх, анзат, етем, çин) курăнчĕç. Кусем те орфографи йăнăшĕсем. Çапах та ачасен пуплевĕ сăмах йышĕн пуянлăхĕ енчен (вăл шутра япала ячĕсемпе усă курас тĕлĕшĕнчен пăхсан та) çителĕксĕр аталаннине палăртса хăвармалла. Нумайăшĕ тавтологи йăнăшĕсенчен хăтăлайман, кирлĕ çĕрте çывăх пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсемпе усă курайман.

Çапла вара, тĕпчеве хутшăннă вĕренекен ачасем, тĕпрен илсен, япала ятне тĕслĕхлĕ программăра ыйтнă шайра алла илсе пынине палăртмалла. Çапах вĕсен пуплев пуянлăхĕ çителĕксĕр пулнине те асăнса хăвармалла. Уйрăмах кулленхи хутшăнури калаçу чĕлхи чухăн. Паллă ăсчахсем иртнĕ ĕмĕртех сĕннĕ мелсемпе меслетсен пĕлтерĕшĕ паян та чакман. Анчах та

пурнăç çĕнĕлĕхсем ыйтать. Меслетлĕхре те çĕнĕ йышши «утăмсем» кирлĕ, мĕншĕн тесен хальхи вĕренекенсене кăсăклантарма çăмăл мар. Психологи науки пуплев чĕлхепе усă курас ĕç-хĕл пулнă май этемĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕн тĕревĕ пулнине палăртать. Этем калаçасшăн çес калаçмасть, çырасшăн çес çырмасть, вуласшăн çес вуламасть, тăнласшăн çес тăнламасть. Ку ĕç-хĕле вăл пурнăçри вăл е ку ĕç-хĕлпе çыхăнуллăн тăвать. Çавна кура тăван чĕлхене вĕрентессине, пуплеве аталантарассине вĕренекенсен тĕп ĕçĕ-хĕлĕсемпе тачă çыхăнтарсан аван пулмалла.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Андреев И.А., Семенова Г.Н., Виноградов Ю.М.* Чăваш чĕлхи программи: чăв. шк. 5-9 кл. валли. – Шупашкар: Чăв. Респ. вĕренӳ ин-чĕ, 2013. – 63 с.
2. *Брусова Г.Ф.* Чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасене терĕс çырма вĕрентесси // Чăваш чĕлхипе литератури. Теори тата методика: Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1993. – С. 82-90
3. *Виноградов Ю.М., Петрова Л.Г., Майков Е.М.* Шкул ачисен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене хакласси: Чăваш шкулĕн V-XI классенче чăваш чĕлхипе литературине вĕренекенсен пĕлĕвĕпе хăнăхăвне хакламалли виçесем. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕ, 2004. – 30 с.
4. *Обухова Л.Ф.* Возрастная психология: учебник для вузов. – М.: Высшее образование: МГППУ, 2008. – 460 с.

# ПЕТĔР ХУСАНКАЙ СĂВВИСЕНЧИ ÇУНАТЛĂ СĂМАХСЕМ

**АРХИПОВА Мария Ильинична**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
Шупашкарти «10-мĕш ВШ» МБВУ
**МИХАЙЛОВА Клара Никоновна**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
Шупашкарти «2-мĕш лицей» МБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн сăввисенчи вуншар йĕрке халăхра çунатлă сăмахсем пулса анлă сарăлчĕ. Вĕсемпе вĕрентӳре анлă усă курма пулать. Кунта çав йĕркесенчен хăшне-пĕрне сĕннĕ.*

**Тĕп сăмахсем:** мероприяти, поэзи, хайлав, вĕрентӳпе воспитани, халăх пуянлăхĕ.

Икĕ пин те вунçиччĕмĕш çулхи çулхи кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕнче Тĕнче литературинче сумлă ят хăварнă, Чăваш Республикин халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай çуралнăранпа çĕр вунă çул çитрĕ. Çак çавра юбилей ячĕпе унăн пултарулăхне сума сăвакансем тĕрлĕ мероприяти туса ирттерчĕç.

Чăвашсен паллă çыравçи Стихван Шавли Хусанкай пултарулăхне хакласа çапла каланă: «Иванов, Çеçпĕл, Хусанкай – тăван поэзири чи çутă ятсем. Халь пурăнакан поэтсем пурте вĕсен орбити тавра çаврăнаççĕ-ха». Халăх сăвăçин чăваш литературинче тĕрлĕ çулти вулакана тивĕçтерекен хайлав нумай. Унăн «Сăпка юррине» чăваш ачисем мĕн пĕчĕкренех илтсе ӳсеççĕ, хăш-пĕр сăввисен сыпăкĕсене ача сачĕсенчех пăхмасăр вĕренеççĕ.

Пуянлăхпа çеç пурнас пур – ан та çыр,
Суха та ан ту, ан çĕкле мăлатук.

Пурнас тен пулсан – çĕр çинче çанă тавăр!

Пĕр элекçе те ал ан тăс, юлташ!
Ирĕк ĕçӳшĕн ударлă тăр!

Кулă та шӳт – çын хастарĕ,
Ĕç хăвăртрах юртать.

Ĕç пултăр тирпейлĕ, таса та илемлĕ.

Ан кулайтăрччĕ курайман тăшман…

Пул хăюллă, тӳрĕ чунлă!

Ĕненĕр: хам юлташсене
Тыттармăп эпĕ нихăçан…

Этемĕн пултăр йăлт илемлĕ, – …
Сăн-пичĕ, тумĕ, ĕмĕтленнĕ
Ĕмĕчĕсем те, чунĕ те…

Эс тăрăш хăвăн халăхушăн,
Ун ăраскалĕшĕн эс çун!

Вилмешкĕн эпĕ хăрамастăп,

Хам халӑхшӑн вилни – телей…
Эс, чӑваш, пӑхма йӑваш та
Тӑшманпа тӗлех пулсан
Эс пултарӑн-ха, чӑваш!

Атӑл – халӑх пархатарӗ,
Атӑл – пирӗн ӑраскал!
Хӑш ҫӗршыв сана мантарӗ?
Ҫук санран писмешкӗн хал.

Эпир – чӑваш интеллигенцин
Пӗрремӗш сийӗ, пирӗнпе
Пур халӑх – ҫав энциклопедин
Чӑн авторӗ пуль тетӗп эп.

Мӑшӑрлӑх илес пулать
Ҫамрӑкрах пике,
Кӳршӗрен ӑна суйла!

Сыхлан. Ан сӑхтарах мӗнпур
Аташнӑ, суккӑр сӑпсана.

Аслӑ туслӑхӑмӑра
Тӗрӗслер вутпа.
Ҫунас ҫук вӑл ҫулӑмра –
 Чи таса тупа.
Хытарӑпӑр хӑюллӑн
Чуна та чӗрене.
Хӗҫ пултӑр ӑшри ҫулӑм,
Ҫӗнмешкӗн вӗренер.

Хамӑр ҫӗршӗн, ҫӗнтерӳшӗн,
Чи таса тӑванлӑхшӑн
Пӗрле вӑрҫӑн. Пӗрле тӳсӗн,
Вилӗн те кирлех пулсан.

Чӗлхе тени вӗт пирӗн –
Услам ҫу.

Ҫынна никам та йытӑ пек
Юратаймасть ҫак ҫӗршывра.

Пӗр пурнӑҫ хаклӑ ҫӗр ҫинче…

Лашу ӳксессӗн ҫуран ут,
Калла чакма ан асӑнӑр.

Эп – пултарулӑхпа илем,
Аслӑлӑхпа чӑнлӑх этемӗ.

Эпир начар та халӑх мар-ҫке…

Хӑй чура пулса курнӑ этем
Нихӑҫан чура тумӗ ҫынна.

Ман ҫӗршывӑн ӳсӗмӗ –
Пур патшалӑх тӳсӗмӗ.

Тӗнчешӗн эп нимех те мар та,
Ман ӗҫӗм кирлӗ халӑха.

Йӑваш кӑмӑллисем телейлӗ…

Кам ӗмӗтпе таса, чипер –
Ӑна ытти те – пыл та ҫу-мӗн.

Мана та шел вӗт, сӑввӑма
Пӑнчӑпала пӑнчӑхлантарсассӑн.
Ҫампа пурне те калама
Пултараймасть хӑш чух ман сассӑм.

Хӗрарӑм – чи хӑрушӑ чун:
Унпа та, унсӑр та пурнаймӑн.

Пурнас тесен – кӗрешӗр, тӳсӗр.

Халӑх ҫӑварӗ – хапха,
Тӗрлӗрен кӑларать
Хӑлха илтнӗ сӑмаха.

Чӑваша чӑвашлах лайӑх-ҫке сӑйланмашкӑн…

Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр…

Чӑвашпа пӗрле хӗпӗртетӗп,
Хуйхӑрсан та чӑвашпа пӗрле.

Чунпа ӳт нихҫан та
Пурӑнаймӗҫ уйрӑм…

Вилсессӗн те – ху юратмасӑр
Ҫынна ан чуптутар хӑвна!

Манӑн  ҫӑлтӑр тӳпере!..

Кирек кам та хӑй ачишӗн ҫунӗ –
Хӑть вӑл ырӑ пултӑр, хӑть начар.

Чӑвашпа пӗрле эп хӗпӗртӗп,
Хурлансан та – чӑвашпа пӗрле.
Пур вӑя та этем пӑхӑнтарӗ,
Пур хӑватӑн та пулӗ чикки.

Шуррине хурисӗр курма ҫук-тӑр
Пылакки йӳҫҫисӗр ҫук, пӗлеп.

Ман юман пулса кашламалла!..

Тӑван чӗлхемӗрех илемлетесчӗ,
Ӑна вӗрсе кӗртесчӗ чӗрӗ чун.

Ман чунӑн тӳрӗ кӗпҫине
Аваймӗ ҫуклӑх, сум хисепӗ.

Сӑвӑҫ пулас тесен –ан ҫывӑр,
Апат ан ҫи, анчах – ӗҫле!
Ҫын йывӑрлӑхне чӗрӳ патне йышӑн,
Ҫӑкӑр вырӑнне чул парса ан ултала –
Эп пӗлетӗп: халь сывлӑш та класлӑ.

Эп ҫӗр ҫул пурӑнмашкӑн та хатӗр –
Ӗҫлесе, кӗрешсе, юратса.

Вучах мӗнне пӗлетӗп эп,
Пӗлеп хура ҫӑкӑр хакне.

Ҫыратӑп суясӑр, савса, хал парса.

Санран пӗр ҫын кӑна туса
Кӑшт йӑнӑшнӑ-мӗн ҫутҫанталӑк.
Ӗҫлетӗп чапшӑн – сумшӑн мар.

Чĕлхемĕрте пур пултару,
Эпир пулмах, пулмах çуралнă!

Эп саманан ал тымарне сăнларăм,
Хам пултăм унăн харсăр чĕри пек.

Ача-пăча – атте-анне сасси,
Ача-пăча вăл – халăх пуласси.

Вăйли нихçан та кĕвĕçмест
Кашни ман сăввăм – юлашки пекех.

Ăçта пулсан та эп –
Çĕршыв манпа пĕрле.

Юман аттем! Эп санăн йĕкелӳ.
Эп пурнăçран кĕтместĕп канăç

Эпир – шкул ĕçченĕсем – вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче Петĕр Хусанкай каланисемпе тăтăшах усă куратпăр. Вĕсенче халăхăн ăс-тăнĕ, пуянлăхĕ, пуласлăхĕ.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Хусанкай П.П.* Çырнисен пуххи. 1-6 томсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-стви, 1997 – 2006.

# КОНСТАНТИН ИВАНОВ ЭТЕРЛĔХĔ – ХУЛА ШКУЛĔНЧЕ

**АРХИПОВА Мария Ильинична**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
**ЯКОВЛЕВА Ольга Николаевна**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
Шупашкарти «10-мĕш ВШ» МБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Авторсем К.В. Иванов пултарулăхне хула ачисене хăйсем вĕрентнин опытне çырса кăтартаççĕ. Вĕсен опычĕпе паллашни ытти вĕрентекенсене те усăллă пулма пултарать.*

**Тĕп сăмахсем:** К.В. Иванов поэзийĕ, эткерлĕх, вилĕмсĕр сăвăç, халăх поэчĕ.

Икĕ пин те вунпиллĕкмĕш çул Литература çулталăкĕ пулчĕ. Пирĕн аслă поэтăмăр Константин Васильевич Иванов 125 çул тултарнине пĕтĕм тĕнче паллă турĕ. Вăл 1890-мĕш çулта Пушкăрт республикин Слакпуç ялĕнче кун çути курнă. Çав çул пĕтĕм тĕнче Константин Иванов çулталăкне палăртрĕ. Константин Васильевич мĕн пĕчĕкрен пурне те пĕлме-ăнланма тăрăшнă, вырăс литературин классикĕсен: Пушкинăн, Лермонтовăн, Кольцовăн, Некрасовăн, Тургеневăн, Толстойăн тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене юратса вуланă, чăваш писателĕсен ал çырăвĕсемпе паллашнă. Çакă пĕтĕмпех Ивановăн кăмăлне çĕклентерсе янă, чăваш чĕлхин пуянлăхне, хăйĕн пултарулăхĕн вăйне тарăнрах туйса илме пулăшнă.

К.В. Иванов – аслă та вăйлă талант. Вăл вырăс çыравçисен произведенийĕсене çав тери хитре, пурне те килĕшӳллĕ куçарнă, хăй те илемлĕ хайлавсем çырнă. Унăн çырас, ĕçлес кăмăлĕ иксĕлми çăлкуç пек тапса тăнă, вăл хăйĕн тăван халăхне чĕререн юратнă, уншăн çунса ĕçленĕ, пусмăрлă-асаплă вăхăтра хăйĕн ĕмĕр манми поэмине çырса хăварнă.

«Нарспи» поэма – Константин Иванов пултарулăхĕн чи çӳллĕ шайне кăтартакан произведени. Ку поэма вулакансен чĕринчен тухма пĕлмест. Мĕншĕн-ха? Мĕншĕн тесен «Нарспи» – этемĕн ырă шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене хускатакан, чăннипех те ырра вĕрентекен чаплă произведени; вăл – çуркунне юрри, çурхи хĕвел ăшши, ешĕл вăрман, йывăççсен, чечексен шăрши, çурхи вĕçен кайăксен юрри; вăл – шыв-шурăн кĕмĕл шăнкăравлă сасси… Пуринчен те ытла тĕлĕнтерекенни вара – поэмăна вунçиччĕри-вунсаккăрти яш каччă çырни. Вăл, çамрăк пулин те, самана йĕркисене ăнланнă, мул тĕнчине парăннă çемьесене витĕр пĕлнĕ. «Нарспи» поэмăна Константин Иванов чунчĕре хистенипе, талант вăйĕпе çырнă. Унăн кашни йĕрки пирĕн чуна тыткăнлать.

Ĕмĕр ытла иртнĕ унтанпа. Апла пулин те, унăн содеожанийĕ, темипе идейи паянхи куна та хăйсен илĕртӳлĕхне çухатман. Çухатман кăна мар, «Нарспи» поэма малтанхи пекех илемлĕн янăрать, паянхи кун та актуаллă: хăй тавра пуçтарать, хавхалантарать, поэмăра çырса кăтартнă ĕç-пуç çинчен калаçтарать, тавлаштарать.

Мĕн пулăшнă-ха Константин Иванова çакăн пек паха хайлав шăрçалама. Пирĕн шутпа, чи малтанах – «Турă пани – талант», анчах вырăссен каларăшне кăштах урăхлатса: «Ах если бы к таланту прибавить трудолюбие, а к трудолюбию талант», – тенĕ пек, «Турă пани» – тăрăшмасан е пулăшакан пулмасан сая кайма пултарать. К.В.Иванов шăпинче вара çак çӳлерех асăннă пулăмсем пурте – турă пани, пулăшакансем, тăрăшни – пĕрле пĕтĕçсе тĕнчене чаплă поэт парнеленĕ.

Пуринчен ытла «Нарспире» палăрнă Иванов генийĕ чăваш культурин шăпине Яковлев пекех, анчах хăйне майлă, хăй вăхăтĕнче, пĕтĕм малашлăхшăн татса панă, теме пултаратпăр эпир… Виçĕ пин йĕрке сăвăра ĕлĕкхи чăваш пурнăçĕн пĕтĕм энциклопедийĕ курăнать. Гоголь, Пушкин çинчен каланă пек ку, чăнах та, аравасăр, нимĕнле калăпа шăнăçайми япала, – тенĕ чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай.

Çут çанталăк пекех, сăвăçăмăр вилĕмсĕр! Çакă чăваш поэзийĕ кунран-кун вăй илсе пынинче курăнать. Константин Иванов пултарулăхĕ каярахри ăрури çыравçăсене те паха произведенисем хайлама хавхалантарнă. Çавăнпа та К. Иванов поэзийĕ паян кун та пирĕншĕн ытарайми тĕслĕх. Пирĕн шкулта та илемлĕ хайлав çыракансем ачасем хушшинче те, вĕрентекенсем хушшинче те чылай.

К.В. Иванов – чăвашсен пĕрремĕш фотохудожникĕ, пултаруллă ал ăсти. И.Т. Трофимов ун çинчен çапла аса илет: «Вăл картинăсем ӳкерме юрататчĕ, унăн ӳкерчĕкĕсем çине пăхсан вĕсене вун виçĕ çулхи ача ӳкернĕ теме çукчĕ». Эпир те çулсеренех юбилярсен пултарулăхĕ тăрăх ӳкерчĕксен конкурсне ирттеретпĕр.

Çыннăн талант пулсан, ăна пулăшса пырсан, хăй тăрăшсан кашниех пурнăçра çитĕнӳсем тума пултарать. К.В. Иванова пирĕн аслă вĕрентекенĕмĕр И.Я. Яковлев пулăшса пынă. Вăл йĕркелесе янă Чĕмпĕр шкулĕ чăн-чăн талантсене туптаса кăларакан шкул пулса тăнă. Хальхи хула шкулĕнчен чăвашла калаçакан, сăвă-юрă çыракан, Чăваш çĕр-шывĕн илемне ӳкерсе кăтартакан ачасем вĕрентсе кăларма пултарсан вара пирĕн ĕç сая кайманни курăнать.

Хула шкулĕнче эпир К.В. Иванов пултарулăхĕпе паллашатпăр, унăн «Нарспи» сыпăкĕпе пĕрремĕш урока пуçлатпăр. Сăвă ярăмĕпе чăваш чĕлхин çепĕçлĕхне, илемлĕхне кăтартма тăрăшатпăр. Малалла вĕренсе пынă май «Çулталăк вăхăчĕсем» сăвă ярăмĕсемпе паллашатпăр. Вĕсем тăрăх калаçу ирттерсе хамăр таврари çут çанталăк çине поэт куçĕпе пăхатпăр, вăл курнă илеме курма тăрăшатпăр, сăвва пăхмасăр калама вĕренетпĕр. Тăваттăмĕш класра вара К.В. Ивановăн пурнăçĕпе пултарулăхне тĕплĕнрех пăхса тухатпăр: «Нарспи» поэма сыпăкĕпе паллашатпăр, пăхмасăр калама вĕренетпĕр, унăн содержанийĕ тăрăх хатĕрленĕ ӳкерчĕксен курăмне йĕркелетпĕр. Аслăрах классенчи ачасемпе К.В. Иванов пултарулăхĕпе паллашнă хыççăн урокра сăвă çыратпăр. Еплерех пулса иртет–ха çак ĕç? Доска çине сăввăн пĕрремĕш йĕркине çырса хуратпăр. Рифма, ритм терминсене вырăс литератури урокĕнче вĕренни çине таянса аса илтеретпĕр. Ун хыççăн ачасем сĕнекен йĕркене хушатпăр. Çапла пĕрле ĕçлесе класра пĕр çаврăм сăвă калăплатпăр. Килте ачасем çак сăвва малалла тăсаççĕ е пачах урăх сăвă хайлаççĕ. Паллах, пурин те чăвашла сăвă пулмасть, нумайăшĕ вырăсла та çыраймасть. Апла пулин те, çакăн йышши ĕçсем туса ирттерни пултаруллă ачасене тупса палăртма, вĕсене малалла аталантарма май парать.

Аслăрах класри ачасемпе вара урокра çеç ĕçлени сахал тесе шутлатпăр. Çакна шута илсе, эпир вĕренекенсене тĕрлĕ шайра иртекен класс тулашĕнчи мероприятисене явăçтарма тăрăшатпăр. Хамăр шкулти чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсен тата вĕренекенсен вăйĕпе темиçе çул хушши ĕнтĕ Чăваш чĕлхи кунне халалласа «Янра, чăваш юрри!» концерт ирттеретпĕр. Ку концерта пĕрремĕш класран пуçласа вунпĕрмĕш класс таранах хаваспах хутшăнаççĕ. Çак уява ирттерсе эпир талантлă ачасене тупса палăртатпăр. Вĕсене вĕрентсе пулăшса пыратпăр. Пирĕн шкулти ачасем хулара иртекен пултарулăх конкурсĕсенче час-часах малти вырăнсене йышăнаççĕ.

К.В. Иванов эткерлĕхне упрасси вĕрентекенсенчен нумай килет. Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕн ячĕ ĕмĕрсем урлă çутатасса шанса вĕрентӳ ĕçĕнче вăй хуратпăр. Эпир ачасенче чăвашлăх туйăмне аталантарас, тăван атте – аннене юратма, хисеплеме хистесе ӳстерес тесе тăрăшатпăр.

К. Иванов – халăх поэчĕ, мĕншĕн тесен вăл халăхăн çутă шухăш-ĕмĕчĕсемпе пурăннă. Уншăн таса кăмăлпа ĕçленĕ, çавăнпа унăн пултарулăхĕ чăваш халăхĕшĕн кăна мар, тĕнчери ытти тăванла халăхсемшĕн çывăх пулса тăнă. Унăн ячĕ чăваш литератури ӳсĕмĕнче чăн-чăннипех çутă шурăмпуç çăлтăрĕ пек çиçсе тăрать, – тенĕ М. Сироткин, филологи наукисен докторĕ.

Константин Иванов – чăваш халăхĕн мăнаçлăхĕпе мухтавĕ, çĕнĕ çырулăхĕпе илемлĕ сăмахлăхне никĕслекенĕ. Хамăр шухăша çак сăвă йĕркисемпе вĕçлес килет:

Тутар та, вырăс та, пăлхар та –
Паян сана тĕнче пĕлет,
Ĕмĕрӳ пулайрĕ вăрăм мар та –
Яту сан вилĕмсĕр, поэт!

*Геннадий Айхи*

# ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕНЧЕ ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕНЧЕ СИНТАКСИСА ВĔРЕНТНĔ МАЙ ТЕРМИНСЕМПЕ ĔҪЛЕССИ

**БРУСОВА Галина Федоровна**
педагогика наукисен кандидачĕ, чăваш чĕлхипе литература кафедри доценчĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
**ВЛАСОВА Татьяна Александровна**
директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумĕ
Шупашарти «55-мĕш ВШ» МБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра тăван чĕлхеллĕ шкулсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче синтаксиса вĕрентнĕ чухне терминсемпе ĕҫлессин уйрăмлăхĕсене ҫырса кăтартнă. Ку ыйтăва татса памалли майсене ҫутатнă. Авторсен шухăшĕсем терминологин практика тата теори ыйтăвĕсемпе кăсăкланакансемшĕн усăллă пулма кирлĕ.*

**Тĕп сăмахсем:** термин, сăмах, сăмах майлашăвĕ, содержани, пулу мелĕ.

Пĕлӳлĕх тĕнчине кĕме, унта харпăр хăйне ҫирĕп туйма ачана тăван чĕлхе пулăшать. Ача тăван чĕлхе пулăшнипе ҫĕнĕ ăнлавсене ăса хывать, шухăшлама, хăйĕн шухăшĕсене уҫса пама хăнăхать. Унăн ăс-тăн ӳсĕмĕ ытларах тăван пуплев пулăшăвĕпе пулса пырать. Вĕренӳре кирлĕрен те кирлĕ ăслайсемпе хăнăхусене аталантарса ҫирĕплетесси те тӳрремĕнех тăван чĕлхене алла илессипе ҫыхăнать. Чĕлхене вĕрентес ыйту самай пысăк та анлă. Ҫавăн пекех тăван чĕлхене вĕрентес уҫлăхра учителĕн ачасене ятарлă ăнлавсене, терминсене вĕрентес, вĕсемпе пĕлсе те тĕрĕс усă курма хăнăхтарас ыйтăва та пурнăҫласа пыма тивет.

Паллă чĕлхеҫĕ, лингводидакт М.Р. Львов ăнлава ҫапла палăртать: «Понятие – это форма мышления, отражающая существенные свойства и связи явлений, это единица мышления [2, с. 3]. Ытти наукăри пекех, меслетлĕхре те ăнлавсем пĕр вăхăтрах ăслăлăхăн аталану никĕсĕ те, унăн шайĕн кăтартăвĕ те пулса тăраҫҫĕ. Ăнлавпа тепĕр пулăм – термин – тачă ҫыхăннă. Ун урлă эпир вăл е ку ăнлава тĕрĕс кăтартма пултаратпăр. Чăваш чĕлхине VIII-IX классенче вĕрентнĕ чух унта тĕл пулакан синтаксис терминĕсен пĕлтерĕшне уҫса парас ыйту шкул ĕҫĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче лингвистика терминĕсене вĕренни – ачасен теори пĕлĕвне те, шухăшлавне те, пĕтĕмлеӳсем тăвас пултарулăха та ҫӳллĕ шая ҫĕклеме май парать, ачасен орфографи пĕлӳлĕхне ӳстерме, тĕрĕс вулама, тĕрлĕ стильпе ҫырнă хайлавсене тĕплĕн тишкерме май паракан чи пĕлтерĕшлĕ условисенчен пĕри. Уроксенче терминсемпе ĕҫлесси теплерен хăй пĕччен пулса иртекен, ыттисемпе ҫыхăнса тăман ĕҫ пулмалла мар: системăллă йĕркеленсе пымалла, ҫавăнпа та кашни урокрах терминсемпе ĕҫлесси пулса пымалла, вĕсене ăнланса илме май паракан хăнăхтару ĕҫĕсене тумалла. Ҫав вăхăтрах вĕрентекенĕн универсаллă вĕренӳ хатĕрĕсене анлăлатакан меслетсемпе тата мелсемпе тухăҫлă усă курма пĕлмелле.

Чăваш сăмахĕсен мĕнпур йышĕнче ҫынсен уйрăм ушкăнĕнче ҫеҫ усă куракан сăмахсем те пур. Чĕлхе наукинче ун пек сăмахсен йышне ятарлă лексика теҫҫĕ.

Ятарлă лексика шутне тĕрлĕ наука терминĕсем тата профессионализмсем кĕреҫҫĕ. Ятарлă сăмахсем халăхăн пĕчĕкрех ушкăнĕнче усă куракан, сайра калакан сăмахсем пулса тăраҫҫĕ.

Термин тесе тĕрлĕ наукăра, техникăра тата искусствăра усă куракан ятарлă сăмахсене калаҫҫĕ. Вĕсем наукăпа техникăри, искусствăри тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене тата ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем шутланаҫҫĕ, ҫавăнпа та наука, искусство, техника ыйтăвĕсемпе ҫырнă кĕнекесенче, тĕрлĕ учебниксенче ытларах тĕл пулаҫҫĕ.

Терминсем, тĕпрен илсен, пĕр пĕлтерĕшлĕ. Анчах та хăш-пĕр наука терминĕ икĕ е виҫĕ пĕлтерĕшлĕ те пулма пултарать. Тĕслĕхрен, чĕлхе наукинчи хăш-пĕр терминсем яланах икĕ пĕлтерĕшлине асăнмалла: фразеологи – 1) чĕлхе наукин хытса ларнă сăмах ҫаврăнăшĕсем ҫинчен вĕрентекен пайĕ; 2) чĕлхери мĕнпур сăмах ҫаврăнăшĕсен йышĕ [3, с. 75].

Пирĕн ĕҫре сăмах синтаксис терминĕсем ҫинчен пырать.

Чăваш синтаксисне ҫутатакан чăвашла ҫырнă ĕҫсен хисепĕ йышлă мар, пурте тенĕ пекех вĕсем вăтам тата аслă шкул валли ҫырнă пособисем шутланаҫҫĕ. Ҫавна пула вĕсен содержанийĕ те,

тӗпрен илсен, ҫирӗплетнӗ программӑсенчен тухса тӑрать: пособисем программӑра палӑртнӑ ыйтусене хускатаҫҫӗ. Кашни урока тӗп терминсен определенийӗсенчен пуҫлани (практика урокӗ пулсан та) тӗрӗс ӗҫ теме пулать, мӗншӗн тесен ачасем иртнӗ урокра вӗреннӗ тӗп ӑнлавсене аса илмесӗр практика ӗҫне нумай чухне тӗплӗн пурнӑҫлаймаҫҫӗ. Терминологине аса илес ӗҫе вӗрентекен ун валли вӑхӑт ытла нумай уйӑрмасассӑн та ӑна вӑл тӗрлӗрен йӗркелеме пултарать.

Терминсен пӗлтерӗшне уҫса парас ӗҫре хӑш-пӗр чух вӗрентекенӗн терминӑн историйӗпе те паллаштарма тивет. Ӑна уйрӑмах термин эквивалентлӑ пулнӑ чух туса пымалла. Тӗслӗхрен: чӗнӳ «обращени», кӳртӗм сӑмахсем «вводные слова» т. ыт. те. Термин икӗ вариантлӑ пулнине ачасене каласа хӑвармаллах. Ҫакӑ тепӗр чух, кирлӗ самантра, иккӗленӳллӗ шухӑшсенчен хӑтарать, кун пек каласан та, ун пек каласан та пӗр ӑнлавпах ҫыхӑнни ачашӑн уҫӑмланать. Ҫавӑн пекех ачасене шырав-тӗпчев ӗҫне явӑҫтарса кӗртсе яма та май парать. Тӗслӗхрен: Ҫак термин мӗншӗн икӗ вариантпа ҫӳрет-ши? Мӗнпе ҫыхӑннӑ? Ҫакна мӗнле майпа ӑнлантарса пама пулать? Ӑна пӗлес тесен пирӗн мӗнле материалсемпе паллашма тивет? Ачасене ҫапла майпа чӗлхе истоийӗ патне илсе тухма пулать.Ун пек чух терминсене те ачасем лайӑхрах ас туса юлаҫҫӗ, унӑн пӗлтерӗшне те тарӑнрах ӑса хываҫҫӗ.

Чӗлхе ыйтӑвӗсемпе чӑвашла ҫырма пуҫлаканӗ Тимухха Хӗветӗрӗ пулнӑ. 1924 ҫулта вӑл «Чӑваш чӗлхи грамматики. Синтаксис тӗсӗсем» ятпа пӗчӗк кӗнеке кӑларать. Синтаксис ӑнлавӗсен хӑш-пӗр чӑвашла ячӗсем шӑпах ҫакӑнта кун кураҫҫӗ. 1928 ҫулта Шупашкарта унӑн «Чӑваш чӗлхин грамматики» ятлӑ ӗҫӗ иккӗмӗш хут пичетленсе тухать. Кунта предложени мӗн иккенне ӑнлантарни, ӑна каланин тӗллевӗ тӑрӑх ушкӑнлани, тытӑмне членсем ҫине пайласа пӑхни пур. Усӑ куракан ӑнлавсене автор кашнинех тивӗҫлӗ сӑмахсемпе палӑртать. Синтаксис термина вырӑсларан ҫав хальлӗнех йышӑнать, ӑна валли чӑвашла эквивалент шырамасть (грамматика, морфологи, фонетика, интонаци терминсем те вырӑсли майлах юлнӑ).

30-мӗш ҫулсен вӗҫнелле, чӑваш терминологине вырӑслатас туртӑм вӑй илнӗ, синтаксисра унччен усӑ курнӑ терминсем те чылайӑшӗ вырӑслисемпе ылмашӑннӑ. С.П. Горский хатӗрленӗ шкул учебникӗ (пӗрремӗш хут вӑл 1939 ҫулта тухать), Т.М. Матвеевпа Ф.Т. Тимофеев терминӗсене пӑрахӑҫласа, предложени, подлежащи, сказуемӑй, управлени, согласовани, примыкани, обращени, вводнӑй сӑмах тата ытти ҫавӑн евӗр терминсем ҫине куҫать. Унччченхи хӑш-пӗр терминсене улӑштарасси предложени тытӑмӗнчи пулӑмсене урӑхларах ӑнлантарассинчен те килнӗ.

С.П. Горский учебникӗсенче (вӑл 1979 ҫулччченех тухса тӑнӑ) ҫирӗпленнӗ терминсенчен ҫаксене палӑртса хӑвармалла: сыпӑнуллӑ ҫыхӑну, пӑхӑнуллӑ ҫыхӑну (пирвайхи шкул учебникӗсенче ку ӑнлавсем шайлашӑнса ҫитеймен), сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени (унччен юнашарлӑ хутлӑ пуплев пулнӑ), пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени (унччен ҫумлӑ хутлӑ пуплев пулнӑ), пӑхӑнуллӑ предложени (унччен ҫум пуплев), урӑх ҫын сӑмахлӑ предложени (унччен ют сӑмахлӑ пуплев), урӑх ҫын сӑмахӗсем (унччен ют сӑмах), пайӑр ят (унччен пайӑр сӑмах) т.ыт.те.

Ҫур ӗмӗр хушши аталаннӑ синтаксис терминӗсенче тӗрлӗ сийсем, тӗрлӗ тапхӑрти туртӑмсен йӗрӗсем палӑраҫҫӗ. Ку терминсем хушшинче ӑнӑҫлисем те, ӑнӑҫсӑртараххисем те, системӑра хӑйсене тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнса ыттисемпе килӗшӳллӗн шайлашса пыраканнисем те, шайлашсах ҫитейменнисем те, содержанийӗпе уҫӑмлисем те, уҫӑмсӑртараххисем те – пурте пур. Малтанхи тапхӑрта термин ӗҫӗнче тӑван чӗлхе мелӗсем ҫине ытларах тайӑнма тӑрӑшнӑ пулсан, 30-мӗш ҫулсен вӗҫӗнчен пуҫласа терминсене вырӑсларан йышӑнас туртӑм вӑйланать. Хальхи вӑхӑтра вара интернационаллӑ терминсен хисепӗ ӳссе пырать (тема, рема, дирема, монорема, паратаксис, гипотаксис т. ыт. те).

Хальхи вӑхатра VIII-IX классен вӗренӳ кӗнекисене кӗртнӗ терминсен хӑш-пӗр тӗслӗхӗсем:

**Синтаксис** «синтаксис». Чӗлхе наукин пуплев епле йӗркеленни ҫинчен вӗрентекен наука пайӗ. Сӑмахсем пуплевре мӗнле формӑллӑ пуласси вӗсен лексикӑпа грамматика пӗлтерӗшӗсенчен те, хӑш сӑмахпа ҫыхӑннинчен те, ытти сӑлтавсенчен те килме пултарать. Ҫаксене пурне те синтаксис тӗпчет [1, с. 17].

**Пунктуаци** «пунктуация». Ҫырура чарӑну паллисем лартмалли йӗрке. Пунктуацин тӗп тӗллевӗ – текста ӑнланмалла тӑвасси.

**Предложени** «предложение». Уйрӑм шухӑша палӑртакан, пӗр сӑмах е сӑмахсен пӗрлешӗвӗ. Тытӑмӗ предложенисен расна пулма пултарать – тӗп членсемлӗ те, вӗсемсӗр те, пӗр сӑмахлӑ та, темиҫе сӑмахлӑ та.

**Чӗнӳ** «обращение». Кама е мӗне чӗнсе каланине пӗлтерекен сӑмах. Вӗсем нимӗнле члена та пӑхӑнмаҫҫӗ, нимӗнле ыйту ҫине те ответлемеҫҫӗ, ҫавӑнпа предложени членӗ те пулмаҫҫӗ [1, с. 94].

**Кўртĕм сăмахсем** «вводные слова». Калаканĕ хăйĕн шухăшне мĕнле хакланине (ҫирĕплетнине, иккĕленнине, кăмăлланине т. ыт. те) палăртакан сăмахсем [1, с. 99]

**Определени** «определение». Япала ятне ăнлантаракан кĕҫĕн член. Определени япалан тĕрлĕ паллине кăтартма пултарать: мĕнрен тунине (чул ҫурт), япала камăннине е мĕнĕннине (атте сăмахĕ), вăхăта (ҫурхи кун), вырăна (хирти тырă), хисепе (вăтăр ача) тата ыт. те. Хăй ăнлантаракан сăмахпа определени вырăнĕ-йĕркипе те, аффикссемпе те, хыҫсăмахсемпе те ҫыхăнать [1, с. 61] т. ыт. те.

Чăваш чĕлхи учителĕн VIII-IX классенче 65-70 термин ҫинче чарăнма тивет. Хăш-пĕрисемпе ачасен маларах та паллашма тўр килнĕ. Тĕслĕхрен: **предложени** «предложение», **сăмах майлашăвĕ** «словосочетание», **хутлă предложени** «сложное предложение», **подлежащи** «подлежащее», **сказуемăй** «сказуемое», **дополнени** «дополнение», **определени** «определение», **обстоятельство** «обстоятельство» тата ыттисем те. Теприсемпе вара ачасем пĕрремĕш хут тĕл пулаҫҫĕ: **цитатăсем** «цитаты», **сыпăнуллă хутлă предложени** «сложносочиненное предложение», **пăхăнуллă хутлă предложени** «сложноподчиненное предложение» тата ыттисем те.

Чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче лингвистика терминĕсене вĕрентнĕ хушăра тĕрлĕ пăтăрмахсем сиксе тухма пултараҫҫĕ. Ун пек ан пултăр тесен терминсене вĕрентмелли йĕркене пăхăнни питĕ пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен вĕрентекен терминсене ăнлантарнă чухне мĕн хыҫҫăн мĕн тумаллине, терминсен пĕлтерĕшĕсене мĕнле майпа ачасем патне илсе ҫитерсен лайăхрах пулнине чухлама тивĕҫ, ĕҫ процесне курăмлăрах ирттерме тăрăшмалла.

Терминсене вĕрентмелли йĕрке:

**1 утăм**. Кашни терминăн форми тата шалашĕ пур. Паллах, термин шалашĕ пĕлтерĕшлĕрех, кирлĕрех. Анчах эпир чăн малтан **формине** сăнатпăр, ăна ăнланса илме май паратпăр. Тĕслĕхрен, термин кĕске е вăрăм пулни тўрех куҫа курăнать: **синтаксис** «сăмах майлашăвĕсемпе предложенисене тĕпчекен чĕлхе наукин пайĕ», **предложени** «вĕҫленнĕ шухăша палăртакан сăмах е сăмахсен йĕрки», **хутлă предложени** «икĕ е темиҫе тĕп членран тăракан предложени», **хутсăр предложени** «пĕр тĕп членран тăракан предложени» тата ыттисем те.

**2 утăм.** Формине сăнасан эпир **шалашне** тишкеретпĕр. Чылай чухне терминсем ют чĕлхесенчен кĕнĕ, ҫакăнта вĕсен чĕлхе пĕрлĕхĕнчи анлă пĕлтерĕшĕ палăрать. Тĕслĕхе вырăсла илер: **грамматика** (др. греч. γραμματική от γράμμα – «буква») – наука, которая является разделом языкознания, изучающая грамматический строй языка, закономерности построения правильных осмысленных речевых отрезков на этом языке (словоформ, синтагм, предложений, текстов). Грек чĕлхинчен тухнă «сас палли» сăмах мĕне пĕлтернине пĕлсен вĕренекен термин пĕлтерĕшне хăй майлăн тўрех ăнланма пултарать.

**3 утăм.** Малалла термин мĕнле илтĕннине тата мĕнле ҫырăннине тимлĕн сăнамалла. Терминсене ҫырасси литература нормисемпе килĕшсе тăмалла. Ҫавăнпа та ачасене терминсене тĕрĕс вуласа памалла, вĕсене тимлĕн итлесе ларма хăнăхтармалла. Кайран вара терминсене, ачасем лайăхрах ас туса юлччăр тесе, тетрадьсем ҫине ҫыртармалла. Паллах, терминсем илтĕнме пĕр евĕрлĕ, ҫырăнма урăхларах пултараҫҫĕ. Анчах терминсене ҫыртарнă чухне питĕ асăрханулă пулмалла, ачасем йăнăшсем тума пултаракан уйрăмлăхсене кăтартса хăвармалла.

**4 утăм.** Кайран правилăсене вĕренме ыйтмалла, тĕслĕхсем ҫине таянса терминăн пĕлтерĕшне уҫса пама хăнăхтармалла.

**5 утăм.** Хăнăхтарусем тутарнă май вĕреннĕ терминсен уйрăмлăхне тарăннăн ăнланса илме май памалла.

**6 утăм.** Правилăсен тетрадьне е словарьне йĕркелеттермелле.

**7 утăм.** Май пур чухне терминсен пулăвне этимологи тишкерĕвĕ урлă ăнлантарса пама ыйтмалла.

**8 утăм.** Чăвашла терминсене вырăсла теорипе танлаштарса тишкермелле.

**9 утăм.** Тĕрлĕ стильпе ҫырнă текстсенчи наука терминĕсене урăхларах пăхни ҫине таянмалла;

**10 утăм.** Чăвашла терминсене вырăс чĕлхинчен куҫару мелĕпе йышăннине кăтартмалла.

Терминсене вĕрентес ĕҫре ҫак йĕркене пăхăнса ĕҫлесен, пирĕн шутпа, вĕрентекен ĕҫĕ тухăҫлă пулса пыма тивĕҫ.

## УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

1. *Андреев И.А.* Чăваш чĕлхи: 8-9-мĕш классем валли. Хушса ҫĕнетнĕ 2-мĕш кăларăм. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. – 303 с.

2. *Львов М.Р.* Словарь-справочник по методике преподавания русского языка: Пособие для студентов педагогических вузов и колледжей. – М.: Академия: Высшая школа, 1999. – 277 с.

3. *Сергеев Л.П.* Чăваш чĕлхи: чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем валли хатĕрленĕ вĕренў кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. – 431 с.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕНЧЕ ТĂВАН ЧĔЛХЕНЕ ВĔРЕНТНĔ МАЙ АЧАСЕН ПĔЛĔВНЕ ПĔТĔМЛЕТЕС ЫЙТĂВА ÇĔНĔ СТАНДАРТПА КИЛĔШЎЛЛĔН ЙĔРКЕЛЕСЕ ПЫМАЛЛИ ТЕХНОЛОГИСЕМ

**БРУСОВА Галина Федоровна**
педагогика наукисен кандидачĕ, чăваш чĕлхипе литература кафедри доценчĕ
**ГРИШИНА Мария Александровна**
историпе филологи факультетĕнчи 4 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра рефлекси тĕсĕсем çинчен çырса кăтартнă. Педагогика практикинче юлашки вăхăтра рефлекси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Рефлекси вăл этем харпăр хăй пурнăçĕнче пулса иртнĕ хăтланусемпе ĕçсене пахаласа шухăшлани. Ансатраххăн каласан, рефлекси вăл этем хăйпе хăй калаçни. Паянхи педагогикăра рефлексине харкам ĕçсемпе вĕсен пайтине хак пани тесе ăнланаççĕ.*

**Тĕп сăмахсем:** рефлекси, эссе, «Хушас, кăларас, кăсăклă», тĕрев сăмахĕсем, калаçу йĕркелемелли сăмахсем.

Шкулти учитель – хăйне евĕр тĕпчевçĕ. Ĕç тухăçлăхне ўстермелли мелсемпе формăсем шырасси паянхи кун куллен тумалли ĕçсенчен чи кирли пулса тăрать. Вĕрентĕве кăсăклăрах, илĕртўллĕрех йĕркелес тесе ырми-канми тăрăшакан педагогсем ĕçре пысăк çитĕнўсем тăваççĕ.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентмелли методика çулсеренех пуянланса, аталанса пырать. Çĕнĕ формăсемпе ăслайсем шкул практикинче кулленех çуралаççĕ. Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни, педагогикăри тĕрлĕ проблемăсене пĕрле сўтсе явни, çĕнĕлĕхсене тишкерни вĕрентекенсене ĕçре пысăк пулăшу парать.

Юлашки вунă çул хушшинче критикăллă шухăшлав технологине (технология критического мышления) тĕпе хурса вĕрентесси вăй илчĕ. Кун пек чух урок виçĕ пĕлтерĕшлĕ пая пайланать:

1) «вызов» – кăсăклантарса яни. Кунта темăна палăртни, проблемăллă ыйту лартни, çак тема пирки ачасем мĕн пĕлнине ыйтса пĕлни, вĕсен пĕлес туртăмне вăратни» кĕреççĕ [3];

2) ку тапхăрта «Курăнать мĕнле… Илтĕнет мĕнле…», «+», «–», «кăсăклă» е «+», «–», «Тĕрĕс – тĕрĕс мар», «Ансат тата кăткăс ыйтусем», «Ĕненетĕр-и?» таблицăсемпе, кластерсем тăвассипе ĕçлемелле;

3) «осмысление» – ăнлану е ăнланса илни. Текста вулană май ачасем кăранташпа хăйсене шухăшлаттаракан, кăсăклантаракан вырăнсене паллă туса пыраççĕ. «Инсерт», «Борт журналĕ», Икĕ е виçĕ енлĕ дневник – çак мелсемпе усă курни ачасене ăнланса вулама, материала тарăнрах ăнланма пулăшать;

4) «рефлексия» – харкам хаклав (пĕтĕмлетни), ачасем мĕн çĕннине пĕлни, тĕпчевçĕ е автор шухăшĕпе вĕренекенсен шухăшĕ пĕр килнипе килменнине палăртаççĕ. Ачасем хăйсен шухăшне ăнлантарса пама, хўтĕлеме тăрăшаççĕ.

Рефлекси – латин чĕлхинчен кĕнĕ сăмах, «каялла таврăнни» тенине пĕлтерет. Ăна туса ирттернĕ ĕçе пĕтĕмлетни тесе ăнланма пулать. Ку таранччен эпир рефлекси термин вырăнне урока пĕтĕмлетни теттĕмĕр. Çĕнĕ вĕренў стандарчĕ ачана хăй мĕн пĕлнипе пĕлменнине уйăрма, хушнине тума мĕн чăрмантарнине ăнланма, çĕнĕ пĕлĕве хăйне шыраса тупма, ĕç çул-йĕрне палăртма хăнăхтарма ыйтать. Вĕренўре пулмалли результатсене стандартра палăртнă. Вĕсем харкам, метапредмет (пĕлу-тĕпчев, хутшăну, ĕç, йĕркелў), предмет результачĕсем. Рефлекси те метапредмет результачĕсен шутне кĕрет: ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслесси, вĕсен сăлтавне палăртасси, çĕнĕ теллев лартасси. Çавăнпа та учителĕн ку ĕç çине вăхăтпа тимлĕхе ытларах уйăрма тивет. Рефлекси виçĕ енлĕ: кăмăл-туйăма рефлексилени, вĕренў материалне рефлексилени, ĕç-хĕле рефлексилени [1, с. 69].

Чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасен сăмах пуянлăхне ўстересси программа кăларса тăратнă тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Çак задачăна кашни урокрах пурнăçласа пымалли учительсемшĕн паллă ĕнтĕ. Тăван чĕлхен грамматика тытăмĕпе паллаштарнă май грамматика формисемпе анлă усă курма вĕрентсе пымалла. Тĕрĕс те илемлĕ вулама-калаçма, çырма вĕрентесси те – кашни урокра тумалли ĕç [2]. Çак ыйтусене татса панă çĕрте ачасен пĕлĕвне хаклассине, пĕтĕмлетессине паянхи кун çĕнĕ стандартпа килĕшўллĕ рефлекси мелĕпе усă курса йĕркелесе пыни пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла.

Урока ачасен вӗренес кӑмӑлне (урок пуҫламӑшӗнче, вӗҫӗнче е кирек хӑш тапхӑрӗнче те) рефлексилес тата урокпа кӑсӑклантарса ярас тӗллевпе ирттермелле. Ӑна ҫак мелсемпе тума пулать:

1. «Хӑв сӑнна кӑтарт». Ачасем хӑйсен кӑмӑлне смайликсемпе кӑтартма пултараҫҫӗ. ☺ – кӑмӑл хавхаланулла, 😐 – кӑмӑл аван, ☹ – кӑмӑл пусӑрӑнчӑк. Смайликсем вырӑнне тӗрлӗ ӳкерчӗксемпе усӑ курма пулать. Акӑ ачасем кӑмӑл хавхаланулла пулнине «хӗвел», аван пулнине «хӗвеле кӑштах пӗлӗт хупланӑ», пусӑрӑнчӑк пулнине «пӗлӗт» ӳкерчӗксемпе кӑтартма пултараҫҫӗ. Паллӑсен хисепне ытларах та тума пулать. Вӗсен пӗлтерӗшӗ пурне те каламасӑрах ӑнланмалла пулма тивӗҫ.

2. «Кӑмӑл-туйӑм ҫыххи». Ку мелпе усӑ курма учителӗн класра тӗрлӗ тӗслӗ хутран тунӑ чечексем тата вӗсене чиксе хумалли икӗ кӑкшӑм пулмалла. Тӗс пӗлтерӗшне учитель ачасемпе калаҫса татӑлса палӑртма пултарать. Тӗслӗхрен, «кӑвак» чечек вӗренес кӑмӑл пуррине, «шупки» кӑмӑл питех пулманнине палӑртать. Урок пуҫламӑшӗнче пӗр ҫыхӑ пулӗ, урок вӗҫӗнче – тепӗр ҫыхӑ. Кӑкшӑмри е вазӑри «кӑн-кӑвак чечек ҫыххи» чи кӗтнӗ результат пулӗ.

3. «Кӑмӑл йывӑҫҫи» (е «Пултарулӑх йывӑҫҫи»). Ку мел те маларах ҫырса кӑтартнӑ принциппах пулса пырать. Класра курӑнакан вырӑнта хытӑ хутран тунӑ йывӑҫ кӳлепи (пӗрре е иккӗ) ҫакӑнса тӑмалла. Ун ҫумӗнче хут кӗсьесенче е тӗрлӗ тӗслӗ ҫаврашкасем е, тӗслӗхрен, чечексем, пан улмисем, ҫулҫӑсем пулмалла. Вӗсем мӗне пӗлтерни пирки учитель ачасемпе калаҫса татӑлать (пан улми – аван кӑмӑл, ҫулҫӑ – хуҫӑк кӑмӑл, чечек – вӑтам кӑмӑл). Ачасем улмуҫҫи патне пырса хӑйсен кӑмӑлне тивӗҫтерекен палла ҫыпӑҫтарса хӑвараҫҫӗ, урок вӗҫӗнче каллех хӑйсен кӑмӑлне палӑртаҫҫӗ. Нумай ҫимӗҫлӗ улмуҫҫи урок ачасене кӑмӑла кайнине пӗлтерет.

Ачасемпе рефлекси результачӗ пирки калаҫса илес пулать. Урок умӗнхи тата урок вӗҫӗнчи рефлексире кашнин палли мӗнле? Ӳсӗм лайӑх енне улшӑннипе улшӑнманнине танлаштарни лайӑх. Ӳсӗм пурришӗн алӑ ҫупса пӗр-пӗрне саламлама пулать.

Урокӑн тӗрлӗ тапхӑрӗнче, тӗрлӗ ӗҫ хыҫҫӑн рефлекси туса ирттермелле. Ӑна вырӑнта ларса та тума пулать:

4. «Светофор». Акӑ ачасем тӗрлӗ тӗслӗ карточка кӑтартаҫҫӗ: симӗсси – кун пек ӗҫ татах кирлӗ, килӗшрӗ; сарри – килӗшрӗ, анчах тунӑ ӗҫ чуна тыткӑнламасть; хӗрли – ӗҫ килӗшмерӗ, кӑсӑклӑ мар.

5. Кӑмӑл-туйӑма палӑртакан кӗвӗ. Урок пуҫланиччен учитель доска ҫине ачасем пӗлекен юрӑ ячӗсене ҫырса хурать. Вӗсенчен пӗри хаваслӑ, тепри кичем, виҫҫӗмӗшӗ шавлӑ. Ачасем хӑйсен кӑмӑлне килӗшекен юрӑ ячӗ тӗлне паллӑ лартаҫҫӗ: калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх е кӑшкӑру палли, е нота, е тата урӑх паллӑ. Хӑш юрӑ тӗлӗнче ытларах паллӑ, ҫав юрра учитель итлеттерет. Урок вӗҫӗнче те ҫаплах.

6. Кӑмӑла палӑртакан ӳкерчӗк. Вӗрентекен класс умне ҫут ҫанталӑкӑн тӗрлӗ вӑхӑтне е тӗрлӗ сӑнне сӑнлакан ӳкерчӗксем ҫакса хурать: хура кӗркунне, ҫуллахи уяр кун, хӗллехи ҫил-тӑман. Шӑнкӑрав янраса кайсан ачасем хӑйсен кӑмӑлӗпе тӳр килекен ӳкерчӗк тӗлне пухӑнса тӑраҫҫӗ. Урок вӗҫӗнче те ҫаплах. Мӗншӗн вӑл е ку ӳкерчӗке суйласа илнине ӑнлантарса параҫҫӗ.

7. «Кӑмӑлна мӗнле сӑмахпа палӑртма пуларатӑн?», «Хӑвна мӗнле туятӑн?» евӗр ыйтусем ҫине хуравлаттарни. Ку мелсем урокра вӗреннӗ материала мӗнле шайра ӑса хывнине тишкерме май параҫҫӗ. Вӗсене урокӑн пӗтӗмлетӳ тапхӑрӗнче ирттерсен вырӑнлӑ. Вӗсенчен чылайӑшне ҫырса тумалла. Акӑ вӗсен хӑш-пӗр тӗсӗсем.

1. Вӗҫлемен предложенисем. Ҫурма хатӗр анкетӑра ачасем харпӑр хӑй шухӑшне тивӗҫлӗ сӑмаха суйласа илсе ҫыраҫҫӗ: Паян эпӗ ҫӗнни … (илтӗм, илмерӗм). Маншӑн тема … (йывӑр е ҫӑмӑл) пулчӗ. Эпӗ пур ӗҫе те… (пурнӑҫларӑм е пурнӑҫлаймарӑм). Эпӗ темӑна … (ӑнлантӑм, ӑнланмарӑм). Халӗ эпӗ … (тишкерӳ тума, тӗрӗс ҫырма, илемлӗ вулама, пӑхмасӑр калама т. ыт. те) пултаратӑп. Маншӑн … (словарьпе ӗҫлесси, презентаци, правило тӑвасси т. ыт. те) ҫӗнни пулчӗ. Маншӑн … (ҫӗнӗ тема, аса илни, вуланине каласа пани т. ыт. те) пӗлтерӗшлӗ пулчӗ. Урок материалӗ маншӑн … (ҫӗнӗ, кӑсӑклӑ, усӑллӑ е пачах хирӗҫле т. ыт. те) пулчӗ.

2. Афоризм (ҫунатлӑ сӑмах) суйла. Учитель е доска ҫине, е ҫул-йӗр карттинче урока пӗтӗмлетме афоризмсем ҫырса панӑ. Ачасен урок материалне тивӗҫтерекен афоризма суйласа илмелле, йӗрпе туртса е ҫӑлтӑр лартса паллӑ тумалла.

1. Куҫ хӑрать те, алӑ тӑвать.

2. Ҫын туман ӗҫ ҫук.

3. Ҫиччӗ виҫ те пӗрре кас.

Хӑй мӗншӗн вӑл е ку афоризма суйланине сӑмахпа каласа ӑнлантармалла.

3. Алгоритма пӑхӑнса сӑвӑ ҫырасси. Кун евӗрлӗ ӗҫсен шутне синквейн, хокку (хайку), диамантӑна кӗртме пулать.

Синквейн вӑл – творчествалла ӗҫ форми. Ятарлӑ алгоритмпа 5 йӗркерен тӑракан, рифмӑламан,

кĕске сăвă çаврăмĕ, калас шухăша уçса паракан литература хайлавĕ. Синквейн ахаль сăвă çаврăмĕ çеç мар, ăна уйрăм правилăна пăхăнса çыраççĕ:

1-мĕш йĕрке – сăвă ячĕ, тема (ытларах чухне япала ячĕ). Кунта синквейнăн тĕп шухăшне палăртакан сăмах пулма тивĕç;

2-мĕш йĕрке – тĕп шухăша палăртма пулăшакан, темăна сăнласа паракан икĕ паллă ячĕ;

*3-мĕш йĕрке – темăпа çыхăннă ĕçе уçса пама пулăшакан виçĕ глагол;*

*4-мĕш йĕрке – темăпа çыхăннă уйрăм шухăша палăртма пулăшакан туйăм (сăвва çыракан çак тема çине мĕнлерех пăхнине кăтартса паракан, тăватă сăмахран тăракан предложени);*

*5-мĕш йĕрке – пĕрремĕш йĕркери сăмахăн синонимĕ (япала ячĕ). Япала ячĕпе усă курса тĕп шухăша пĕтĕмĕшле пĕтĕмлетни (вăл чи малтанхи, пĕрремĕш сăмахпа çыхăнмалла).*

Урок
Усăллă, илемлĕ
Кăсăклантарать, шухăшлаттарать, ăс парать
Çамрăкла вĕренни чул çинче
Пĕлӳ

Хокку (хайку) – рифмăланман 3 йĕркеллĕ 17 сыпăкран тăракан сăвă, шухăша кĕске те витĕмлĕ палăртать. Тĕслĕхрен:

Урокра эп вĕрентĕм,
Тăрăшсах ĕçлерĕм.
Эп хаваслă.

Диаманта – çичĕ йĕркеллĕ сăвă, пĕрремĕш йĕркери сăмахпа çыхăннă шухăш аталанса пырса хирĕçле пĕлтерĕше куçать.

1-мĕшпе 7-мĕш йĕркесенче пĕрер антоним япала ячĕ (тăхтав, урок);

2-мĕш йĕркере – пĕрремĕш япала ятне ăнлантаракан икĕ паллă ячĕ (кĕске, кичем);

3-мĕш йĕркере – 1-мĕш йĕркери япала ячĕпе çыхăннă виçĕ глагол (кан, утса çӳре, урока хатĕрлен);

4-мĕш йĕркере – икĕ хирĕçле пĕлтерĕшлĕ ят сăмах майлашăвĕ: пĕри тăхтав сăмахпа, тепри урок сăмахпа çыхăнать (шавлă тăхтав, кăсăклă урок);

5-мĕш йĕркере – пĕрремĕш йĕркери иккĕмĕш япала ячĕпе çыхăнакан виçĕ глагол (шухăшлаттарать, ĕçлеттерет, вĕрентет);

6-мĕш йĕркере – çав япала ятне ăнлантаракан икĕ паллă ячĕ (усăллă, кăсăклă).

4. «Класпа çырнă çыру».

Учитель парттăсем тăрăх хут ярать. Ачасен çав хут çине пĕрер предложени çырмалла. Вĕçĕнче ушкăнпа çырнă çыру пулса тăрать. Кашни çыракан предложени умĕнхи текстпа çыхăнуллă пулмалла. Малтанхи предложение е учитель хăй çырса парать, е пĕр-пĕр ача пуçлать. Тĕслĕхрен, çыру пуçламăшĕ: Паянхи урок материалĕ…, тепĕр ача малалла çырать çĕнĕ, виççĕмĕшĕ – эпĕ паянччен ку темăпа пачах нимĕн те пĕлмен тата ыт. те.

5. Эссе – пĕр-пĕр тема вĕреннĕ е текстпа ĕçленĕ хыççăн çуралнă шухăшсене пĕтĕмлетсе çырнă ирĕклĕ çыру.

6. Вĕреннĕ материалти пĕлтерĕшлĕ информацие суйласа илсе кĕскен телеграмма, инструкци, сĕнӳ, хыпар çырни. Ку хăйне евĕр çĕнĕ ĕç тĕсĕ – пĕр формăпа панă информаци шухăшне пăсмасăр тепĕр майлă тума пултарни: текста таблицăпа, схемăпа е граф формипе панă материала сăмахпа каласа пани. Ку мел пĕр шухăш теприне мĕнле çыхăннине палăртма питĕ меллĕ. Урăхла вăл когници (пĕлӳ) схеми, пĕр-пĕр ăнлавăн çыххи пулать.

Рефлекси туса иртнтересси пĕлтерĕшлĕ пулнине кура ку ĕç валли ятарлă тетрадь пулсан лайăх. Акă тĕслĕх анкета. Тивĕçлĕ хурава вĕренекенĕн аялтан туртса палăртмалла:

1. Анкета.

1) Урокра эпĕ активлă/пассивлă пултăм.

2) Хамăн урокри ĕçпе эпĕ кăмăллă/кăмăлсăр.

3) Маншăн урок вăрăм пулчĕ/хăвăрт иртрĕ.

4) Урокра эпĕ ывăнтăм/ывăнмарăм.

5) Килти ĕç маншăн йывăр/çăмăл, кăсăклă/интереслĕ мар пек туйăнать.

6) Урокра ман кăмăл çĕкленчĕ/пăсăлчĕ/хуçăлчĕ.

7) Урокри материал ăнланмалла мар, усăллă/усăсăр, кăсăклă/кăсăклă мар.

Паллах, ку е вăл рефлекси мелне шкул ачисен ӳсĕм шайне шута илсе усă курмалла. Кĕçĕн классенче рефлекси валли смайлсем, кăмăла палăртакан ӳкерчĕксем, «Кăмăл йывăççи»,

«Светофор» мелĕсемпе усă курни вырăнлăрах. Вăтам классенче вара «Кăмăл йывăççи», «Класпа çырнă çыру», «Вĕçленмен предложенисем», анкета, «Рефлекси тĕкĕрĕ» мелĕсем вырăнлăрах. Аслă классенче «çитĕнӳ картлашки», «+», «–», «интереслĕ» мелсем меллĕ пулма тивĕç.

Урокра вырăнлă та пĕлсе ирттернĕ рефлекси учителе ачасем хăйсем тунă ĕçе ăнланса пурнăçланине, вĕсене мĕн чăрмантарнине, вĕренекенсем çĕннине мĕн чухлĕ илнине, урокра илнĕ информаципе пурнăçра усă курма пултарнине, вĕсем çак тапхăрта мĕн чухлĕ те пулин улшăннине ăнланма пулăшать. Вĕренекенсем хăйсем ĕçне хакланипе пĕрлех класри ытти ачасен ĕçне те хак пама вĕренсе пыраççĕ.

**СПИСОК ЛИТЕРАТУРЫ**

1. *Волкова А.В.* Урокра рефлекси ирттермелли мелсем // Халăх шкулĕ. – 2015. –№ 1. – С. 67-69.
2. *Сергеев Л.П.* Чăваш чĕлхи методикин ыйтăвĕсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 120 с.
3. URL:http://www.shkul.su/authors/175.html 49. http://www.shkul.su/273.html.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕНЧИ ТĂВАН ЧĔЛХЕ УРОКĔСЕНЧЕ КӲРТĔМ СĂМАХСЕНЕ ВĔРЕНТЕССИ

**БРУСОВА Галина Федоровна**
педагогика наукисен кандидачĕ, чăваш чĕлхипе литература кафедри доценчĕ
**КУДРЯШОВА Юлия Евгениевна**
историпе филологи факультетĕнчи 3 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра тăван (вырăс мар) чĕлхеллĕ шкулсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче кӳртĕм сăмахсене вĕрентессин хăш-пĕр уйрăмлăхĕсене çырса кăтартнă. Ку ĕçĕн майĕсене асăннă.*

**Тĕп сăмахсем:** кӳртĕм сăмахсем, меслетсемпе мелсем, индукци, дедукци, пулу мелĕ, ирĕклĕ диктант.

Хальхи шкул программине тишкернĕ май çакна палăртма пулать: кӳртĕм сăмахсене VIII класра вĕренме программăра пĕтĕмпе 2 сехет палăртнă. Сехетсем сахал пулнине шута илсе пуплеве аталнтарас ĕçе учителĕн грамматика материалне вĕрентнĕ май туса пыма тивет. VIII класс ачисен кӳртĕм сăмахсене тĕрĕс çырма, пĕлтерĕшне тата пуплев стильне кура вĕсемпе калаçура тата çырура вырăнлă усă курма хăнăхмалла [1].

Вĕрентĕве тĕрĕс йĕркелес тесен, ачасен ӳсĕм уйрăмлăхĕсене, вĕсен пуплев аталанăвĕн шайне пĕлни пĕлтерĕшлĕ. Ку вăл вĕрентӳ ĕçĕнче тивĕçлĕ мелсемпе меслетсем суйласа илме май парать. VIII класра кӳртĕм сăмахсене вĕрентесси тĕрлĕ майпа пулма пултарать. Вĕсене вĕрентнĕ чух усă курмалли меслетсем: учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, çыру, дедукци тата индукци меслечĕ, курăмлăх хатĕрĕсем, грамматика вăййисем.

Чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçре кăтарту тата курăмлăх хатĕрĕсемпе усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кăтарту пособийĕсемпе урокра усă курни тата вĕсем нумайччен ачасен куçĕ умĕнче çакăнса тăни ачасене тĕрĕс çырма хăнăхтарас ĕçе те пурнăçлама май парать. Кăтарту пособийĕсем темăсемпе тачă çыхăнмалла, çакăн чухне тин вĕсем темăна ăнланма пулăшаççĕ.

Кӳртĕм сăмахсемпе çыхăннă темăсене уçса пама ыталарах шырав-тĕпчев меслечĕпе ĕçлени, уйрăмах **индукци меслечĕ** çине таянса урока йĕркелени ачасен материала ăнланаслăхне, вĕсен шухăшлавне чылай çӳллĕ шая çĕклет.

Индукци е индукциллĕ шухăшлав тесе вакрах ăнланусенчен пĕр пĕтĕмлетӳллĕ шухăш патне куçнине калаççĕ. Кун пек чухне учитель уйрăм тĕслĕхсем (сасăсене, предложенисене, текстсене) тишкерме сĕнет, ыйтусем парать. Ачасем тĕслĕхсене пайăн-пайăн тишкерсе ăнланаççĕ. Унтан теори пĕтĕмлетĕвне йĕркелеççĕ.

Программăра палăртнă тăрăх, кӳртĕм сăмахсене икĕ урок хушшинче пăхса тухмалла. Ĕçе учитель ыйту-хурав формипе, индукци меслечĕ çине таянса туса пынă чух доска çине вĕрентекен предложенисем çырса парать:

1. Атте ыран хулана каять.
2. Атте ыран хулана каять **пулас** [2, с. 99].
3. **Телее,** атте ыран хулана каять.
4. **Ман шутпа,** атте ыран хулана каять.

Унтан вĕренекенсен умне çакăн пек ыйтусем кăларса тăратма пулать:

– 1-мĕшпе 2-мĕш предложенисене танлаштарăр. Содержанийĕпе вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

– Палăртнă сăмахсем мĕне пĕлтернине ăнлантарса парăр.

– 2-мĕш предложенинче палăртнă сăмах предложенин мĕнле членĕ хыççăн тăрать?

– 3-мĕшпе 4-мĕш предложенисенче палăртнă сăмахсем сказуемăй умĕнче е хыçĕнче вырнаçнă?

– Вĕсем предложени членĕ пулаççĕ-и?

– Ачасем, çак палăртнă сăмахсенче сире мĕн тĕлĕнтерет? Вĕсен хушшинче мĕнле уйрăмлăх асăрхарăр?

– Çав сăмахсене мĕнле чарăну паллисемпе уйăрнă?

– Вĕсене мĕнле интонаципе вуламалла-ши? Танлаштарăр.

– Кӳртĕм сăмахсем мĕн тума кирлĕ?

Ачасем тишкернĕ предложенисем урлă **çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăваççĕ:**

Калаканни хăй шухăшĕ çине епле пăхнине, мĕнле хакланине кӳртĕм сăмахсемпе кăтартать. Кӳртĕм сăмахсем нимĕнле пуплев пайĕ те пулмаççĕ, предложенире нимĕнле ыйтура та тăмаççĕ. Çак шухăша ытти тĕслĕхсемпе те çирĕплетсе хăвармалла, вĕренекенсене хăйсене тĕслĕхсем туптармалла, кӳртĕм сăмахсем кĕртсе предложенисем çырма хушмалла. Учитель ачасем тунă пĕтĕмлетĕве анлăлатать, терминпа паллаштарать.

Калаканĕ хăйĕн шухăшне мĕнле хакланине (çирĕплетнине, иккĕленнине, кăмăлланине т. ыт. те) палăртса калама пулăшакан сăмахсем. Кӳртĕм сăмахсем, чăн та, нимĕнле пуплев пайĕ те пулмаççĕ, çыннăн кăмăлне кăтартаççĕ.

Вĕрентекенĕн кӳртĕм сăмахсем предложенире мĕнле сăмахсемпе çыхăннине е çыхăнманнине те палăртмалла, çак ĕçе ачасене явăçтармалла.

Вĕрентекенĕн кӳртĕм сăмахсене çырура, ăçта мĕнле чарăну паллисем лартмалли уйрăмлăхсене уçса памалла, тĕслĕхрен: сказуемăй умĕн тăнă чухне кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăраççĕ (**Телее,** часах пире машина хуса çитрĕ).

Çакăнтах кӳртĕм сăмахсен тытăмĕ çинчен каласан та аван: ку тĕлĕшĕнчен вĕсем пĕр сăмахран та, темиçе сăмахран та пулаççĕ. Кӳртĕм сăмахсен ушкăнне пăхсан вĕсен кашнин хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур. Тĕслĕхрен, **Яланхи пекех**, манăн пичче ирхине шкулалла уттарччĕ предложенине илер. Ку предложенире кӳртĕм сăмах ялан пулнă пеккине кăтартать. **Шутласа пăх-ха,** хулана иртерех каймалла мар-ши? Ку тĕслĕхре паллă тунă сăмах каласа пĕлтерни çине мĕнле те пулин пăхтарас тесе, итлекене чĕнсе каланине пĕлтерет.

Тин çеç вĕреннĕ теори материалне хăнăхтару ĕçĕсемпе çирĕплетсе хăвармалла.

Хăнăхтарусемпе ĕçлеме пуçличчен кĕнекере панă материала вуласа кĕске тезис пек е план пек çыртарса калаттарни те лайăх пулмалла.

Çавăн пекех вĕрентекен тата çакăн евĕр ĕç туса irттерме пултарать: пĕр-пĕр илемлĕ литературăран уйрăм сыпăк илмелле, унти кӳртĕм сăмахсене кăларса пăрахмалла, вĕсен вырăнне вĕренекенсене хăйсене кӳртĕм сăмахсене туптармалла, унтан ачасем тупнă сăмахсене автор кӳртĕм сăмахĕсемпе танлаштарса пăхмалла, вĕсене пахалăх тĕлĕшĕнчен хаклама ыйтмалла. Çапла туни вĕренекенсен активлăхне ӳстерет, пуплевне аталантарать, урока интереслĕрех irттерме май парать. Тĕслĕхрен: Тарăн та пысăк шыв пăтранмасть теççĕ. Санăн чун-чĕрӳ чăнах та мĕнлерех тарăн-ши, мĕнлерех пысăк-ши? Ара çитнĕ ачусене вăрçа ăсатнă чух калани: «Эсир, çамрăксем, пирĕн тăпрамăра килсе таптăр, сирĕн тăпрăра пирĕн, ваттисен, таптамалла ан пултăрчĕ», – тени сарăмсăр сая кайнине пĕлсен тĕнчене шăнăçайми хаяр хыпар сан чĕрӳне мĕнле шăнăçайрĕ-ши?

Кӳртĕм сăмахсемпе ачасем çырура та, калаçура та, шкул пĕтернĕ хыççăн та анлă усă кураççĕ, анчах тепĕр чух çак предложенисенче йăнăшсем тунине чылаях курма пулать:

1. Чарăну паллисене тĕрĕс лартмаççĕ.
2. Кӳртĕм сăмах ăçта пуçланнине е вĕçленнине тĕрĕс палăртаймаççĕ.

Апла пулсан ку ыйтупа вĕрентекенĕн тăрăшсах ĕçлемелле. Тишкермелли материала, сӳтсе явмалли тĕслĕхсене литература произведенийĕсенчен, халăх сăмахлăхĕнчен илмелле. Çакă та вĕренекенсене пурнăçпа çывăхлатать, кӳртĕм сăмахсен тĕрлĕ тĕсне курма май парать.

Ачасен активлăхне ӳстерес, вĕсене кӳртĕм сăмахсемпе харпăр хăй тĕллĕн тĕрĕс усă курма вĕрентсе çитерес тĕллевпе грамматика урокĕсенче творчествăлла ĕçсем нумай тутармалла. Кӳртĕм сăмахсемпе ĕçленĕ чух вĕренекенсен шухăшлавне, чĕлхине пуянлатакан ĕçсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) тĕрлĕ конструкциллĕ предложенисем йĕркелени;
2) илемлĕ литературăран çавăн йышши предложенисене çыртарса илни;
3) шӳтлĕ пĕчĕк кулăшсем хайлама хушни;
4) прозăлла çырнă произведенин пĕр-пĕр сыпăкне пьеса пек çырма ыйтни;
5) курни-илтни çинчен каласа партарни;
6) пĕр-пĕр темăпа пĕр-пĕринпе калаçтарни;
7) изложенисем, сочиненисем çыртарни тата ытти ĕçсем.

Морфологи тата пунктуаци енчен кашни орфограммăна, пунктограммăна ас туса тăма çăмăл мар. Тĕрлĕ сăлтавсене пула (ачасен тимлĕхĕ, аталанăвĕ пĕр пек маррине кура) кӳртĕм сăмахсемпе усă курнă чух вĕренекенсем нумайччен йăнăшсем тăваççĕ.

Çавăнпа та пур ачана та тĕрĕс çырма вĕрентес ĕçре йăнăш тăвасран асăрхаттарасси пысăк вырăн йышăнать. Чăваш чĕлхипе çĕнĕ пĕлӳ паракан кашни урокрах учитель ачасене, çав сăмахра, предложенире мĕнле йăнăш пулма пултарнине шута илсе, мĕнле калатпăр?, мĕнле каламалла?, мĕнле çыраççĕ?, предложенире мĕнле чарăну паллисем лартнă?, вĕсене мĕншĕн лартнă?, чарăну паллисем мĕнле правилăпа çыхăнса тăраççĕ? евĕрлĕ ыйтусемпе ĕçлеме тивĕç.

Ачасен тимлĕхне, астуса юласлăхне ӳстерме пулăшакан çыру ĕçĕсенчен пĕри вăл – «Аса илӳ» диктанчĕ. Аса илӳ диктантне ирттернĕ чух вĕрентекенпе ачасем текстри е сăвăри орфограммăсемпе пунктограммăсене тишкерсе тухаççĕ. Унтан учитель çав текста (урокрах е килте вĕренсе килме) пăхмасăр каласа памалăх вĕренме вăхăт парать. Кайран вĕренекенсем материала мĕнле астуса юлнă тăрăх хăйсем тĕллĕн çырса параççĕ. Тĕслĕхрен, ачасене çакăн евĕрлĕ текстпа ĕçлеттерме пулать. Кунта пунктограммăсем те, кӳртĕм сăмахсем те йышлă тĕл пулаççĕ.

Укăлча хапхине уçса тăван яла кĕретĕп. Мана хирĕç ăшă çил выляса чупать, урам тăршшĕпе ӳсекен йывăç тăррисене хумхантарать. Акă атте лартнă йăмрасем. Тен, астăваççĕ вĕсем мана, тен, лапсăркка симĕс пуçĕсене тайса, мана саламлаççĕ.

Эпĕ ӳснĕ виç чӳречеллĕ пӳрт çеç курăнмасть. Çавăнпах-и, тен, чунра салху. Ун вырăнĕнче пысăк та хитре çурт ларать (Ф. Орл).

Тимлĕн итлесе ларма хăнăхман ача правилăсене тĕрĕс вĕреннĕ хыççăн та йăнăшсем тăвать. Кун пек чухне учителĕн ачан тимлĕхне ӳстерес тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме тивет. Ку тĕлĕшпе ирĕклĕ диктант, комментариллĕ диктансем, çырса илни, асăрхаттару, ăнлантару диктанчĕсем тата ытти çыру ĕçĕсем те усăллă.

Шкул ачисене тĕрĕс çырма вĕрентес ĕçре пунктуаци правилисене лайăх пĕлни пысăк вырăн йышăнать, çакна учителĕн яланах асра тытмалла. Пунктуаци правилисене лайăх пĕлекен ача кирек мĕнле йывăр предложение çырнă чух та ăна тĕрĕслеме, материала тĕрлĕ енчен тишкерӳ тума пултарать, яланах ăнланса ĕçлет. Ун пек вĕренекенĕн йăнăшсем питĕ сайра тĕл пулаççĕ, йăнăшсемсĕр ĕçлет тесен те тĕрĕс пулĕ.

Начар çыракан ачасемпе вăхăтран вăхăта тĕрĕслев ĕçĕ умĕн 10-15 минутлăх хатĕрлев ĕçĕ туса ирттерсен аван. Йăнăшсенчен хăтăлас тĕллевпе ĕçленĕ çĕрте вăйăсем ирттерни те пысăк пĕлтерĕшлĕ [3, с. 76].

Çакăн пек занятисенче çитес çыру ĕçĕсенче тĕл пулакан пунктограммăсемпе тата орфограммăсемпе паллаштармалла, правилăсене аса илмелле, тĕслĕхсемпе тĕрлĕ енлĕ ĕçлемелле. Çыру урокĕнче йăнăш сахал туни е пĕр йăнăш та туманни ачана хавхалантарать, час-часах ун пек чухне çав ачасем тăрăшарах вĕренме, тимлĕрех итлесе ларма пуçлаççĕ.

Изложени, сочиненисене тĕрĕсленĕ чухне çыру ĕçĕсенче вĕренекен кӳртĕм сăмахсемпе мĕнле усă курнине, чарăну паллисемпе пĕлсе ĕçленине шута илмелле.

Вĕрентекен ачасен ĕçĕсене тĕрĕсленĕ чух хăш ача мĕнле йăнăш тунине, мĕнле пунктограммăна начар пĕлнине, тунă йăнăшсем мĕнле сăлтавсенчен килнине т. ыт. те шута илсе ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ачана хăйĕн йăнăшĕсемпе активлă ĕçлеттермелле, унăн уйрăмлăхне шута илсе пĕр йăнăшах тĕрлĕ енлĕ тӳрлеттермелле, хăнăхтарусемпе çирĕплетсе хăварма май памалла.

Палăртнă темăна ачасем мĕнле ăса хывнине, вĕренекенсен пĕлӳ шайне, унпа пуплевре (калаçура, çырура) мĕнле усă курма хăнăхса çитнине учитель тест формипе, ыйту-хурав мелĕпе, диктантăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе, сочинени е изложени çыртарнă май та тĕрĕслеме пултарать. Вĕренекенсен пĕлĕвне тест формипе тĕрĕсленĕ чух ку ĕçе йĕркелеме ачасене хăйсене те явăçтармалла.

**УСӐ КУРНӐ ЛИТЕРАТУРА**
1. *Андреев И.А.* Чӑваш чӗлхи программи: Чӑваш шкулӗн V-IX класӗсем валли. – Шупашкар: Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ, 2007. – 44 с.
2. *Андреев И.А.* Чӑваш чӗлхи: 8-9-мӗш классем валли. Хушса ҫӗнетнӗ 2-мӗш кӑларӑм. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2009. – 303 с.
3. *Вахрамеева З.Ф., Архипов П.А.* Сочинени ҫырма вӗрентесси: 4-10 классенче вӗрентекен учительсем валли. Хушса ҫӗнетнӗ иккӗмӗш кӑларӑм. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1983. – 127 с.

# ЧӐВАШ ШКУЛӖСЕНЧИ ТӐВАН ЧӖЛХЕ УРОКӖСЕНЧЕ ТЕКСТПА ӖҪЛЕССИ

**БРУСОВА Галина Федоровна**
педагогика наукисен кандидачӗ, чӑваш чӗлхипе литература кафедри доценчӗ
**ЭНТИНА Наталья Геннадьевна**
историпе филологи факультетӗнчи 3 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх
педагогика университечӗ» АВ ФПБВУ
Чӑваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра чӑваш чӗлхи урокӗсенче текстпа ӗҫлессин уйрӑмлӑхӗсене ҫырса кӑтартнӑ, ку ӗҫӗн тухӑҫлӑхне ӳстермелли вӗренӳ условийӗсене асӑннӑ. Текста тишкернӗ чухне вӗренӳҫӗ ачасемпе пӗрле материала тепӗр хут хӑйӗн чун-чӗри витӗр кӑларма тивӗҫлӗ. Ку ҫул-йӗр – автор шухӑшӗсене вулавҫӑ пек ӑнкарса илнӗ хыҫҫӑн харкам текста ӑсласси патне. Ҫак ҫул-йӗре тӗрӗс йӗркелеме кашни ачан харкамлӑхне тата творчествӑллӑ пултарулӑх шайне аталантаракан хастар вӗренӳ формисем пулӑшаҫҫӗ. Паянхи пурнӑҫ кӑларса тӑратакан ыйтусем чӑваш чӗлхине вӗрентекене ӗҫре ҫӗнӗ формӑсем шырама хушаҫҫӗ.*

**Тӗп сӑмахсем:** текст паллисем, пуплев стилӗсем, пуплевӗн функципе пӗлтерӗш ушкӑнӗсем, лингвистика ӑнлавӗсем.

Текстпа ӗҫлесси пуплеве аталантарас ӗҫӗн пӗр тӗсӗ, текстсене ачасен пӗлӗвӗпе килӗшӳллӗ суйласа илмелле. Текста суйланӑ чух ҫак уйрӑмлӑхсене шута илмелле: текст содержани енчен ачасене ӑнланмалла пулмалла, текстра вӗреннӗ правилӑсемпе ҫыхӑннӑ орфограммӑсемпе пунктограммӑсем пулмалла. Чӑваш чӗлхи урокӗнче илемлӗ текстпа усӑ курни ҫакӑн пек самантсене йӗркелеме пулӑшать:

1) чӑваш чӗлхи урокӗнче литература жанрӗсемпе паллаштарма;
2) чӗлхе илемлӗхне кӑтартса пама;
3) грамматика материалӗн функцийӗсене уҫса пама;
4) калав, ӑслав, сӑнлав формисемпе ҫырас ӑсталӑха ӑнланса илме, ҫут ҫанталӑка сӑнас пултарулӑха ӳстерме т. ыт. те;
5) культурологи аспектне пурнӑҫлама;
6) воспитани ыйтӑвне йӗркелесе пыма [1].

Текстпа ӗҫленӗ чух чӑваш чӗлхи урокӗсенче чӗлхе туйӑмӗ аталанать, вӗренекенсене наци культури ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарать. Чӑваш чӗлхи урокӗсенче текстпа ӗҫлени ҫакӑн пек ыйтусене те йӗркелесе пыма май парать: лексика, морфологи, синтаксис темисене тухӑҫлӑ вӗрентме; чӗлхе системине ӑнланма; чӗлхен хӑйне евӗрлӗхне чухлама; ачасен чун хавалне ӳстерме; вӗсен пултарулӑхне аталантарма.

Юлашки вӑхӑтра чӑваш чӗлхи урокӗсенче ытларах илемлӗ текстсемпе усӑ курнине курма пулать. Текстӑн содержанийӗ ҫине пусӑм туса ӗҫлени – хальхи вӑхӑтра вӗренекенсемшӗн уйрӑмах кирлӗ.

Вӗренекен илемлӗ литературӑри текста тишкермесен, унӑн содержанине ӑнланмасан та пултарать. Илемлӗ литература хайлавне искусство шайӗнче ӑнланса ӑша хывасси – кӑткӑс пулӑм. Ӑна пур енлӗн тишкерсе хакласси вара тата та кӑткӑсрах.

Чӑваш чӗлхипе литературӑна ҫыхӑнтарса тӑракан уроксен тӗллевӗ – чӗлхе, хутшӑну, литература компетенцийӗсене йӗркелесси тата чӗлхе вӑрттӑнлӑхне туйма, илемлӗхне курма вӗрентесси, эстетикӑлла чӗлхе туйӑмне аталантарасси. Вӗренекенсем чӑваш чӗлхи урокӗсенче конкретлӑ лингвистика ӑнлавӗсене ӑнкарса вӗренмелле:

– фонетикăпа синтаксислă ăнлава (вĕренекен текстри чарăну паллисен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕс ăнлансан, тĕрĕс интонаципе вуласан, ҫырура вара – тепĕр майлă: интонаци тăрăх чарăну паллисене тĕрĕс лартма пултарнă чухне пурнăҫа кĕрет);

– лексикăпа семантика ăнлава (текста тишкернĕ тата ăна хăй йĕркеленĕ чух синонимсем, антонимсем, омонимсем, сăмах майлашăвĕсемпе синтаксис конструкцийĕсем ҫине ытларах пусăм туса ĕҫленĕ чухне пулса пырать);

– парадигматикăллă ăнлава (текстри пуплев пайĕсен (сăмахсен) пĕлтерĕшĕсене ăнлансан пурнăҫа кĕрет);

– синтагматикăллă ăнлава (вĕҫленнĕ шухăша тĕрлĕ вариантла ҫирĕплетме пĕлни, предложенири сăмах йĕркин пĕлтерĕшĕсене ăнлансан пурнăҫланать);

– стилистика ăнлава (текст йĕркелес уйрăмлăха ăнланни: жанр тĕлĕшĕнчен, композици, персонажсен чĕлхи тĕлĕшĕнчен, текста тишкернĕ тата ăна йĕркеленĕ чух сюжет йĕрне характеристика пама пултарсан пулать).

Уроксен шалашĕ текстăн чĕлхе тишкерĕвĕ пулса тăрать. Текст чĕлхен чи пысăк единици шутланать, ҫав хушăрах пуплев единици те. Шăпах ҫавăнпа текста чăваш чĕлхине вĕрентес меслетлĕхре дидактика единици пек те пăхаҫҫĕ. Пĕр енчен, произведенире хайлавҫăн хăйне евĕрлĕхĕ сăнарланать, тепĕр енчен, вăл курăну, чĕлхе системине объектлă кăтартакан.

Текста пур чĕлхе единицисем те кĕреҫҫĕ. Текстпа ĕҫленĕ чух ачасене ҫакна курма вĕрентесси чăваш чĕлхи урокĕсен тĕллевĕ теме пулать. Ҫав хушăрах текстăн ҫивĕч палăрнă идейи пур. Вăл содержани тăрăх уҫăлать.

Текстпа ĕҫлеме вĕрентес ĕҫри теори никĕслĕхĕн виҫĕ ушкăнне палăртаҫҫĕ:

1. Текстăн паллисем: шухăш тĕллевĕ, каланине пĕтĕмлетни (тема, тĕп шухăш) тата ăна тĕрĕс йĕркелени, шухăш аталанăвĕпе ҫыхăнни (панă тата ҫĕнĕ информаци, предложенисен ҫыхăнăвĕн меслечĕсем, абзаца йĕркелени).

2. Пуплев стилĕсем: калаҫу, наука, ĕҫ, илемлĕ.

3. Пуплев тĕсĕсем пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕ тăрăх: калав, шухăшлав (ăслав, уйлав), сăнлав тата вĕсен тĕсĕсем (япалана, вырăна, ҫутҫанталăк тăрăмне, ҫынна сăнласа пани, япалана, пулăма, ĕҫ-хĕле хаклани) [2].

Шăпах текст чăваш чĕлхи учебникĕсен тытăмĕнче кирлĕ компонентсенчен пĕри пулса тăрать. Ун урлă вĕренĕвĕн коммуникативлă, пĕлӳ, аталану, сапăрлăх тĕллевĕсем пурнăҫланаҫҫĕ.

«Ҫыхăнуллă пуплев» пайра текстпа ĕҫлесси тĕп вырăнта тăрать. Кашни класра текстпа ĕҫлесси, предложени пекех, вĕренӳ ҫулĕ тăршшĕпе пурнăҫланса пырать. Вăл чĕлхене пуплевре вĕрентес условисемпе ҫыхăнтарать. Кашни урокрах текстпа ĕҫленĕ май ăна сăмах вĕҫҫĕн калани е ҫырни пулса пырать. Ҫавна май ачасен пуплевĕ те пĕчĕккĕн аталанса пырать.

Текстпа ĕҫлессин компоненчĕсем: 1) «текст» ăнлав; 2) текстăн теми; 3) текстăн тĕп шухăшĕ; 4) текста йĕркелесси; 5) текст пайĕсен хушшинчи ҫыхăну; 6) текстăн кашни пайĕнчи предложенисен хушшинчи ҫыхăну; 7) текст тĕслĕхĕсем; 8) изложени ҫинчен ăнлантарни; 9) сочинени ҫинчен ăнлантарни.

Текстпа ĕҫлесси вăтам классенче ҫак дидактика принципĕ ҫинче пулса пырать: «ансаттинчен кăткăсси патне, ҫăмăллинчен йывăрри патне» [1].

Текстпа ĕҫлессине ҫак уйрăмлăхсене шута илсе йĕркелесе пыма пулать.

*1. Текста предложенисем ҫине уйăрни.*

– Текста ҫырса илĕр, предложенисем ҫине уйăрăр.

*Шĕшкĕ*

*«Кĕрхи йĕпе-сапа пуҫланчĕ йĕпе-сапа хыҫҫăн хĕл те персе ҫитрĕ шĕшке юр пĕтĕмпех хупласа лартрĕ хĕлле пур йывăҫ та ӳсесĕр тĕлĕрсе ларчĕ хĕл иртсен ҫуркунне пулчĕ шĕшкĕ юр айĕнчен тухсанах чĕрĕлме тытăнчĕ».*

*(Трубина Мархви. «Шĕшкĕ» юмахран)*

*2. Сăмахсенчен предложени туни.*

– Панă сăмахсенчен предложени йĕркелесе текст тăвăр, ăна ят парăр.

Сухаллă, пĕр, пирĕн, пурччĕ, качака, шурă *(Пĕр шурă сухаллă качака пурччĕ пирĕн).*Пахчине, кĕретчĕ, качака, купăста, ҫав *(Ҫав качака купăста пахчине кĕретчĕ).*Тутлă, купăста, пуль, чĕрĕлле *(Купăста чĕрĕлле тутлă пуль).*Юратать, ҫавăнпа та, качака, ăна *(Ҫавăнпа качака ăна юратать та).*

*(Илле Тăхти. «Купăста» калавран)*

*3. Арканнă текстпа ĕçлени.*

− Предложенисене йĕркипе вырнаçтарса çыхăнуллă текст тăвăр.

− Каçхине эпĕ ун патне çул тытрăм;

− Пĕррехинче асатте çывăхри кӳлле пулă тытма кайрĕ;

− Тулли уйăх мана çул кăтартса парать;

− Тытнă пуллисене илтĕм те киле килме тухрăм.

− Текстăн пайĕсене планпа шайлаштарса çыхăнуллă текст йĕркелĕр.

− Çуркунне савăнни;

− Çуркунне сасă пани;

− Чăн çуркуннен шăрши;

− Çуркунне килни.

*«Акă юр хура пулса тăчĕ. Юхан шывсем çул тăрăх калаçма тытăнчĕç.*

*Кашни кун çерçи кăшкăрать.*

*Пĕтĕм юр ирĕлсе кайрĕ. Çеçпĕлсем курăнаççĕ. Кусем пĕрремĕш чечексем. Вĕсем чăн çуркунне шăрши кăлараççĕ.*

*Хĕвел хытă хĕртме пуçларĕ. Виткĕчрен тумла пăрĕ макăрма пуçларĕ. Çуркунне кулса ячĕ».*

*4. Пултарулăх ĕçĕсем.*

1) Текста сăмах майлашăвĕсемпе хайлани.

– Панă сăмах майлашăвĕсемпе усă курса, предложенисем йĕркелĕр, «Ылтăн кĕркунне» темăпа çыхăнуллă текст çырăр:

*Вăйă çаврăнать, сарă çулçăсем, çил сӳлетсе кайрĕ, кая юлнă чечек, шăпăрлă туна, çĕнĕ кĕрĕк, ура айĕнче вашкăртатать, ылтăн кĕркунне.*

2) Иллюстрацие усă курса план тăрăх текст çырни.

– Ӳкерчĕке пăхса тух, ят пар; план тăрăх текст йĕркеле.

План:

*1) Часах кайăксем вĕçсе килеççĕ.*

*2) Мастерскойра ĕçлени.*

*3) Çĕнĕ пӳрт уявĕ.*

Çĕнĕ стандартпа килĕшӳллĕн, паянхи кун текста вулас ыйту çине те урăхларах пăхаççĕ. Вĕрентӳ ĕçĕнче вулавăн тухăçлă технологийĕпе усă курса ĕçлени ачасен пултарулăхне туллинрех аталантарма май панине палăртмалла.

5. Вулавăн тухăçлă технологийĕ.

Тĕллевĕ – текстра панă информацие кĕретĕн, уçăмсăр ăнланасси; тĕп шухăшне ăша хывасси.

Хатĕр – текстпа тапхăрăн ĕçленĕ май усă куракан тухăçлă мелсем.

**Текстпа ĕçленĕ чухнехи тапхăрсем:**

**1. Текста вуличченхи тапхăр.** Текст ятне, ӳкерчĕксене тата çавăн евĕрлĕ ытти уйрăмлăхсене тишкернĕ май вăл мĕн çинчен пулассине палăртни (текста çиелтен, куç вĕçĕпе пăхса тухни).

Пайти (результачĕ):вулас кăмăл çуратни, вулава сăлтавлани.

**2. Текста вуланă чухнехи тапхăр.** Тишкерӳллĕ вулав (сасăпа вуланă тапхăрта) авторпа калаçнă евĕр: çак тĕллевпе вуланă май чарăнусем тумалла:

− вулани тăрăх автор патне ыйтусем лартмалла **(Ы)**;

− мĕнле хурав пуласса шухăшласа ăнкармалла **(Х)**;

− малалла вуланă май малтанхи ыйтусен хуравĕсене текстра тупни, хăйĕннипе шайлаштарни, тĕрĕслени **(Т)**.

Пайти (результачĕ): факт шайĕнчи информацие тупса вуланипе пĕрлех вăрттăн каланă шухăшсене те курма пултарни, текста хăй енчен ăнлантарса пани.

**3. Текста вуланă хыççăнхи тапхăр.** Текстăн тĕп шухăшне ăнланни, калăплани (вăл шутра ăнланулла вулав та).

Пайта (результат): автор шухăшне ăнланса илни, хăйĕн шухăшне тӳрлетни.

Çакна халĕ вулавăн тухăçлă технологийĕ çине таянса «Мĕн вăл юн?» текст урлă ĕçе вĕрентекен мĕнлерех йĕркелесе пыма пултарнине кăтартса парăпăр.

МĔН ВĂЛ ЮН?

**Ы:** Хурав парас тесен мĕн пĕлмелле?

**Х:** Мĕнрен тăрать? Мĕншĕн кирлĕ?

**Ы:** Текстра уйрăм палăртса çырнă сăмахсем пур-и?

Юн вăл – организмăн шалти хутлăхĕ. (**Ы:** Мĕншĕн хутлăх?) Мышцăсемпе шăмăсем тата ӳтпĕвĕн ытти пайĕсем уйрăм клеткăсенчен тăраççĕ. Юн тăвакан клеткăсем вара пĕр-пĕринпе çыхăнмаççĕ, вĕсем шĕвек хутлăхра ишсе çӳреççĕ – **юн плазминче.** (**Т:** Мĕншĕн хутлăх – паллă! **Ы:** Анчах та мĕн вăл плазма?)

Плазмăна хăйне уйрăммăн пăхсан вăл – витĕр курăнакан сарă шĕвек, тути тĕлĕшĕнчен тăварлă. Вăл çав тери кăткăс шыв хутăшĕ, унта организмра тĕл пулакан пĕтĕм вещество пур. (**Т:** Лартнă ыйтусен хуравне тупрăр-и? Текст патне паракан икĕ ыйтуран хăшĕн çине хурав пама пултаратпăр? – Мĕнрен?)

Кашни юн тумламĕ 100 миллиона яхăн чĕрĕ клеткăран тăрать. Вĕсен хушшинче пуринчен те нумайраххи **хĕрлĕ юн клеткисем**. Хĕрлĕ тĕс тăвакан вещество – **гемоглобин.** (**Т:** Текстри хăш ыйту çине хурав тупрăмăр? – Мĕнрен? **Ы:** Автортан мĕн ыйтма пулать? – Мĕншĕн?)

Гемоглобин пулăшнипе çак клеткăсем ӳпкерен пĕтĕм органсем патне кислород куçараççĕ. (**Т:** Мĕнле ыйту çине хурав илтĕмĕр? Мĕншĕн кирлĕ!)

Текстпа çакăн евĕр ĕçлени авторăн шухăш-туйăмне ăнланма, хитрелĕхе, сăнарлăха курма, çыравçăн пуплевне ăнланса ăша хывма майсем туса парать, ачасене шухăша витĕмлĕ те тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарса пырать, кирек мĕнле текстпа та хăйне кирлĕ пек усă курма вĕрентсе çитерет. Чăваш чĕлхи урокĕсенче текстпа ĕçленĕ май вĕренекен материал ачасемшĕн малашнехи пурнăçра кирлĕ пулнине туйса илме те майсем туса памалла.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Брусова Г.Ф.* Развитие речи учащихся при изучении имени прилагательного на уроках родного языка в чувашской школе: монография. – Чебоксары: Чуваш.гос. пед. ун-т, 2005. – 206 с.
2. *Давоян О.Н.* Работа с текстом на уроках русского языка как средство формирования коммуникативной компетенции учащихся // Педагогика: традиции и инновации: материалы III междунар. науч. конф. – Челябинск: Два комсомольца, 2013. – С. 83-85.

# ВОСПИТАТЕЛЬНЫЙ ПРОЦЕСС В ПОЛИКУЛЬТУРНОЙ СРЕДЕ СТУДЕНЧЕСТВА

**ВАСИЛЬЕВА Людмила Александровна**
кандидат филологических наук, доцент кафедры журналистики
заместитель декана по воспитательной работе
факультета русской и чувашской филологии и журналистики
**ХОРАСЬКИНА Галина Витальевна**
кандидат филологических наук, доцент кафедры журналистики
ФГБОУ ВО «Чувашский государственный университет им. И.Н. Ульянова»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

*В статье рассматриваются формы и методы воспитательного процесса в условиях поликультурной среды студенчества Чувашского госуниверситета. Уделено внимание реализации проекта Школы межэтнической журналистики, воспитанию посредством художественной литературы, взаимодействию различных форм и методов воспитания по формированию поликультурной компетенции обучающихся.*

**Ключевые слова**: поликультурное воспитание, воспитательная деятельность, Чувашский государственный университет, межэтническая журналистика, поликультурная компетенция, национальная литература, мировая культура.

Чувашская Республика представлена полиэтнической картиной самобытного сплава из 128 национальностей, где созданы 36 национально-культурных объединений, 22 из которых зарегистрированы официально в управлении юстиции. В России и за ее пределами активно работают 99 чувашских национально-культурных объединений. Для национально-культурных объединений республики в скором будущем распахнет свои двери Дом дружбы народов. Поликультурную среду студенчества Чувашского государственного университета имени И.Н. Ульянова дополняют бо-

лее 1000 студентов из 44 стран Азии, Африки, Латинской Америки, Европы и СНГ. Сегодня вуз является одним из крупных организаций в республике, объединяющий около 18 тыс. преподавателей, студентов, докторантов, аспирантов и ординаторов. Здесь обучаются молодые люди из разных стран с определенным менталитетом, своеобразным укладом жизни, традициями и обычаями. Для всех студентов – первокурсников (в том числе и иностранных) разработана специальная программа по адаптации в вузовском социуме. Деканат по работе с иностранными студентами, отдел по международным связям, преподаватели кафедры русского языка как иностранного, коллектив работников общежития № 4 Чувашского государственного университета, где проживают иностранные граждане, уделяют много внимания иностранным студентам. Среди 15 факультетов университета факультет русской и чувашской филологии и журналистики является ведущим центром по исследованию, развитию титульного языка и культуры Чувашской Республики, изучению русского языка как иностранного. На факультете обучается около 500 студентов из 30 регионов страны, работает более 50 преподавателей и сотрудников. Факультет является центром журналистского образования в республике, признанным лидером в исследовании языков и литератур народов Урало-Поволжья. В воспитательном процессе особое место занимает поликультурная компетенция, которая способствует усвоению знаний о культуре своего собственного народа, формированию представлений о многообразии культур в республике, России и мире, развитие умений и навыков продуктивного взаимодействия с носителями других культур. Воспитательная деятельность осуществляется на факультете разными методами и формами: посредством круглых столов, пресс-конференций, презентаций, онлайн-вебинаров, конкурсов, соревнований, встреч с известными людьми – артистами, политическими деятелями, журналистами, писателями и поэтами. Студенты факультета русской и чувашской филологии и журналистики – постоянные участники и победители различных конкурсов всероссийского и международного уровня, активные члены в волонтерской, донорской деятельности. Для отработки творческих и практических навыков они занимаются в творческих студиях: редакциях газет и журналов, на радио и телевидении, рекламных агентствах, книжных издательствах.

В последнее десятилетие с учетом новых социокультурных реалий мировая педагогическая мысль разрабатывает различные образовательные модели. В докладе международной комиссии ЮНЕСКО о глобальных стратегиях развития образования в XXI в. подчеркивается, что «одна из важнейших функций школы – научить людей жить вместе, помочь им преобразовать существующую взаимозависимость государств и этносов в сознательную солидарность. В этих целях образование должно способствовать тому, чтобы, с одной стороны, человек осознал свои корни и тем самым мог определить место, которое он занимает в мире, и с другой – привить ему уважение к другим культурам» [1]. В России поликультурное воспитание стало ответом на потребности многонационального населения, обострившейся проблемы потока иммигрантов из стран ближнего и дальнего зарубежья. В мире складывается непростая международная обстановка. Поликультурное воспитание призвано поддерживать многообразие больших и малочисленных наций в условиях глобализации современного мира. Оно является средством сохранения и развития этнических культур, включения их ценностей в практику воспитания и обучения и тем самым – решения актуальных проблем педагогики. Через поликультурное воспитание молодежь приобщается к национальной, общероссийской, мировой культурам в целях духовного обогащения, формируется умение жить в поликультурной среде.

В целях поликультурного воспитания на отделении журналистики третий год реализуется проект «Гильдии межэтнической журналистики» – Школа межэтничской журналистики. Проектом руководит выпускница факультета Светлана Кузнецова. В рамках образовательной программы «Опыт освещения межнациональных отношений молодыми журналистами» студенты знакомятся с этнокультурным многообразием Российской Федерации, особенностями освещения межнациональных отношений в средствах массовой информации, получают представление об этике этножурналиста, посещают национально-культурные автономии и национальные праздники. В процессе занятий проходят межрегиональные видеоконференции, встречи с руководителями национально-культурных объединений. Так, например, 22 февраля на встрече со студентами Школы межэтнической журналистики побывала Лидия Филиппова, начальник отдела этноконфессиональных отношений Министерства культуры, по делам национальностей и архивного дела Чувашской Республики. Как журналист с большим стажем редакторской и преподавательской работы, она поделилась опытом освещения тематики межнациональных отношений в медиа. 9 марта слушатели Школы межэтнической журналистики в стенах университета обсуждали с руководителем

Роскомнадзора по Чувашской Республике, старшим госинспектором РФ по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций Татьяной Евдокимовой некоторые правовые аспекты деятельности СМИ на межэтническом уровне. На встрече представитель Главы Чеченской Республики в Чувашии Талмас Манрукаев остановился на вопросах налаживания межнациональных, межконфессиональных и культурных связей между регионами страны. В ходе реализации проекта студенты публикуют свои материалы на страницах газет и журналов, выходят в теле- и радиоэфир региональных и федеральных СМИ, приобретают необходимые навыки освещения вопросов межнациональных отношений.

На протяжении 17 лет на факультете журналистики (на отделениях русской и чувашской журналистики) авторами настоящей статьи читались лекции и проводились практические занятия по истории чувашской литературы. Творчество таких чувашских поэтов и писателей, как К. Иванов, М. Сеспель, П. Хузангай, В. Митта, Ф. Уяр, Л. Агаков, Ю. Скворцов, А. Артемьев, Г. Краснов – яркий пример духовно-нравственного, культурно-просветительского, патриотического воспитания молодежи посредством художественного слова [2]. Жизнь и творчество поэта, переводчика, публициста, журналиста и общественного деятеля Петра Хузангая имеет огромное учебно-воспитательное значение для студентов. Он сделал очень много для укрепления дружбы между народами не только России, но и всего мира. Изучение многогранной деятельности народного поэта Чувашии вызывает у студентов чувство национальной гордости, и глубокого уважения к обычаям, историко-культурным традициям чувашского народа.

Студенты в поликультурной среде в процессе обучения и воспитания приобщаются к чувашской национальной культуре, общероссийской и мировым культурам, к познанию и уважению культур народов совместного проживания.

**СПИСОК ЛИТЕРАТУРЫ**

1. Образование: сокрытое сокровище // Доклад Международной комиссии по образованию для XXI века, представленный ЮНЕСКО. – Париж, 1997.
2. *Хораськина Г.В., Студенцов О.Р., Васильева Л.А., Гаврилов А.Д., Сильева О.И.* Литературно-художественные жанры на страницах республиканских газет (подведение Года литературы в Чувашской Республике) // Вестник Чувашского государственного педагогического университета. – 2016. – № 3(91). – С. 57-69.

# СЕМЕЙНЫЕ ЦЕННОСТИ ЧУВАШЕЙ (на примере пословиц о семье)

**ГЕРАСИМОВА Наталия Николаевна**
учитель чувашского языка и литературы
**ПЕТРОВА Людмила Алексеевна**
учитель чувашского языка и литературы
МБОУ «Средняя общеобразовательная школа № 20»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

*Россия велика и многолика. На ее бескрайних просторах в городах и селах проживают сотни тысяч людей самой разной национальности. И у каждого из них есть своя малая родина. Изучая историю родного края, мы познаем много нового и удивительного, в ней отражен богатый опыт народа, представления, связанные с трудовой деятельностью, бытом и культурой людей. Еще в старину о доме и семье говорили с большим уважением. Наверное, поэтому семьи на Руси были большие и дружные. Подтверждением тому являются пословицы: Икĕ çын - пĕр мăшăр, çичĕ çын – пĕр çемье. По представлениям древних чувашей, каждый человек обязательно должен был сделать два важных дела в своей жизни: поухаживать за стариками-родителями и достойно проводить их в «другой мир», вырастить детей достойными людьми и оставить их после себя крепко стоящими на ногах. Вся жизнь человека проходила в семье, и для любого человека одной из главных целей в жизни было благополучие его семьи, родителей и детей. Для чувашей семья являлась первым условием благосостояния. Только женатые люди в прошлом имели право голоса на сельских сходах, могли получить в надел землю, завести самостоятельное хозяйство, в котором необходимы были и мужские, и женские руки.*

**Ключевые слова:** менталитет, семья, пословица, воспитание, предки.

Мудрость, накопленная в народе веками, выражается в пословицах и поговорках. Особенно много таких народных изречений о семье. В них глубоко раскрывается мир семейных отношений. Создание семьи для чувашей – моральный долг каждого человека: Мăшăрпа тĕнче тăрать; Вĕçен кайăк та мăшăрлă. Холостые мужчины и незамужние женщины не обладали полными правами ни в семье, ни в обществе. В чувашском фольклоре они характеризуются отрицательно: Ват хĕр ячĕ усал ят; Авланман хусахран кулма хушнă. Чуваши считали, что с женитьбой торопиться не следует, а с замужеством лучше не затягивать: Çуралма васкаманнине авланма ан васка; Арçын ватăлмасть, хĕрĕн качча тухма васкамалла. Глава семьи нес моральную и материальную ответственность перед селением за поведение домочадцев: Мирте патша хуçа, килте арçын хуçа.

В старинных чувашских семьях жена была равноправна с мужем. Муж и жена уважали друг друга, разводы были большой редкостью. О положении жены и мужа в чувашской семье старики говорили: Хĕрарăм – кил турри, арçын – кил патши. С особой любовью и почетом относились к матери. Для чувашей это понятие священное. Это слово никогда не использовали в бранной речи: Анне – Кепе, унпа вăрçма юрамасть. Со дня рождения и до полного формирования ребенка в его воспитании решающую роль играла мать. Во взаимоотношениях мужа и жены главенствующая роль, безусловно, отводится мужу: Арăм тени упăшкинчен ан ирттĕр; Ар епле, йыш çапла; Ар çинче çăпата кантри çĕрмест. В традиционном чувашском мировосприятии муж и жена составляют неразрывное целое: Йĕп ăçта, çип унта; Упăшкипе арăмĕ – çӳпçипе хупăлчи; Арлă-арăмлă çыннăн пĕр çăвартан сурас пулать. Согласие и любовь являются одной из важнейших семейных ценностей чувашей: Килĕшӳ – кил илемĕ; Килĕштерсе пурăнни чул хӳмерен çирĕп; Ăçта юрату – унта çутă; Юратнă çĕрте – куç, ыратнă çĕрте – алă; Юратнă çыннăн кăлтăкĕ те палăрмасть. В чувашских пословицах встречаются ырă арăм – усал арăм «добрая жена – злая жена»: Ырă арăм – мул, усал арăм – чул; Ырă арçын пуçтарать, усал хĕрарăм салатать. В чувашских пословицах тăлăх арăм «вдова» вызывает жалость и сочувствие, а слово урçа «вдовец» характеризуется отрицательной оценкой: Тăлăх арăм пурнăçĕ тăварлă; Урçа упăшка – кашкăр упăшка.

Рождение ребенка чуваши считали одним из самых важных жизненных событий. Продолжение рода считалось одной из главных целей брака. И поныне, благословляя новобрачных, желают: «Иккĕн выртса виççĕн тăрăр». Радовались любому ребенку: и мальчику, и девочке. Желание иметь больше мальчиков, а не девочек появилось позднее, когда землю стали распределять по количеству мужчин в семье (в XVIII в.). Вырастить дочь или несколько дочерей, настоящих невест, было престижно. Ведь по традициям в женский костюм входило много дорогих серебряных украшений. И только в трудолюбивой и богатой семье можно было снабдить невесту достойным приданым. Чуваши издревле приветствовали многодетность: Сак тулли ача-пăча пултăр; Пĕр ача – çук ача, ик ача – çур ача, виç ача – пĕр ача. Что касается пола ребенка, предпочтение отдавалось сыновьям: Ĕнерен тына кĕтеççĕ, арăмран ывăл кĕтеççĕ. Интересуясь полом родившегося ребенка, чуваши спрашивали: Ылтăн тупнă-и, кĕмĕл-и? Отсутствие детей считалось несчастьем: Ачасăр пурнăç – калчасăр уй-хир. В воспитании детей чуваши отдавали предпочтение строгости, требованию безоговорочного послушания, раннему приобщению к труду: «Анне» теме вĕрентиччен итлеме вĕрент; Ачапчана пĕчĕклех тăн парса ĕçпе пиçĕхтер. Чуваши по детям судили о родителях: Амăшне пăх та, хĕрне ил; ашшĕне пăх та, ывăлне кай; Улми йывăççи кутнех ӳкет; Ырăран ырах пулать, усалтан усалах пулать. В чувашских селениях никогда не было брошенных детей, помощь им считалась благим делом: Тăлăх турата пăхса ӳстерни сăваплă ĕç.

Чувашский менталитет требует безграничного почитания родителей: Атте-аннерен хакли никам та çук тĕнчере; Атте-анне ирĕкĕнчен тухакан пуçне çухатнă. По отношению к отцу в традиционном чувашском мировосприятии закрепилось благоговейное почитание, а мать чуваши боготворят: Аçу чысне çухатсан хăвăн чысу çухалĕ; Аçу ятне ан варала; Анне хĕвелтен мала; Амăшне вĕрекен анчăк кашкăр кулли пулнă.

Одними из самых важных воспитателей детей были бабушки и дедушки. Девушка, выходя замуж, переезжала в дом к мужу. Поэтому обычно дети жили в семье с матерью, отцом и его родителями. Все важные проблемы в семье решали, советуясь друг с другом, обязательно прислушивались к мнению стариков: Асатте кил хушши тытать, асанне кил ăшши. В чувашских пословицах зафиксирована особая любовь к бабушке со стороны матери: Кукамай кучченеçĕ кулачăран тутлăрах; Кукамай ачашлать те, ăс парать. Чувашский менталитет требует особого почитания старых людей: Ватта курсан çĕлĕке ил; Ваттисем калаçнă чух пуçна чиксе итлесе лар.

О значении семьи, о ее значимости в жизни человека мудрый народ сложил немало пословиц и поговорок. Пословицы – это зеркало нашей жизни, нашей истории. Они могут рассказать нам

о прошлом лучше, чем исторические памятники. В старину семья воспринималась людьми как одна из главных человеческих ценностей, поскольку от единства, сплоченности и многочисленности родни зависело благосостояние людей. Наши предки поддерживали крепкие родственные связи, чтили семейные традиции и устои. Важнейшими семейными ценностями являлись: согласие, любовь, рождение детей, почитание родителей и стариков. На протяжении столетий главой семьи был муж. Он принимал самые важные решения, был кормильцем и авторитетом для жены и детей. Женщина была матерью и хранительницей очага. Нельзя забывать про важность общения детей с бабушками и дедушками, ведь именно они являются тем звеном, которое позволяет молодым прикоснуться к истории семьи.

**СПИСОК ЛИТЕРАТУРЫ**

1. *Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка / Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. – Чебоксары: Руссика, 1994-2000. – Т. 1-17.
2. Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем / Н.Р. Романов пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-стви, 1960. – 360 с.
3. *Волков Г.Н.* Чувашская этнопедагогика. Чебоксарский институт экономики и менеджмента. – Чебоксары, 2004. – 488 с.
4. *Енькка Е.В.* История и культура родного края: учебное пособие. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-ство, 2015. – 240 с.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕНЧЕ ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНТЕС ĔÇРИ ÇĔНĔ ТУРТĂМСЕМ

**ЕРМОЛАЕВА Елена Николаевна**
историпе филологи факультетĕнчи 5 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра вĕренекенсен çитĕнĕвĕсене хаклас ĕçри хăш-пĕр çĕнĕлĕхсене пăхса тухнă.*

**Тĕп сăмахсем:** лингводидактика; Федераллă патшалăх пĕтĕмĕшле пĕлӳ памалли тĕп вĕрентӳ стандарчĕ; рефлекси; портфолио; балпа рейтинг системи.

Патшалăхри социаллă лару-тăру тĕпрен улшăнни вĕрентӳ ĕçне те çĕнĕлле йĕркелеме хистет. Шкулсенче вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсем вăя кĕрсе пыраççĕ. Вĕсене йышăнни шкул ĕçне тĕпрен улăштарса йĕркелеме хушать. Ку вара тӳрремĕнех вĕренӳ тĕллевĕсемпе задачисене çĕнĕлле палăртассипе çыхăннă. Апла пулсан вĕренӳ хатĕрĕсем те, хаклав йĕркипе виçи те хальхи критерисене тивĕçтермелле. Çавăнпа та çĕнĕ туртăмсене тĕплĕн тишкерни кирлĕ. Педагогикăра ку ыйтупа чылай тĕпчев ирттернине, çĕнĕ идейăсемпе шухăшсем çуралнине асăнмалла. Чăваш лингводидактикинче те ку ыйтусене хускатман мар [1].

Хамăрăн статьяра эпир чăваш шкулĕсенче тăван чĕлхене вĕрентес ĕçри çĕнĕ туртăмсемпе çыхăннă ачасен çитĕнĕвĕсене хаклас ыйтăвăн хăш-пĕр саманчĕсене пăхса тухас терĕмĕр.

Малтанхи стандартра вĕренӳ содержанине ытларах тимлĕх уйăрнă пулсан, çĕнĕ стандарт шкул пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне пĕтĕмĕшле пăхма сĕнет. Паянхи шкулта ачана пĕлӳ пани çеç çителĕксĕр. Унăн шухăшлавне йĕркелесе аталантармалла, ăна хăй тĕллĕн пĕлӳ пухма вĕрентсе пымалла, унпа пурнăçра тĕрĕс усă курма хăнăхтармалла. Ачан кирлĕ информацине шыраса тупма, суйласа илме, унпа пĕлсе усă курма хăнăхса пымалла.

Çапла вара, вĕрентӳ ĕçĕнче малашне ачан тĕпчесе е практикăра пĕлесси мала тухать. Çакна меслетçĕсем те çирĕплетеççĕ. «…актуальным становится обеспечение развития универсальных учебных действий как собственно психологической составляющей фундаментального ядра образования наряду с традиционным изложением предметного содержания конкретной дисциплины» [2, с. 52].

Тепĕр майлă каласан, ачасене вĕренӳ ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене алла илме пулăшмалла,

хăйсем тĕллĕн вĕренме, аталанма хатĕрлемелле. Çакă вара ачасен çитĕнĕвĕсене пахаласа хаклас ĕçе те урăхла пăхма хистет. Ачасен ĕçне хаклас тĕлĕшпе кулленех хĕрӳ тавлашу пырать, ку ĕçе тăтăшах улшăнусем кĕртеççĕ. Пĕрремĕш тата иккĕмĕш ăрури стандартсенче те ку тĕлĕшпе палăрмаллах улшăнусем пурри курăнать.

Çĕнĕ стандартпа килĕшсе тăракан хаклавра пĕр-пĕр çирĕпленнĕ нормативпа танлаштарса хакласси, япăх пĕлӳ илнĕшĕн айăпласси, ачасене вăйлă тата вăйсăр ушкăнсене пайласси, учитель вĕренекен пирки хăйĕн субъективлă шухăшне каласси, хăйĕн влаçне кăтартасси çук. Вĕсен вырăнне ачасен пĕлӳ илес туртăмне аталантарни, йăнăшсене тишкерме, вĕсенчен хăтăлса пыма вĕрентни, пĕлӳ илни мĕн тума кирлине, мĕншĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине уçса пани, ачасен пĕлӳ шайне палăртни, вĕсене хăйсене хаклама хавхалантарни тĕпре пулмалла.

Çĕнĕ стандартпа килĕшӳллĕн, ачасен çитĕнĕвĕсене хаклас ĕç вĕренекенсем мĕнле результатсем патне çитсе тухмаллипе тачă çыхăннă. Вĕсем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ: харкамлăх результачĕсем, предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем, предметăн пайăрмлă результачĕсем. Результатсен кашни ушкăнĕн йĕркеленĕвĕн шайне епле палăртасси вĕсен хăйнеевĕрлĕхĕнчен те, ачасен ӳсĕм уйăрмлăхĕсенчен те килет [4].

Тĕслĕхрен, харкамлăх результачĕсен йĕркеленĕвĕн шайне пĕлес тесен ача рефлекси ыйтăвĕсемпе, пĕр-пĕрне хакламалли хут, рефлекси карттипе усă курма пултарать.

**Рефлекси йĕркелеме пулăшакан ыйтусем** çакăн пек пулма пултараççĕ:

1. Эпĕ хама мĕншĕн ырлатăп?
2. Мана мĕн тĕлĕнтерчĕ?
3. Эпĕ мĕн тума пултараймарăм? Мĕншĕн?

**Пĕр-пĕрне хакламалли хута** çапла йĕркелеме сĕнеççĕ:

I пай (ĕçе тĕрĕслекен)

Творчествăлла ĕç/ портфолио/, шырав ĕçне тĕрĕсленĕ чухне чи кирли … тесе шутлатăп. Унсăрăн … асăрхаттарса хăварас килет. Хамран … хушас килет. Ман шутпа, … паллă лартма пулать.

II пай (ĕçе пурнăçлакан)

Эпĕ … килĕшетĕп/ килĕшместĕп. Ĕçе … хушас тетĕп. Лартнă паллăпа килĕшетĕп/килĕшместĕп.

**Рефлекси картти** çапла пулма пултарать. (Унпа усă курса ачан хăй урокра мĕнле ĕçленине пĕтĕмĕшле хаклама май пулать).

**РЕФЛЕКСИ КАРТТИН ТĔСЛĔХĔ**

| Хуравсене суйласа ил | Урокра миçе ача | + | - | Хуравлама йывăртарах |
|---|---|---|---|---|
| *1.* Урокра мĕнле ĕçлени килĕшрĕ | | | | |
| *2.* Хам ушкăнра мĕнле ĕçленипе кăмăллă | | | | |
| *3.* Мана тивĕçтерекен хăнăхтару пулмарĕ | | | | |
| *4.* Урок питĕ кĕске пулчĕ | | | | |
| *5.* Урокра эпĕ ывăнтăм | | | | |
| *6.* Манăн кăмăл улшăнчĕ | | | | |
| *7.* Урокра панă материал интереслĕ | | | | |

**Портфолио** мелĕ тесе вĕренӳ процесĕпе унăн результачĕсем çинчен кирлĕ информаци пуçтарса тишкернине, системăланине калаççĕ. Ку мелпе усă курса вĕрентекен ачасен пĕлĕвне хаклама, вĕсемпе хире-хирĕçле çыхăну тытма пултарать.

Кунсăр пуçне юлашки çулсенче **рейтингпа паллă системи** вăя кĕрсе пырать. Вăл ачасен пĕтĕмĕшле пĕлĕвне палăртма, вĕсен пĕлĕвне ӳстерме май парать, учителе хăйĕн ĕçне епле йĕркелемеллине, мĕне ытларах тимлемеллине кăтартать.

Ачасен ĕçне хакланă чухне вĕсен предмет результачĕсене çеç пăхмалла мар, ытти предметсемпе мĕн пĕлнине, ушкăнра мĕнле ĕçленине, хăйĕн шухăшĕсене калама, хăй тĕллĕн ĕçлеме пултарнине шута илмелле. Хаклавра ачасем материала тишкерме пултарни те пĕлтерĕшлĕ пулмалла.

Ачасене мĕншĕн вăл е ку паллă илнине критерисем тăрăх сăлтавламалла. Критерисемпе вĕренекенсене хăйсене те, ашшĕ-амăшĕсене вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнчех паллаштармалла. Ачасене харкам ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн хаклама, пĕр-пĕрин ĕçне хак пама вĕрентмелле. Учитель вара

ачасем лартнă паллăпа хăй лартнине танлаштарса пĕтĕмĕшле мĕншĕн çавăн пек паллă лартнине ăнлантарса парать (комментари).

Ачасен ĕçĕсене çĕнĕ стандартпа килĕшӳллĕн хаклани урокăн тĕрлĕ тапхăрĕнче пулма пултарать. Традицилле тата çĕнĕлле ирттерекен уроксенче ачасен ĕç-хĕлне хаклас йĕркере курăмлă уйрăмлăхсем палăраççĕ.

**ТРАДИЦИЛЛЕ ТАТА ÇĔНĔЛЛЕ ИРТТЕРЕКЕН УРОКСЕНЧЕ АЧАСЕН ĔÇ-ХĔЛНЕ ХАКЛАС ЙĔРКЕРИ УЙРĂМЛĂХСЕМ**

| Урокăн пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ | Традицилле урок | Çĕнĕ стандартпа килĕшӳллĕ ирттермелли урок |
|---|---|---|
| Ачасен ĕçне хаклас туртăм | Ачасем урокра мĕнле ĕçленине учитель хак парать | Ачасем хăйсем результачĕсене харкам тĕллĕн хаклаççĕ, пĕрле вĕренекенсен ĕçĕсене те хаклама пултараççĕ |
| Урок пĕтĕмлетĕвĕ | Ачасем мĕн астуса юлнине учитель тĕрĕслет | Рефлекси иртет |
| Киле ĕç пани | Килте мĕн тумаллине учитель калать, ăнлантарса парать (ытларах чух пурин валли те пĕр пек ĕç пулать). | Учитель панă темиçе хăнăхтаруран ачасем хăйсем пĕлĕвне кура суйласа илеççĕ |

Çапла вара, ачасен пĕлӳ-ăслай шайне: çитĕнĕвĕсене палăртасси вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕпе килĕшӳллӳ пулса пымалла. Хаклав меслечĕсемпе формисем ачасене активлăхне ӳстермелле. Вĕсем харкам çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене хăйсем тишкерсе хак пама, малашнехи вĕренӳ задачисене те хăйсемех палăртма вĕренсе пыччăр.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Артемьева Т.В.* Чăваш чĕлхине упраса хăварас, лингводидактикине аталантарас ыйтусем тавра // Халăх шкулĕ. – Народная школа. – 2016. –№ 2. – С. 20-23.
2. *Асмолов А.Г., Бурменская Г.В., Володарская И.А. и др.* Как проектировать универсальные учебные действия в начальной школе. От действия к мысли: Пособие для учителя. (Стандарты второго поколения) – М.: Просвещение, 2010. – 152 с.
3. *Демидова М.Ю., Иванов С.В. и др.* Оценка достижения планируемых результатов в начальной школе. Система заданий: в 2 ч. – М.: Просвещение, 2010. – Ч. 1. – 215 с.
4. *Краснова С.Г.* Специфика профессиональной деятельности педагога-психолога в условиях реализации новых образовательных стандартов // Халăх шкулĕ. – Народная школа. – 2012. –№ 6. – С. 62-64.

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК КАК ХРАНИТЕЛЬ ЭТНОПЕДАГОГИЧЕСКОЙ КУЛЬТУРЫ НАРОДА

**ИГНАТЬЕВА Анисия Павловна**
Заслуженный учитель Чувашской Республики
учитель чувашского языка и литературы
МБОУ «Средняя общеобразовательная школа № 12»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

*В статье рассматриваются роль чувашского языка в формировании этнопедагогической культуры народа, пути сохранения и развития языка, а также его использование в современной практике воспитания.*

**Ключевые слова:** этнопедагогическая культура, языковая среда, чувашский язык.

Этнопедагогическая культура – социально-педагогический феномен, характеризующий меру освоения традиционной педагогической культуры народа, понимания воспитательной сущности ее ценностей, их адекватного использования в современной практике воспитания. Этнопедаго-

гическая культура представляет собой диалектическое единство объективной и субъективной сторон. Объективная сторона – традиционная педагогическая культура общества. Субъективная – этнопедагогическая культура личности, объединяющая этнопедагогическое сознание, этнопедагогическое мышление, этнопедагогическую деятельность, этническую специфику которым придает менталитет нации. Объективные условия, в которых исторически складывалась судьба народа, формируют черты характера, миросозерцание, миропонимание, ценностные ориентации, которые в определенной степени составляют основу важнейших педагогических идей народа.

«Родной язык – хранилище духовной культуры народа. Культурное наследие народа неизбежно находит отражение в его языке» [1, с. 3]. В языке отражаются и многие грани духовности. Нравственный облик чувашей определяли, например, такие качества, как скромность, трудолюбие, почитание старших, бережное (и даже трепетное) отношение к природе, осуждение лени и расхлябанности. У академика Г.Н. Волкова есть поучительный рассказ на эту тему – «Самое большое несчастье». Показательно то, какими словами осуждает чувашский язык лень: юлхав, кахал, наян, ӳркенчĕк. Так автор рассказа называет лень самым большим несчастьем человека.

Язык главный признак нации. Это аксиома. Язык является первейшей предпосылкой существования любой нации, важнейшим компонентом и носителем духовной культуры, основной формой проявления национального самосознания. «Язык – величайшее, мистическое явление человеческого существования. Я даже не знаю, могут ли быть какие-то достоверные объяснения его появлению. Язык дан людям для того, чтобы они, поняв друг друга, могли жить вместе» [5, с. 351].

Создание языковой среды – один из путей сохранения языка. Следует об этом задуматься и начать говорить на чувашском языке с детьми, родственниками и знакомыми. Подобно тому как не влезая в воду невозможно учиться плавать, подобно этому без активного использования в речи невозможно научиться говорить на неродном языке. «Нельзя упускать из виду и то, что пассивное знание языка в соответствующей ситуации достаточно быстро может стать активным средством общения» [2, с. 71].

«Нет секрета в том, что каждый человек рождается на свет, не владея никаким языком. И в принципе его можно обучить любому языку. Мать, разговаривая с ребенком, просто называет предмет и показывает его, побуждая к действию, демонстрирует само действие. Именно материнский язык призван стать связующим звеном между поколениями» [8, с. 147].

Ни одной матери не приходит в голову при этом объяснять правила грамматики, будь то англичанка, русская или чувашка. Это и есть аудиовизуальная методика обучения языку, существующая с древних времен у каждого народа, у каждого племени. Сегодняшнее состояние чувашского языка таково, что полагаться на одни только усилия семьи в этом вопросе невозможно. Причина в том, что большая часть молодых чувашских семей не владеет родным языком, а значит, не может научить ему своих детей.

Естественно, что отсутствие языковой среды отрицательно влияет на изучение чувашского языка. А чем мы можем мотивировать необходимость изучения чувашского языка? Необходимо призывать и детей, и их родителей к осознанию того факта, что мы являемся определенным этносом не только в силу особенностей нашей внешности, но и в силу того, что наши предки передали нам особое богатство – наш язык, отличительный от всех остальных языков на земле. Здесь уместно упомянуть о гражданской ответственности каждого из нас за духовное воспитание подрастающего поколения, что будут в дальнейшем ценить наши дети, какими постулатами они будут руководствоваться в жизни: любовью, уважением к ближнему, вниманием к окружающим, терпимостью, примером нашего с вами поведения. Необходимо привить само осознание того, что родной язык также уникален, интересен по своей структуре и лексическому богатству.

Сохранение и возрождение родного языка является одной из самых актуальных проблем чувашского народа. Эта тема часто обсуждается на страницах газет, на телевидении и радио. Она волнует всех, кто неравнодушен к родной истории, национальным традициям и тревожится за будущее нации.

Необходимо признать тот факт, что для сохранения и развития чувашского языка в последние годы сделано немало. Приняты законодательные акты, в детских садах и школах чувашский язык стали изучать как государственный все граждане республики, появились различные премии в этой области, ежегодно проводятся олимпиады региональной компетенции. Но еще раз хочется подчеркнуть, что состояние языка, его жизнеобеспечение, функционирование зависит от каждого, и, прежде всего, от семьи. Необходимо включить всю волю и желание, развить свой патриотизм, чтобы научить говорить своих детей и внуков на родном языке.

Мужествен, героичен Г.Н. Волков в защите чувашского языка, великолепен он при этом своим примером щедрости и вниманием по отношению к другим языкам. «Кил илемĕ» («Свет в родном окне») [6], «Асанне калавĕсем» («Бабушкины рассказы»») [3], «Чăваш чăвашпа чăвашла калаçнинче – асамлă хăват» («В беседе чуваша с чувашом – волшебная сила») [4] – эти книги Г.Н. Волкова необходимо иметь во всех школьных библиотеках республики. Их обязаны знать учителя. Мало того, их необходимо включать в образовательную программу. Цитатами из них важно украшать кабинеты чувашского языка. Чувашский язык, воспитание в процессе обучения ему – в центре этнопедагогизации целостного процесса учебно-воспитательной работы в школе.

«Особенное, определяющее место в числе факторов народного воспитания занимает слово: родное слово (материнский язык), а в полиэтнической России – двуязычие, а с точки зрения включения в мировую цивилизацию – по меньшей мере, трехязычие. Для реальной гармонизации межэтнических связей необходимо в корне изменить отношение к местным языкам. Многолетний опыт показывает, что там, где национальные языки не подвергаются дискриминации, не игнорируются, не находятся в пренебрежении, охотно изучаются русскоязычными – не возникает проблемы с регулированием отношений между детьми разных национальностей» [7, с. 41].

Большую роль в поддержании мотивов к изучению чувашского языка играет использование на уроках информации следующего рода. Ученикам следовало бы знать, что первородное слово как природный дар обеспечивает естественное функционирование мозга и всего организма, что в свою очередь способствует развитию интеллекта. Размышляя об удивительных духовных богатствах родного языка, К.Д. Ушинский пришел к выводу о том, что «язык, который дарит нам народ, один уже может показать нам, как бесконечно ниже стоит всякая личность, – как бы образована и развита ни была, как бы ни была она богато одарена от природы, – перед великим народным организмом» [9, с. 146].

Увлеченность языком местного населения, высокая культура и образованность, – вот что должно отличать нас, жителей Чувашии, если мы действительно хотим быть успешными. Знание языка не только дань уважения чувашской культуре, но и показатель нашей образованности.

Многоязычие, где ведущее место занимает родной чувашский язык, – вот могущественное средство, которое позволяет стать сильнее, смелее, конкурентоспособнее.

**СПИСОК ЛИТЕРАТУРЫ**

1. *Андреев И.А.* Родной язык – хранилище духовной культуры народа // Народная школа. – 2006. – № 2. – С. 3-5.

2. *Андреев И.А.* Национальное образование в рамках президентской программы «Новая школа» // Народная школа. – 2007. – № 4. – С. 70-72.

3. *Волков Г.Н.* Бабушкины рассказы. (На чувашском языке). – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 2005. – 40 с.

4. *Волков Г.Н.* В беседе чуваша с чувашом – волшебная сила. (На чувашском языке) // Сквозь звезды видна путь-дорога, по ней нам идти… – Чебоксары, 2002. – С. 34-45.

5. *Волков Г.Н.* Педагогика любви. Избранные этнопедагогические сочинения: В 2 т. – М.: Издательский Дом Магистр-пресс, 2002. – Т. 2. – 460 с.

6. *Волков Г.Н.* Свет в родном окне: Сказки, рассказы и очерки. На чувашском языке. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 2007. – 127 с.

7. *Волков Г.Н.* Чувашская этнопедагогика: Чебоксары, 2004. – 488 с.

8. *Волков Г.Н.* Этнопедагогика – педагогика национального спасения // Этнопедагогика – педагогика жизни. – Элиста, 2001.

9. *Ушинский К.Д.* Избр. пед. соч.: В 2 т. – М.: Педагогика, 1974. – Т. 1 / под ред. А.И. Пискунова. – 408 с.

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕНЧЕ АЧАСЕН АКТИВЛĂХНЕ ЎСТЕРЕССИ

**ИЛЬИНА Валентина Петровна**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
**ИСАЕВА Любовь Петровна**
чăваш чĕлхипе литература учителĕ
Шупашкарти «46-мĕш гимнази» МБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра ачасен урокри активлăхне ўстермелли условисене, чăваш чĕлхи урокĕсенче irttermelli дидактика вăййисемпе вĕсен тĕллевĕсене çырса кăтартнă.*

**Тĕп сăмахсем:** урок, дидактика хатĕрĕсем, вăййăсем, меслетсемпе мелсем.

Халăхăн культурăпа творчество аталанăвĕ чĕлхепе çыхăннă. Çавăнпа кирек камăн та хăйĕн чĕлхине лайăх пĕлмелле, унăн пуянлăхне май килнĕ таран ăса хывассишĕн тăрăшмалла. Урок – вĕрентў ĕçĕн тĕп форми. Вăл интереслĕ, çав вăхăтрах тухăçлă irttĕр тесе учитель тĕрлĕ енлĕ меслетсемпе усă курать. «Ача формăсемпе, сăнарсемпе, сасăсемпе, туйăмсемпе шухăшлать. Кам урăхла шухăшлаттарма тăрăшать, вăл унăн ăс-кăмăлне ытахальтен тата сиен кўрсе ирĕксĕрлени пулать», – тенĕ К.Д. Ушинский.

Урок тĕсĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: урок – калаçу, урок – викторина, урок – КВН, урок – экскурси тата ытти те. Çак меслетсемпе йĕркеленĕ урок ачасен кăмăлне çĕклет, вĕренес туртăмне аталантарать. Урокра тĕрлĕрен ĕç пурнăçлани, çав вăхăтрах пĕр ача та пушă тата ĕççĕр аптраса ларманни вĕренекенсен ывăннине irttерсе, вĕсене тухăçлăрах ĕçлеме май парать.

Ачасен активлăхне ўстермелли тепĕр мел вăл – дидактика вăййи. Дидактика вăййисем те ачан ăс-тăнне аталантараççĕ. Аса илер-ха педагогика классикĕ Я.А. Коменский каланине: «Вăйă ачасене вĕренўре çăмăллăх парать, малашне те вĕренме хавхалантарать». Вăйă выляни – ачасемшĕн савăнăç. Вĕсенчен кашниех вăйăра мала тухасшăн, çĕнтерўçĕ ятне илесшĕн. Çав самантрах вăйăсенче ача хăй умĕнче тăракан йывăрлăхсене çĕнтерме, юлташĕсене пулăшма хăнăхать. Вăйăсемех грамматика пĕлĕвне тарăнлатма, тĕрĕс калаçас, çырас хăнăхусене аталантарма пулăшаççĕ. Уроксенче çак мелсемпе усă курас тесен, ансат та çăмăл вăйăсем шыраса тупмалла. Вăйăсене irttернĕ чухне темĕнле дидактика хатĕрĕ те кирлĕ: теттесем, карточкăсем, ўкерчĕксем, таблицăсем, ваттисен смахĕсем… Сăмахран, падеж системине вĕрентнĕ чух кăтарту таблицисем питĕ выранлă. Пуплев пайĕсене вĕреннĕ чух тĕрлĕ картинăсем пулăшаççĕ. Акă глагол çинчен ăнлантарнă чух А. Степановăн «Тăрнасем вĕçеççĕ», Н. Сверчковăн «Çуркунне пулать» тата ĕçе кăтартакан ытти картинăсемпе усă курма пулать. Кунта ачасем глаголсене тупса палăртаççĕ.

**У.:** Эсир ўкерчĕк çинче мĕн куратăр?

**А.:** Тăрнасем вĕçеççĕ.

**У.:** «Вĕçеççĕ» глагол хăш вăхăтра?

**А.:** Хальхи вăхăтра.

Япала ячĕсене вĕреннĕ чух тĕрлĕрен сăмахсемпе кластер е синквейн туни те пулăшать ачасене.

Ачасене харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтаракан меслетсемпе мелсем суйласа илмелле. Çавăнпа та учителĕн валеçў хатерĕсем те (ўкерчĕксем, карточкăсем тата ытти те) пулма пултараççĕ. Вĕсем ачасене ытларах шухăшлама, тимлĕ ĕçлеме хăнăхтарччăр.

Дидактика хатĕрĕсене вара ачасен хăйсен е учительпе пĕрле тусан лайăхрах та. Мĕншĕн тесен кун пек чухне ачасен выляс кăмăлĕ татах та пысăкланать, хăйсене кăтартасси енчен те вĕсем айккинче юлмаççĕ. Кун пек чухне вĕрентекенĕн тĕп ĕçсене пурнăçласан та çитет:

– вăйă ятне асăнмалла;
– мĕнле материалпа усă курмаллине каламалла;
– мĕне асра тытмаллине, мĕнле йывăрлăхсем пулассине асăрхаттармалла;
– тĕслĕх илсе кăтартмалла.

Çапла вара ăмăртнă е вылянă чух ача – вĕренекен, хакланă чух – вĕрентекен. Çакă вăл ачан пĕлĕвне аталантармалли çул-йĕр, активлăхне ўстермелли меслет те. Пĕрле ĕçлени учителĕн

вĕрентӳ юхаменчи йĕркелӳçĕ вырăнне çирĕплетет, унăн профессилле авторитетне çĕклет, пĕрлĕхлĕ коллектив тума май парать, коллективра туслă, çав хушăрах ĕçлĕ хутшăнусем тăвать.

Халĕ хăш-пĕр вăййасене те илсе кăтартас килет.

«Астуса юл!» Учитель ачасене пĕр-пĕр сăвă вуласа парать. Вĕренекенсен сăвăра тĕл пулакан ĕç-хĕлсене астуса юлмалла. Хыççăн вĕсене тетрадь çине çырса хураççĕ. Кам нумайрах çырса тухать, çав мала тухать.

Тĕллевĕсем: тимлĕхе аталантарасси, ĕç-хĕл çинчен туяннă пĕлӳсене çирĕплетесси.

«Ăçта мĕн çитĕнет?» Вылякансем виçĕ ушкăна пайланаççĕ: «Пахча çимĕç», «Ӳсен-тăран», «Тыр-пул». Учитель пĕр-пĕр тыр-пул, ӳсен-тăран, пахча çимĕç ятне асăнать. Вăл хăш «ушкăнра» çитĕнет, çавсем алă çĕклеççĕ.

Учитель «урпа» тесен «Тыр-пул» ушкăн алă çĕклет, «купăста» тесен, «Пахча çимĕç» аллине çĕклет тата ытти те. Кам йăнăшать ( тĕрĕс мар алă çĕклет е çĕклемесĕр юлать), очко çухатать. Хăш ушкăнăн очкосен шучĕ ытларах, çав çĕнтерет.

Тĕллевĕсем: ачасен пуплевне аталантарасси, ăс-тăна çирĕплетесси.

«Çивĕч куç». Учитель ачасен умне тĕрлĕ япаласем ӳкернĕ баннер кăларса çакать (е проекторпа экран çинче кăтартать). Вăл ачасене ӳкерчĕксем çине тимлĕн сăнаса пăхма, япаласене астуса юлма ыйтать. Ачасем ӳкерчĕк çине 1-2 минут хушши пăхаççĕ. Хыççăн ӳкерчĕклĕ плаката учитель тепĕр майлă çавăрса хурать. Кам мĕн чухлĕ астуса юлнине тетрадь çине çырса хурать. Пуринчен те нумайрах астуса юлни çĕнтерет.

Тĕллевĕсем: тимлĕхе аталантарасси, сăмах енчĕкне пуянлатасси.

«Кирлĕ сăмахсем». Учитель пĕр-пĕр сăмах тупса калать. Вылякансем çак сăмахри кашни сас паллипех япала ячĕсем тупса çыраççĕ. Вĕрентекен тупса панă сăмахра миçе сас палли, ачасен сăмахĕсенче те çавăн чухлех пулмалла.

Тĕллевĕсем: пуплеве аталантарасси, вĕреннĕ материала çирĕплетсе хăварасси.

Тăван чĕлхен тĕрлĕ ыйтăвĕене вĕрентнĕ чух урокра вылякан вăйăсем ытти дидактика вăййисенчен уйрăлса тăраççĕ: вĕсем чĕлхери сасăсемпе (е сас паллисемпе), сăмахсемпе, предложенисемпе çыхăннă, вĕренекенсен пуплевне аталантарма пулăшаççĕ. Çавăнпа кунашкал вăйăсене сăмах е чĕлхе вăййи теме май пур.

Урокра вылякан сăмах вăййисем çĕнĕ материала çăмăлрах, ытлашши тертленмесĕрех ăнланса илме, ăша хывма пулăшаççĕ. Кирек мĕнле вăйă та ачасен пассивлăхне сирсе яма, вĕренекен материалне интересленме хистет; вăйă выляса ăса хывнă чĕлхе материалĕ ачан ăс-тăнĕнче тарăн та нумайлăха çирĕпленсе юлать.

## УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

1. *Абрамова Г.В., Краснова Н.А., Печников О.И., Мулюкова Е.А., Гурьева Р.И.* Примерная программа для 5-9 классов русских школ: «Чувашский язык». – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2014. – 58 с.

2. *Андреев И.А.* Хальхи чăваш чĕлхи: Синтаксис. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. – 334 с.

3. *Андреев И.А., Иванова Э.Г.* Вырăс шкулĕн 5-мĕш класĕнче чăвашла вĕрентесси: Методика кăтартăвĕсем. – Шупашкар, 2001. – 71 с.

4. *Ванюшкина З.А.* Чăваш чĕлхипе пĕтĕмлетӳ тата асаилӳ урокĕсенче irttermelli ĕçсем. – Шупашкар, 2012. – 68 с.

5. *Горшков А.Е.* Чăваш чĕлхи: лексика, фразеологи, пуплев культури: Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. – 137 с.

6. *Кульев О.Г.* Тăван ен культури: 5 класс.– Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. – 126 с.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔН ВĂТАЛĂХ КЛАСĔСЕНЧЕ АЧАСЕН СĂМАХ ЙЫШНЕ АТАЛАНТАРАС ĔÇРЕ ХĂНĂХТАРУСЕМПЕ УСĂ КУРАССИ

**КОЗУКОВА Анастасия Ярославовна**
историпе филологи факультетĕнчи 5 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра чăваш шкулĕнче ачасен сăмах йышне пуянлатмалли меслетлĕхĕн хăш-пĕр уйрăмлăхĕсене çырса кăтартнă. Ку ыйту çивĕчлĕхне палăртнă. 5-мĕш класра вĕренекенсен словарьне тишкернĕ. Лексикологине вĕреннĕ чухне сăмах йышне ӳстерес ĕçĕн формисене асăннă.*

**Тĕп сăмахсем:** чăваш шкулĕ, лексикологине вĕрентесси, сăмах йышĕ, активлă словарь, аталантару, ĕç формисем.

Тăван пуплев кирек хăш халăх çыннишĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тăван чĕлхене куллен илтсе, пуплесе эпир темиçе пин çул аталанса пынă чĕлхен вăрттăнлăхне туйма вĕренетпĕр. Пуплеври сăмах йышĕ пуян пулни вара ăна илемлĕрех, илĕртӳллĕрех, итлекене йăлăхтармалла мар йĕркелеме пулăшать [4].

Хальхи вăхăтра ачасен сăмах йышне аталантарас тĕлĕшпе чылай йыврлăх тухса тăрать. Шкулта вĕренме пуçласан ачасен пуплевĕ пуянланса, илемленсе пымалла пек, анчах тепĕр чух унăн пуплевĕ çав шайрах юлнине е вăл ытла та çӳпĕллĕ калаçма пуçланине асăрхатпăр. Кун сăлтавĕсем шутĕнче меслетçĕсем çаксене палăртаççĕ: 1) вĕрентекен материала ачасем патне илсе çитерейменни; 2) вĕреннине çителĕклĕ таран çирĕплетсе хăварайманни; 3) пуплеве аталантарассипе çыхăннă ыйтусене чăваш чĕлхи программипе учебникĕсенче кирлĕ таран пăхманни; 4) ачасен чунĕнче тăван чĕлхен пĕлтерĕшĕ мĕн таран пысăк пулнине туйса илме, ăна ăнланса илме пулăшайманни т. ыт. те. Халĕ вĕренекенсем сахал вулаççĕ, çыраççĕ. Нумай чухне тата орфографи правилисене пăсса çыраççĕ. Çапла вара ачасен пуплевне аталантарасси, вăл шутра сăмах йышне пуянлатасси те, хальхи вăхăтра çивĕч ыйтусенчен пĕри пулать, çавăнпа эпир чăваш наци шкулĕнче лексикологие вĕрентнĕ май ачасен сăмах йышне аталантарас ĕç йĕркине палăртма, ăнăçлă мелсемпе меслетсене кăтартма тĕллев лартрăмăр.

Сăмах – питĕ кăткăс пулăм. Сăмах йышĕ пуянни пуплев тата ăс-тăн аталанăвĕн çӳллĕ шайне кăтартать. Сăмах этеме вăй-хал, шанчăк парать. Çапла вара, сăмах йышне пуянлатасси, аталантарасси вĕренекенсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тухать. Çĕнĕ сăмахсемпе паллашнă май вĕренекен çĕнĕ ăнлавсене ăса хывать, унăн ăс-тăнĕ аталанать, çивĕчленет, тишкерӳ-пĕтĕçтерӳ, пĕтĕмлетӳ хăнăхăвĕсем туптанаççĕ. Словарь ĕçĕ сăмах йышне пуянлатассипе пĕрлех кашни сăмахăн пĕлтерĕшне уçса парассипе, вĕсене пуплевре ăнăçлă, тивĕçлĕ усă курма хăнăхтарассипе çыхăннă.

Ачасен сăмах йышне аталантарас ĕç ăнăçлă пултăр тесен, вĕсен активлă словарь шайне пĕлсе тăни пĕлтерĕшлĕ. Вăтам классенче сăмах йышне аталантарасси çинчен калаçнă чух çакна асра тытмалла: 11-12 çулхи ачасен лексики пуянах мар, вăл нумай-нумай сăмаха, çав шутра тĕрлĕ пуплев пайне кĕрекеннисене, пĕлеймест-ха [2].

Çак ӳсĕмри ачасен сăмах йышĕн пуянлăхне тĕплĕнрех пĕлес тĕллевпе эпир Муркаш районĕнчи Калайкасси вăтам шкулĕн 5-мĕш класĕнче тĕпчев ирттертĕмĕр. Тĕпчевре ачасен сăмах йышне сăнаса палăртни, вĕсен çыру ĕçĕсене тишкерни тĕпре пулчĕ. Сăнав ачасем урокра, тăхтав вăхăтĕнче тата ирĕклĕ хутшăнура мĕнлерех сăмахсемпе усă курнине тĕпчеме май пачĕ. Тĕпрен илсен, ачасен активлă словарĕн шайĕ вăтам. Вĕсем хăйсен активлă словарĕнчи сăмахсене тĕрĕс калама пĕлеççĕ, вырăсларан йышăннă сăмахсене калама-çырма вĕренсе çитнĕ (трактор, парта, кофе, бригада, журнал, дело, циркуль, адъютант т. ыт. те), тăван сăмахсемпе вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс пусăмлама та (портфе'ль, портфельте', жюри', конференцие', делегатсе'м) пултараççĕ. Программăра кăтартнă орфограммăсене тупма, сăмахсене мĕнле çырмаллине, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма, синонимсем, антонимсем е омонимсем тупма, синонимсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма пĕлнине те кăтартрĕç. Çапах та ачасем таврари япаласене е чĕр чунсене сăнласа панă (çырса е сăмах вĕççĕн), пурнăçри пулăмсем е ĕç-пуç çинчен мĕн шутланине ăсласа, шухăша йĕркине, вĕçе-вĕçĕн каласа е çырса панă чухне пĕр-пĕр сăмахпа вĕçĕмсĕр те вырăнсăр усă курассинчен хăтăлма вĕренсе çитейменни курăнчĕ.

Чĕрĕ калаçура тавтологи нумай пулни палăрчĕ. Çырнă чухне те ачасем çакăн йышши йăнăшсенчен хăтăлаймаççĕ.

Нумай чухне ачасем чăвашла сăмахăн вырăсла куçарăвне лайăх пĕлеççĕ, анчах та чăваш сăмахĕн синонимĕсемпе антонимĕсене йывăррăн шыраса тупаççĕ. Тĕпчевре пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем диалект сăмахĕсемпе анлă усă курни те палăрчĕ. Çакă çырура çукпа пĕрех, анчах та тăхтавсенче, ирĕклĕ хутшăнура диалектизмсем, вырăс сăмахĕсемпе пĕрлех, тăтăшах тĕл пулаççĕ. Уйрăмах вырăс сăмахĕсем нумайни шутлаттарать. Вырăс сăмахĕсемпе пуплев калăпĕсем ачасен тăван чĕлхине кĕрсе вырнаçаççĕ, ăна çӳпĕлеççĕ.

Ачасен вĕренӳри çитĕнĕвĕсем, çавăн пекех, вĕсен ӳсĕмне, психика уйрăмлăхĕсене тĕрĕс шута илнинчен те нумай килеççĕ. Психологсем çирĕплетнĕ тăрăх, чĕлхене пуплевре вĕренни ăнăçлăрах та тухăçлăрах. Пуплеве аталантарассине вара вĕренекенсен тĕп ĕçĕ-хĕлĕсемпе тачă çыхăнтарсан аван. Чĕлхе материалĕ, вăл шутра лексики те, ăна çине-çине каланипе мар, асăмлас тĕллев лартмасăрах унпа пуплевре усă курнă май тухăçлăрах асăмланать тесе палăртаççĕ тĕпчевçĕсем. Урăхла каласан, чĕлхене пуплевре вĕренни ăнăçлăрах та тухăçлăрах. Çавăнпа та учителĕн ачасен сăмах пуянлăхне ӳстерес тĕлĕшпе кашни урокра ĕçлеме тивет [3].

Шкул ачин кунсерен çĕнĕ сăмахсем вĕренмелле, ăша хывмалла. Çавăнпа ăста вĕрентекенсем кашни урок пуçламăшĕнче сăмах диктанчĕ çыртарсан аван теççĕ. Сăмах диктанчĕсене чĕлхен тĕрлĕ ыйтăвне (синоним, антоним, сăмахсен пулăвĕ, вĕсене тĕрĕс çырасси) вĕрентнĕ чух иртterme май пур.

Вĕренекенсен сăмах йышне аталантарас тĕлĕшпе опытлă учительсем тĕрлĕ картинăсемпе, çав шутра паллă чăваш тата вырăс художникĕсен картинисен репродукцийĕсемпе те анлă усă кураççĕ.

Çапах та ачасен сăмах йышĕ ытларах тĕрлĕ пуплев ĕçĕсемпе хăнăхтарусем пурнăçланă чух ӳссе пымалла. Меслетçĕсем вăтам классенче усă курма сĕнекен пуплев хăнăхтарăвĕсен йышĕ самай анлă, вĕсем тĕрлĕ. Тухăçлисен шутĕнче çакăн йышшисене палăртма пулать: вулавпа тăнлу хăнăхтарăвĕсем, словарь диктанчĕсем, ятарлă пуплев хăнăхтарăвĕсем, творчествăлла калу тата çыру ĕçĕсем.

Тĕслĕхрен, ăславлă калу тата çыру ĕçĕсен шутĕнче калава анлăлатни пулма пултарать. Кунашкал ĕç икĕ текста танлаштарма май парать, вĕсенчен хăшĕ сăнарлăрах, илемлĕрех, витĕмлĕрех пулнине уçăмлă кăтартать. Çакнашкал ĕçсем шкул ачисене вăл е ку сăмахăн пуплеври вырăнĕпе пĕлтерĕшне ăнланса илме пулăшаççĕ.

Тепĕр тĕслĕх, экскурсире, походра пулни çинчен калав çырни. Паллах, çыхăнуллă калавсене кĕртмелли сăмахсене учитель малтанах хăй хатĕрлет. Ачасем пĕлмен çĕнĕ сăмахсем пулсан унашкаллисене пĕлтерĕшне ăнлантарса доска çине çырса парать. Ачасене курни-илтни, пулни çинчен 2-3 предложенипе кăна мар, анлăрах каласа пама та хăнăхтармалла, диалог тата монолог формисемпе калаçма вĕрентни те ачасен пуплевне аталантарать, сăмах йышне ӳстерме пулăшать. Хăнăхтарусене вăйă формипе те иртterme пулать. Урока вăйă элеменчĕсем кĕртни ачасен вĕренес туртăмне хăпартать, ăнлавсене ас туса юлма май парать.

Синонимсене вĕрентесси çинчен те манмалла мар. Чăваш чĕлхинче синонимлă сăмахсем йышлă. «Синоним» ăнлавпа чи малтан, терминне асăнмасăр, кĕçĕн класс ачисенех паллаштараççĕ. 1. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене çыхăнтар. 2. Пĕр пек пĕлтерĕшлĕ сăмахсене çыхăнтар. 3. Сăмахсене икĕ ушкăна уйăр. 4. Хăш сăмахĕ ытлашши? Мĕншĕн? 5. Хăш сăмахĕ вырăнлăрах? – çакăн йышши хăнăхтарусене пурнăçласа ачасем пуçламăш шкулта туяннă пĕлӳ-ăслайсене çирĕплетнĕ май сăмах йышне пуянлатаççĕ, аталантараççĕ. Каярахпа вăтам классенче ачасем терминсемпе те паллашаççĕ, синонимсемпе анлăрах, тарăнрах ĕçлеме пуçлаççĕ. «Синонимсем» тема ачасен пуплевне аталантарас, вĕсен лексикине пуянлатас ĕçе туса пыма питех те майлă, меллĕ. Çавăнпа та унпа май килнĕ таран тухăçлă та пур енлĕ усă курма тăрăшмалла. Ачасен лексикине синонимсемпе пуянлатса пыни, усă курма вĕрентни вĕсен пуплевне илемлĕ те сăнлăхлă тума май парать. Çавăнпа та опытлă учительсем хăйсен ĕçĕнче синонимсемпе усă курма вĕрентмелли тĕрлĕ хăнăхтару иртtereççĕ: сăмахсене ытти пĕрешкел пĕлтерĕшлисемпе ылмаштарни; панă синонимсемпе сăмах майлашăвĕсем туса çырни; синонимлă сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тупса çырни; пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ушкăнлани (урăхла каласан, сăмахсен синоним ретне çырни); синонимсенчен кирлине суйласа илсе предложенисене (е текста) çырса илни; текстри палăртнă сăмахсем çумне кирлĕ синонимсене лартса çырни т. ыт. те.

Антонимсене вĕрентесси те ачасен словарьне аталантарас ĕçре пĕлтерĕшлĕ. Антонимсене лайăх пĕлни тĕрлĕ япаласен хирĕçле енĕсене уçăмлă кăтартма май парать, çавна пула калас шухăш витĕмлĕ те тарăн, контрастлă пулса тухать. Антонимсене вĕрентнĕ чух пуян опытлă вĕрентекенсем ытларах çакăн йышши хăнăхтарусемпе ĕçсем сĕнеççĕ: панă сăмахсем патне антонимсем тупни; антонимлă сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем туса çырни; предложенире (е текстра) хирĕçле

пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупни (ку хăнăхтарăва çырса та, сăмах вĕççĕн те ирттерме пулать); ваттисен сăмахĕсенче, тупмалли юмахсенче антонимсене тупни; панă сăмах майлашăвĕсене антонимлисемпе ылмаштарса çырни, вĕсемпе предложенисем туни [5].

Кун йышши ĕçсем чылай. Учителĕн класри ачасен пĕлӳ шайне, вĕсен ӳсĕм уйрăмлăхĕсене шута илсе тивĕçлĕ хăнăхтарусене суйласа илме, вĕсене пурнăçлама пĕлмелле.

Ачасен сăмах йышне аталантарас ĕçре сăмах пĕлтерĕшне ăнланни, ăна ăса хывни кăна çителĕксĕр. Словарь ĕçĕн тепĕр енĕ – ачасемпе куллен хутшăннă майăн ытларах сăмах активлă лексикăна куçтăр тесе тимлесси. Ку вăл вĕсемпе пуплевре час-часах усă курсан çеç пулса пырать. Сăвăсем калани, тупмалли юмахсемпе халап-юмах юптарни ачасене ытларах та ытларах сăмаха тĕрлĕ пуплевре калама, ăнăçлăрах сăмах майлашăвĕсене ас туса юлма, кайран усă курма ытларах майсем туса пачĕ.

Çапла вара, ачасен сăмах йышне пуянлатасси, аталантарасси хăй тĕллĕн, хăй еккипе пулса пыракан ĕç мар, ăна ятарласа тимлемелле. Куллен, кунран-кун тăрăшса ĕçлемелле. Ĕçре тĕрлĕ меслетсемпе, мелсемпе усă курмалла. Ĕçе тĕрлĕ енлĕ йĕркелемелле.

**УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА**

1. *Андреев Н.А.* Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. – Шупашкар: Чăваш. кĕнеке изд-ви, 1961. – 160 с.
2. *Горшков А.Е.* Чăваш чĕлхи: лексика, фразеологи, пуплев культури: вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. – 159 с.
3. *Люблинская А.А.* Детская психология. – М.: Просвещение, 1971. – 415 с.
4. *Семенова Г.Н.* Тăван чĕлхене шкулта вĕрентессине çĕнĕлле йĕркелесси // Высшая школа – народному хозяйству Чувашии: Тезисы докладов. – Чебоксары, 1992. – С. 108-109.
5. *Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. – 431 с.

# ЧĂВАШ ШКУЛĔНЧИ ТĂВАН ЧĔЛХЕ УРОКĔСЕНЧЕ АЧАСЕН ĂСЛАВ ПУЛТАРУЛĂХНЕ АТАЛАНТАРАССИ

**МЫШКИНА Валентина Юрьевна**
историпе филологи факультетĕнчи 3 курс студентки
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ» АВ ФПБВУ
Чăваш Республики, Шупашкар хули

*Статьяра ачасен творчествăллă çыру ăслай-хăнăхăвĕсен шайне тишкернĕ, чăваш шкулĕнчи тăван чĕлхе урокĕсенче ку ĕçĕн тухăçлăрах формисемпе епле ĕçлемеллине çырса кăтартнă.*

**Тĕп сăмахсем:** ăслав пултарулăхĕ, вĕрентӳ, тăван чĕлхе, творчествăллă çыру, ăслайсемпе хăнăхусен шайĕ, ĕç формисем.

Чĕлхен этем пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕ пысăк. Чĕлхене пула çеç эпир шухăшлама, шухăша каласа пама, ыттисене пĕлтерме пултаратпăр, урăхла каласан, чĕлхе пире хутшăнма, çыхăну йĕркелеме кирлĕ хатĕр пулса тăрать.

Раççей çĕршывĕнче темиçе тĕрлĕ халăх пурăнать. Вĕсен кашнин хăйĕн чĕлхи пур. Чĕлхе пур халăх пурнăçĕнче те питех те пысăк вырăн йышăнать. Паян, социаллă лару-тăру хăвăрт улшăнса пыракан, халăхсен харкамлăх туйăмĕ вăйлăн аталанакан саманара, тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ татах та ӳсет. Вăл – халăхăн тĕп пуянлăхĕ – унăн аталану палли пулса тăрать [1]. Пирĕн вара тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. Шел пулин те, 21 ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш чĕлхин аталанăвĕ сӳнсе пырать. Çавăнпа шкулта тăван чĕлхене вĕрентесси çав тери явапллă, пĕтерĕшлĕ ĕç, çак ĕç тĕллевĕ самай анлă. Паянхи пурнăç ачана пур енлĕн аталанма ыйтать. Çавăнпа учителĕн чĕлхене вĕрентнĕ май вĕренекенсен творчествăлла шухăшлавне аталантарасси çинчен те шутламалла. Ачан информацие ăнланма, ăша хывма, хăй шухăшне палăртма, пĕтĕмлетӳ тума пĕлмелле, харпăр тĕллĕн ĕçлеме, чăвашла тĕрĕс калаçса-çырса хутшăнма пултармалла. Кунпа пĕрлех унăн ăславлăх пултарулăхне вăратас, аталантарас тĕлĕшпе те ятарласа ĕçлемелле. Ăслав пултарулăхĕ çителĕклĕ аталанайман пулсан, унăн малаш-

нехи пурнӑҫӗнче йывӑрлӑхсем тухаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та эпир суйласа илнӗ калаҫу теми паянхи куншӑн ҫивӗч тени вырӑнлӑ тетпӗр. Вӑл чӑваш шкулӗсенче чӑваш чӗлхи урокӗсенче ачасен ӑслав пултарулӑхне аталантарас ӗҫе мӗнле йӗркелесен ӑнӑҫуллӑрах пулма пултарни ҫинчен пулӗ.

Ӑслав пултарулӑхӗ ӑнлава тӗрлӗ ӑсчах тӗрлӗрен ӑнлантарать. Тӗслӗхрен, вырӑссен психологӗ А.Н. Лук ҫапла калать: 1) ыттисем курман проблемӑсене курма пултарни; 2) пӗр ӑнлава тепӗр ӑнлавпа улӑштарса шухӑш тӗвелеме пултарни; 3) ыйтӑва тӗрӗс татса пама пултарни; 4) япаласемпе пулӑмсене чӑн куҫпа курма пултарни; 5) шухӑшлав ҫаврӑнӑҫуллӑ пулни [5].

М.Р. Львов хӑйӗн справочникӗнче ӑслав пултарулӑхӗ ӑнлава ача ӗҫе харкам тӗллӗн тума пултарнипе ҫыхӑнтарать [6].

Паян ачасене вӗренме хавхалантарма питӗ йывӑр. Чӑваш чӗлхи урокӗсенче хӑш-пӗр ачасем вӗренӳ материалне те ӑша хываймаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл ачасем хӑйсен шухӑшӗсене анлӑн уҫса парайманнинче, тӗп шухӑша шыраса тупайманнинче, хӑйсен шухӑшӗсене туллин пӗтӗмлетсе парайманнинче курӑнать. Ҫак йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырас тесен учителӗн ачан ӑслав пултарулӑхне аталантарас тӗллӗшпе ятарласа, системӑллӑ ӗҫлемелле. Тата ачасен вӗренӳри ҫитӗнӗвӗсем вӗсен ӳсӗмне, психика уйрӑмлӑхӗсене тӗрӗс шута илнинчен те нумай килнине вӗрентӳҫӗсен яланах асра тытмалла.

Психологи науки ҫакна палӑртать: пуплев чӗлхепе усӑ курас ӗҫ-хӗл пулнӑ май этемӗн кулленхи ӗҫӗ-хӗлӗн тӗревӗ пулса тӑрать. Этем калаҫасшӑн ҫеҫ калаҫмасть, ҫырасшӑн ҫеҫ ҫырмасть, вуласшӑн ҫеҫ вуламасть, тӑнласшӑн ҫеҫ тӑнламасть. Ку ӗҫ-хӗле вӑл пурнӑҫри вӑл е ку ӗҫ-хӗлпе ҫыхӑнуллӑн тӑвать. Ҫавна кура чӗлхе вӗрентессине, пуплеве аталантарассине вӗренекенсен тӗп ӗҫӗ-хӗлӗсемпе тачӑ ҫыхӑнтарсан аван [7].

Вӗрентӳ тӗллевне, унӑн тапхӑрӗсене, мӗн тата мӗнлерех вӗрентмеллине палӑртнӑ чухне те, вӗрентӗве йӗркелесе пынӑ чухне вӗрентӳҫӗсен ачасен ӳсӗмне шута илмелле, вӗсене ӑс-тӑн аталанӑвӗн шайӗ, кӑмӑл-туйӑм туртӑмӗ вӗрентӳпе пӗр килтӗр. Вара тин вӗрентӳ тухӑҫлӑ та ӑнӑҫлӑ пулӗ.

Меслетҫӗсем вӗрентӳпе вӗренӳ ачасемшӗн «шӑл ҫемми» пулмаллине, ачасен ӑс-хакӑл шайне, чун хавалне шута илни вӗрентӳ ӗҫӗн тухӑҫлӑхне, ӑнӑҫлӑхне ӳстернине палӑртаҫҫӗ. Вӗрентӳ материалӗ те, вӗрентӳ меслечӗсемпе мелӗсем, вӗрентӳ хатӗрӗсем те ҫак чӑнлӑхпа килӗшсе тӑмалла. Вӗрентӳ, ансаттисенчен пуҫласа, кӑткӑсрах пӗлӳсемпе ӑслайсем, хӑнӑхусем патне илсе пымалла [6].

Вӗренӳ ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ пулса пытӑр тесен ачасен ӳсӗм уйрӑмлӑхӗсемпе пӗрлех тата пултарулӑх аталанӑвӗн шайне пӗлни те пӗлтерӗшлӗ. Ҫакӑ вӑл учителе урокра ачасен ӑслав пултарулӑхне аталантарма мӗнле мелсемпе ӗҫлесен ӑнӑҫлӑрах пулмаллине кӑтартать. Ҫак тӗллевпе эпир пӗчӗк тӗпчев ирттертӗмӗр. Унта Вӑрнар районӗнчи Кӳстӳмӗр шкулӗн 6-мӗш тата 7-мӗш класс ачисем хутшӑнчӗҫ, ӗҫе пурнӑҫлама чӑваш чӗлхи учителӗ – Одинцова Людмила Станиславовна пулӑшрӗ.

Тӗпчев тӗллевӗ – ачасен ӑслав пултарулӑхӗн шайне палӑртасси. Ҫак пултарулӑх шайне тӗрӗслеме тӗрлӗ мелпе усӑ кураҫҫӗ. Эпир улттӑмӗш класра вӗренекенсене «Пулӑшрӗҫ» ятлӑ сочинени евӗр изложени ҫыртартӑмӑр, ҫиччӗмӗш классене ятарлӑ темӑпа сочинени ҫырма сӗнтӗмӗр.

Ачасен ӗҫӗсене икӗ паллӑпа хаклярӑмӑр – содержанипе пуплев пахалӑхӗшӗн тата тӗрӗс ҫырнӑшӑн. Икӗ палли те чӑваш чӗлхине пӗлнин шайне кӑтартать. Содержани пахалӑхне пӑхсан, ачасенчен 32% ӗҫе ҫӳллӗ шайра пурнӑҫланӑ. Тӗрӗс ҫырассине пӑхсан – 32% ҫӳллӗ шайра, 68% – вӑтам шайра. Ҫапла вара пӗтӗмӗшле 33,5% – «4» паллӑлӑх, 66,5% – «3» паллӑлӑх ҫырнӑ. Ачасен ӗҫӗсене тишкерсе тухсан эпир вӗсем ытларах орфографи, грамматика тата пуплев йӑнӑшӗсем тунине асӑрхарӑмӑр. Орфографи йӑнӑшӗсенчен сӑмах варринчи вӑрӑм хупӑ сасӑсене 2 сас паллипе палӑртманни (иртерчӗ – ирттерчӗ, пӗремӗш – пӗрремӗш, вӗҫӗн – вӗҫҫӗн), кирлӗ ҫӗрте ҫемҫелӗх палли ҫырманни (пул – пуль), е ӑна кирлӗ мар ҫӗрте лартни (кильмелле – килмелле), сас палли сиктерсе хӑварни (ҫака – ҫакна), пӗр сас палли вырӑнне теприне ҫырни (юлтах – юлташ, пӗчерчӗҫ – пӗтерчӗҫ) палӑрчӗҫ. Грамматика йӑнӑшӗсем те чылай пулчӗҫ. Вӗсенчен нумайӑшӗ вырӑнти калаҫу уйрӑмлӑхӗсемпе ҫыхӑннӑ йӑнӑшсем пулчӗҫ (карӗ – кайрӗ, ытать – ыйтать, кум пек – кун пек, хӑварашӑн – хӑварасшӑн). Унсӑр пуҫне ачасем татӑксемпе хыҫ сӑмахсене ҫырнӑ чухне нумай йӑнӑш тунӑ (никамта – никам та, кунпек – кун пек, нихӑҫанта – нихӑҫан та, темӗнҫинчен – темӗн ҫинчен, килчӗте – килчӗ те, унчух – ун чух)

Ӗҫсене тӗрӗсленӗ май ҫавӑн пекех предложенисене шухӑш тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗринпе ҫыхӑнманни, пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен сӑмаха тӗрӗс суйласа илменни (вӑл пӗчӗк класпа калаҫу ирттерчӗ, туслӑ юлташ), кирлӗ мар ҫӗртех пӗр сӑмаха темиҫе хут ҫырни, стиль тӗлӗшӗнчен килӗшӳсӗр сӑмахсене кӗртсе лартни чылай палӑрчӗ. Йӑнӑшсенчен хӑшӗсене ачасем тимсӗрлӗхӗпе тата вӗсем вырӑсла шухӑшласа чӑвашла куҫарса ҫырнипе те сӑлтавлама пулать.

Ăслав пултарулăхне илес пулсан, вĕренекенсенчен нумайăшĕ учитель панă темăна тĕрĕс ăнланнă, ăна туллин уçса пама тăрăшнă. Ачасем сочинени евĕр изложенин тытăмне тĕрĕс сыхласа хăварнă, кашни пайĕ пĕр-пĕринпе вăчăра пек çыхăнса пыраççĕ. Сочинени çырнин результачĕсене илес пулсан ачасенчен чылайăшĕ тĕп шухăша туллин уçса пама тăрăшнине палăртмалла. Анчах та вĕренекенсем хăйсем палăртакан шухăша вĕçне çити çырса парайманни те, хăш-пĕр предложенисенче шухăша вĕçлеменни те курăнать. Ачасен сăмах йышĕ çителĕклĕ пулсан та, вĕсен ĕçĕсем типĕ, чухăн, вĕренекенсем хăйсен ĕçĕсенче илемлĕх мелĕсемпе питĕ сайра усă кураççĕ. Сюжета кăсăклă аталантарма пултарайманни те палăрчĕ – пурин ĕçĕ те пĕр евĕрлĕ йĕркеленнĕ.

Çапла вара, тĕрĕслев чăваш шкулĕсенчи 6-мĕш тата 7-мĕш класс ачисен ăслав пултарулăхĕн шайĕ пĕтĕмĕшле вăтам пулнине палăртрĕ. Çакă вара вĕрентекене ачасене ăслав пултарулăхне аталантарас тĕлĕшпе ятарласа, тĕллевлĕ ĕçлеме хистет.

Чăваш шкулĕсенче 6-мĕш тата 7-мĕш класс ачисен ăслав пултарулăхне аталантарма программăра ятарласа вăхăт уйăрман мар. Анчах  çак сехетсем çителĕксĕр пуль тетпĕр.

Психологсем те вăтам класри ачасен ăслав пултарулăхĕн аталанăвĕнче çакнашкал йывăрлăхсем палăртаççĕ. Ку çулхисем тантăшĕсем умĕнче хăйсен шухăшĕсене уçса пама вăтанса, шикленсе тăраççĕ, çавăнпа та ачасем кашни хăйĕн шухăшлавне тĕплĕн, вĕçне çити уçса параймаççĕ. Çавăнпа та учителĕн вĕренекенсен ăславлăхне аталантарма урокра тĕрлĕ вĕрентӳ меслечĕсемпе усă курмалла. Меслетçĕсем вăтам класри ачасен ăслав пултарулăхне аталантарас ĕçре усă курмалли чылай мелпе меслет палăртаççĕ. Вĕсенчен тухăçлăраххисем шутĕнче çаксене асăнмалла.

Ăсласа каласа пани. 5-7-мĕш классенче ачасене чăн пулманни çинчен калав çыртарма пулать. Çакна 2 мелпе тума май пур. Тĕслĕхрен, учитель темăна тата калав пуçламăшне хăй парать. Калăпăр, ячĕ «Вăрманти пушар». Ăна çапла пуçлатпăр.

Урамра çуллахи ăшă çанталăк тăнă. Вăрман çумĕпе Мишшăпа ашшĕ уçăлса çӳренĕ, сасартăк…

Е тата учитель илемлĕ литература хайлавне илет те калавăн пуçламăшне вуласа парать, малалла ачасен хăйсен шутласа ăсласа çырмалла.

Тепĕр мел вăл – вăл учитель сĕннĕ сюжет йĕрĕ тăрăх ăслани. Кун пек чухне вĕрентекен ачасене ĕç-хĕл мĕнле йĕркепе пулса пынине калать те ун тăрăх хăйсене хайлама сĕнет.

Ачасен ăсла пултарулăхне аталантармалли мелсенчен тепри вăл – пĕр-пĕр япалана сăнласа пани. Темле япалана та сăнласа пама пулать: картинăна, чĕр-чунсене, çынсене, çут çанталăка тата ыт. те. Тĕслĕхрен, ачасене çут çанталăкăн пĕр-пĕр пулăмне е объектне сăнлаттарма пулать. Малтан учитель вĕренекенсемпе пĕрле мĕн-мĕн сăнласа памаллине сӳтсе явать, унтан хăйсем тĕллĕн сăнлава йĕркелеме сĕнет. Çак ĕçре текст калăпăшĕ ытла пĕлтерĕшлĕ мар. Ачасем çут çанталăка туллинрех сăнласа пама пултарни паха. Сочиненисене тĕрĕсленĕ чухне учитель çакăн çине вăйлă пусăм тăвать. Картина тăрăх çырнă сочинени те ачасен ăславлăх пултарулăхне аталантарать.

Заметкăсем, çырусем, дневниксем те ачасен ăславлăхне çӳллĕ шая хăпартаççĕ. Кашни спектакль, концерт, музей, кино хыççăн пĕчĕк заметкăсем çыртарса шкулти хаçатра кăларттарни, тĕрлĕ уявсенче пĕр-пĕрне кĕске çыру çырса саламлаттарни ачасен ăславлăхĕшĕн усăллă пулĕччĕ. Çавăнпа та вĕрентекенĕн ачасене çак пĕчĕк çыру ĕçĕсене пурнăçлаттарса тăма тăрăшмалла.

